А 23
16951.ч4в

Леонид Агаков

# Сиенлĕ чап



Национальная библиотека ЧР
4-016951
М 16951. чув.

ЛИСТОК СРОКА ВОЗВРАТА

К 9(чув)
А 23




ЧĂВАШ АССР КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1969





Леонид Агаков

# Сиенлĕ чап

Пĕчĕк камитсемпе
мыскарасем

т 16951 чув

Чувашская республиканская
библиотека
им. М. Горького

ПРОВЕРЕНО
20 10 03 НОЯ 2017

БИБЛИОТЕКА
Академии наук
СССР

Пĕр пайлă камит

# Сиенлĕ чап



## КАМИТ КĂТАРТАКАНСЕМ:

Ш ĕ в ĕ р к к е, тин çеç çуралса тухакан талант.

М а ю к, ытармалла мар хĕр-почтальон.

М ă н  Я к у р, эрех лавккинче сутă тăвакан каччă, хĕрсен турри.

К у к о л е в, раймаг пуçлăхĕ. Тăршшĕ те, урлăшĕ те пĕрешкел. Сăмси вырăнне — слива.

К а л е р и (Кавалери), икĕ ачаллă хĕр, райисполком конюхĕ.

А м а е в, ветфельдшер, ăратлă вăкăра та пĕччен çĕнтерме пултараканскер. Хĕрĕнкĕ.

М и л и ц и  с е р ж а н ч ĕ.

Ĕç хальхи вăхăтра пулса иртет.

Пĕчĕк кăна пӳлĕм. Тирпейсĕр. Сĕтел, ун çинче ĕнерхи апат юлашкисем. Икĕ хыççăр пукан, хăлтăр-халтăр кравать. Кĕнекесем хумалли этажерка. Урай варринче шăпăр выртать. Ирхине. Радио физкультура урокĕ ирттерет. Йăрăмлă пижама тăхăннă ырхан та тăсланкă **Шĕвĕркке** тăрăшсах физзарядка тăвать, анчах хăйĕн пулсах çитеймест. Хăйне хăй командăсем парать: раз-два-три, раз-два-три... Юлашкинчен вăл пĕр вырăнта сикме тытăнать. Çав вăхăтра уçă чӳречере **Маюк** курăнать. Вăл Шĕвĕркке çине пăхса кулса тăрать. Шĕвĕркки çаплах тăрăшать. Радио: «Теперь перейдите к водным процедурам»,— тесен тин вăрт! çаврăнать те Маюка курах каять.

**Шĕвĕркке** *(аллисене çĕклесе).* Маюк! Чунăм!.. Ирхи хĕвел пек ăшă салам сана! Мĕн те пулин пур-и паян ман валли?

**Маюк.** Пу-ур... Анчах ташламасăр памастăп.

**Шĕвĕркке.** Мĕн-ши вара ун пекех? Çав териех хаклă япала илсе килтĕн-ши?

**Маюк.** Ытла йӳнех пулма кирлĕ мар...

**Шĕвĕркке.** Пар эппин часрах!

**Маюк.** Каларăм вĕт сана — ташла!

**Шĕвĕркке** *(тĕлĕннĕ пек).* Чим-ха, чунăмçăм Маюк, ун пек юрамасть вĕт. Малтан мĕншĕн ташламаллине пĕлес пулать. Кам пĕлет, тен, эсĕ ман валли

суда каймалли повестка илсе килнĕ? Тен, хамăн кукамай çĕр çула çитмесĕрех сарăмсăр вилсе выртни çинчен пĕлтерекен çыру паратăн? Саккун тăрăх манăн уншăн вsyртса йăваланса макăрас пулать, анчах эсĕ мана качака путекки пек сиккелесе ташлаттарасшăн. Тĕрĕс калатăп-и эпĕ, çук-и?

Маюк *(кулать).* Ан пăшăрхан, Шĕвĕркке тусăм, ун пек хăрушă япаласем çук ман сумкăра. Эпĕ çынсене савăнтармаллисем кăна илсе çӳретĕп. Яланах çапла.

Шĕвĕркке. Ну, мĕн, мĕн илсе килтĕн эппин? Ан асаплантар ĕнтĕ, çакăн пек эреветлĕ-теветлĕ сăнпуçпа чул чĕреллĕ ан пул! Тархаслатăп! *(Юри артистланса хăвăрт кăна чĕркуçленет те аллисене чĕри патне тытать.)* О, ырăран та ырă пике, манăн ирхи çут çăлтăр, чĕрене çунтаракан вĕри хĕвел! Хĕрхенсемччĕ...

Маюк *(сумкинчен «Ялав» журнал кăларса кăтартать).* Ак çакăнта мĕн пуррине пĕлэтĕн-и эс?

Шĕвĕркке *(тăпăл-тапăл сиксе тăрать).* Мĕн пур? Унта ман калав тухман пулĕ те?! Турăçăм, пар-ха часрах! Пар, теççĕ! *(Маюк аллинчен журнала туртса илме тăрать, анчах лешĕ каялла сиксе илет те, Шĕвĕркке чут çеç чӳречерен тухса ӳкмест.)*

Маюк. Ташла, тенĕ сана! Унсăр нимле журнал та лекмест!

Шĕвĕркке хăех темле кĕвĕ шăхăркаласа пĕли-пĕлми сиккелет, ташши тухмасть. Маюк ахăлтатса кулать.

Шĕвĕркке *(ташлама чарăнса).* Ну, халь тавай ĕнтĕ...

Маюк. Çук-ха, сахал ташларăн. Татах сик пăртак. Сан ташшуна курма питĕ кăмăллă.

Шĕвĕркке. У-у, шуйттан хĕрĕ! *(Татах ташлать, хашкакан пулать, пукан çине ларать.)* Урăх пултарай-

мастăп. Хевте пĕтрĕ. Чĕре качака хӳри пек тапалтатма тытăнчĕ. Инфаркт пуласран хăратăп. Тур çырлахтăрах! Сана качча иличченех вилсе выртăп тата.

Маюк. Тьфу, усал чĕлхӳ çине ӳпне çăпан тухтăр! Сан пек телефон юпине качча тухма ухмах курăкĕ çимен-ха!

Шĕвĕркке *(сиксе тăрать).* Пар тата журналне! Хăçан килнĕ вăл? Паян кăна-и, тин çеç-и?

Маюк. Тĕрĕссипе калас-тăк, журналĕ вăл виçĕмкунах килнĕччĕ-ха...

Шĕвĕркке *(кăшкăрсах ярать).* Мĕ-ĕн? Виçĕмкунах?! Ма хальччен илсе килмерĕн эппин? Мĕншĕн пытарса усрарăн? Пĕлетĕн-и, куншăн мĕн тума пултаратăп эп сана? *(Аллипе хăмсарать.)*

Маюк. Асту, майпентерех эсĕ, Шĕвĕркке-пĕвĕркке! Эпĕ хирĕç те тыттарса яма пултаратăп... Луччă мĕн каланине итле эсĕ. Çак журналта сан калаву пуррине куртăм та, малтан ăна манăн хамăн вуласа тухас килчĕ. Ху мана ялан «ах, савни, чун савни» тетĕн-çке-ха. Хăвна савакан çын çырнине епле вуламастăн пулать? Ну... пĕрре пуçларăм та вулама, вĕçне çитичченех аларан пăрахаймарăм...

Шĕвĕркке *(хăпартланса).* Килĕшрĕ эппин? Кăмăла кайрĕ? Тӳррипе кала, ним пытармасăр! Маншăн сан сăмахху питĕ вашнă...

Маюк *(кăшт шухăшласа тăнă хыççăн).* Тĕрĕссипех калас-тăк, эсĕ ун пек çырма пултаратăн тесе шутламанччĕ. Ху тăмсайрах пулсан та, калавне чиперех çырнă вара...

Шĕвĕркке *(мăнаçланма пуçласа).* Çапла çав!.. А эсĕ манпа çӳресшĕн те пулмарăн. Отне лавккари Мăн Якурпа йăкăртатса çӳретĕн, кашни каç Якурпа. Ĕнер те кинора унпа пĕрле пултăн-ха. Куртăм эпĕ: çăвар туллин канфет чăмлаттăн, нихçан курман пек...

Маюк. Ара, вăйпах çитерет те-ха, мĕн тăвас манăн?

Шĕвĕркке. Мĕн тăвас, мĕн тăвас... Асту, вăл Якур сана канфет çитере-çитере растрата тăвать те акă, шăнкăрт! каçоннăй çурта, решетке хыçне кайса ларать! Шалккă пулать ăна! Малашне эпĕ çитерме тытăнатăп сана, юрать-и? Манран çиетĕн-и?

Маюк. Ара, çитерсен — ма çиес мар. Паракантан ил, çапакантан тар, тенĕ мар-и? Тата канфет çини вăл сăмакун ĕçниех мар...

Шĕвĕркке. Ну, пар тата журналне! Куратăн вĕт, пăлханнипе йăлт чĕтреме ертĕм эпĕ. Сивчир тытнă пек. Капла манăн лихорадка пулса кайма пултарать!

Маюк. Чим-ха, ан васка, каласа пĕтерем. Ман хыççăн сан калавна хамăн шăллăм вуласа тухрĕ, унтан йăмăк вуларĕ, унтан кӳршĕри Ваçухха илсе кайрĕ, Ваçухха Митраппана парса янă... Чутах çухалатчĕ журнал, паян йĕрпе кайса аран тупрăм. Лутăркаса пĕтернĕ, эсрелсем...

Шĕвĕркке. Ак тата япала, карчăк валли çăпала! Апла ман калава çур ял вуланă пулать, анчах эп хам ăна куçпа та курман-ха!

Маюк. Ара, япăх-им вăл? Уншăн санăн мана тав тăвас пулать кăна — çынсене вулаттарнă, хăвна чапа кăларнă! Писатель тавраш̆ĕсем шутсăр чапшăн çунаççĕ, тет, вĕсем. Çапла-и?

Шĕвĕркке. А мĕн? Чапа тухни начар-им вăл?

Маюк. Пĕлместĕп çав, хам пĕрре те чапа тухса курман та...

Шĕвĕркке. Чап вăл... мĕнле калас... чап вăл — чап! Эсĕ чапа тухсассăн, сана çынсем çав тери хисеплекен пулаççĕ, теприсем сан çине турă çине пăхнă пек пăхаççĕ, сана алă çинче çĕклесе çӳреме хатĕр, сан

умăнта тимĕр пек хытă кăмăллă хĕрсем те çурхи юр пек ирĕлсе каяççĕ...

Маюк. Ун пекех ирĕлсен, вĕсем хăйсем те юхса каяççĕ пуль? Ним те юлмасть вара.

Шĕвĕркке. Çук, юхтарса яма юрамасть. Вĕсене кирлĕ вăхăтра хăвăн аллуна çавăрса илме пĕлес пулать... Ак çакăн пек! *(Маюка мăйĕнчен ыталаса илме тăрать, лешĕ ăна хыттăн тĕртсе ярать.)*

Маюк. Асту, чипертерех эсĕ! Атту-тăк эп сана халха чикки пама та пултаратăп, эс чапа тухни çине пăхса тăмăп! Ме, тыт хăвăн журнална! Манăн ытти подписчиксем патне васкамалла...

Шĕвĕркке. Тавай çав! Паçăрах ыйтатăп-иç!

Маюк Шĕвĕрккене журнал тыттарать, Шĕвĕркке ăна çиелтен кăшт çеç пăхса илет те страницисене хăвăрт-хăвăрт уçса каять. Маюк ун çинчен куç илмесĕр пăхса тăрать, сассăр, кăмăллăн кулать. Акă Шĕвĕркке хăй мĕн шыранине тупрĕ пулмалла та журнала ик аллипе пĕр харăс кăкри çумне пăчăртаса мăччаналла пăхрĕ, мрамортан тунă бюст евĕр пулса тăчĕ...

Шĕвĕркке. О-ох!.. Тухнă! Пичетленé! *(Кĕлтунă пек пĕр аллине çӳлелле çĕклет.)* Ман калава çапса кăларнă!.. Вуник калав пăрахăçларĕç, вунвиççĕмĕшĕнче çапах та пичетлерĕç пулать. Çĕнтертĕм эппин!.. *(Каллех журнал страницисене хăвăрт-хăвăрт уçать.)* Пилĕк страница! Пăх-ха, кур-ха эсĕ, Маюкăм, ман хушамата мĕн пысăкăш саспаллисемпе пичетленĕ!.. *(Журнала Маюк сăмси патнех илсе пырать.)* Вула! Куратăн-и? Шĕвĕркке Иванĕ, тенĕ вĕт! Эх, Маюкăм-Маюк, ма пурнас мар, юрлас мар?! *(Урисемпе тăпăртатса илет те Маюка ыталаса чуптăвать. Çав самантрах Маюк ăна чант! çутăлтарса ярать. Шĕвĕркке Маюк çакнă вырăна аллипе тытать те тепĕр питçăмартине çавăрса парать.)* Ах, питĕ лайăх çыпăçрĕ! Чупту-

нă пекех туйăнса кайрĕ!.. Ме, тепре çутăлтар. Ним те шалккă мар çакăн пек телейлĕ кун! Ме, ме, тетĕп, çутăлтар тепре!..

Маюк *(кулать).* Ну, тăманах çав эсĕ! *(Çапма хатĕрленнĕ пек пулса аллине çĕклет, анчах çапас вырăнне Шĕвĕрккене ыталаса питĕнчен чуптăвать, унтан вăшт кăна куçран çухалать.)* Каçхине клуба пыр, кĕçĕр иксĕмĕр ташлăпăр! Канфет çимесĕрех!

Шĕвĕркке пĕр хушă ăнран тухса кайнă пек пулса тăрать. Маюк чуптуса хăварнă вырăна тытса пăхать. Хай тĕллĕн кулать. Малтан хуллен, унтан хытăрах, хытăрах. Юлашкинчен ахăрсах ярса, такмакласа шутсăр хĕрӳллĕн ташлама тытăнать:

Пăнтăр-пăнтăр балалайка,
Сĕрме купăс, янăра!
Шĕвĕркке Ванькки, тавайккă,
Тăхăн çĕнĕ çăпата!
Эй-ну, май-ну,
Маюка тытса чупту!..

Мăн Якур *(чӳрече витĕр).* Салам, писатель, ырă кун пултăр сана, хамăр районти Чехов-Тургенев тата Хумма Çеменĕ!

Шĕвĕркке *(хăрах урине çĕкленипех чарăнса тăрса).* Салам, Якур... хĕрӳллĕ салам!

Мăн Якур. Вуларăм, елки-моталки! Вуларăм та питĕ хĕпĕртерĕм, тавтапуçах сана!

Шĕвĕркке *(ăнланаймасăр).* Мĕн вуларăн?

Мăн Якур. Калавна вуларăм ара. Чим-ха, кĕрем сан патна... *(Чупса кайса алăкран кĕрет, çур метр сарлакăш галифе кĕсйинчен журнал туртса кăларать те сĕтел çине шап! çапать, унтан пукан çине ларса пĕр урине тепĕр ури çине хурать, йывăррăн сывласа ярать.)* Маттур эсĕ, Ванькка, чăнах та пултара-

тăн, елки-моталки! Тем пысăкăш спаççипă сана, ĕмĕрне те манмăп куншăн!

Ш ĕ в ĕ р к к е *(ăнланмасăр).* Мĕншĕн, Якур тусăм?

М ă н  Я к у р *(ăна итлемесĕр).* Пĕлетĕп, пит лайăх пĕлетĕп, нумайăшĕ юратмаççĕ мана, темтепĕр каласа тиркеççĕ, тепĕр чух шалăп кĕнеки çине те çыраççĕ; эрех сутнă чух ӳсĕртерех çынсене улталатăп иккен эпĕ, каялла укçа тĕрĕс тавăрса памастăп, тепĕр чух руп-тватцăть тăракан кĕленче вырăнне руп-тве тăраканнине тыттарса яратăп имĕш, пичкепе илсе килнĕ эрехе шывпа хутăштарса сутатăп иккен... *(Сиксе тăрать.)* Анчах эсĕ ман çинчен пачах урăхла çырнă! Кӳр-ха аллуна, тăванăм!

М ă н  Я к у р Шĕвĕркке аллине тытса çатăр-р чăмăртать те, Шĕвĕркке йынăшсах ярать...

Ш ĕ в ĕ р к к е. Пӳрнесĕр хăваратăн, шуйттан!

М ă н  Я к у р *(ăна итлемесĕр).* Пин хут спаççипă сана, Ванькка! Ахаль тумастăпах сана куншăн, елки-моталки, эпĕ хама ыр тунине манакан çын мар, çавна пĕлсех тăр! *(Каллĕ-маллĕ уткаласа илет, аллисене сăтăркалать.)* Эх, мать честная! Çĕр çинче ырă çынсем пурри аванах çав! *(Тăрук Шĕвĕрккене тытса çамкинчен чуптăвать.)* Тата тепĕр хут тавтапуç сана!..

Ш ĕ в ĕ р к к е *(сĕтел умне ларать).* Чим-ха, Якур, çапах та ăнлансах çитейместĕп-ха эп сана... Мĕншĕн тав тăватăн эс мана кун пекех? Тен, каласа парăн, э?

М ă н  Я к у р *(тĕлĕнсе).* Епле мĕншĕн пулать? Ак тата... *(Куçне хĕссе, пуçне пăркаласа илет те каллĕ-маллĕ уткаласа илет.)* Юриех пĕлмĕш пулса ан лар-ха эсĕ, тусăм Ванькка. Чухламастăн пулать вара? Ну, чее те çав...

Ш ĕ в ĕ р к к е *(аллине чĕри патне тытса),* Тупата

туршăн, нимĕн те пĕлместĕп, таса чĕререн калатăп сана...

М ă н Я к у р *(каçăрăлса).* Ман çинчен çав тери ырласа çырнăшăн тав тăватăп сана!

Ш ĕ в ĕ р к к е. Ăçта? Хăçан çырнă эп сан çинчен?!

М ă н Я к у р. Ак тата, елки-моталки! Ăçта, тесе ларать. Ара, журналта çырнă-иç, ак çак номерте! *(Кулать.)* Эп халлĕхе ним ăнланман е йӳтеме пуçланă çын мар вĕт. Суккăр та мар... Хăвăн калавунти ферма ĕçне çав тери çĕклесе яракан, унта тĕрлĕ механизаци тăвакан Якур — кам вăл? Эпĕ вĕт, ман çинчен çырнă ăна! Ытла точнах мар, çапах та — эпех вăл. Ман пекех тĕреклĕ, хулпуççийĕсем аршăн сарлакăш *(каçăрăлса илет),* куç харшисем — ăмăрткайăк çунаттисем евĕрлĕ, çӳçне каялла, ĕнсе çинелле тураса хурать. Çапла вĕт? Йăлт ман пек! Копи!

Ш ĕ в ĕ р к к е *(ассăн сывласа ярать).* Эп хамăн калава çырнă чух сан çинчен аса та илмен.

М ă н Я к у р *(тĕлĕнсех каять).* Епле аса илмен пулать? Ăçтан-ха, эппин, сан калавунти Якур каснăлартнă ман пек пулса тухнă? Ячĕ те манăн, пĕвĕ те, пурте... Тата пĕр çĕрте, бухгалтерпа ятлаçнă чух, «елки-палки», тет, ку вăл «елки-моталки» тенипе пĕрех-иç?

Ш ĕ в ĕ р к к е *(кулать).* Тата сан пекех чăвашла калаçать, çапла-и?

М ă н Я к у р. Çапла, вăл та пур. Анчах та эсĕ ан кул-ха, тунма ан тăрăш! Эп сана халех тытатăп акă — ниçталла та пăрăнаймастăн вара, йышăнмаллах пулать эпĕ тĕрĕс каланине, курăн!

Ш ĕ в ĕ р к к е. Ненай... Мĕнпе тытăн-ши?

М ă н Я к у р *(журнал страницисене хăвăрт уçса каять).* Чиччас, чиччас, ан васка... Акă, тупрăм! Во! *(Журнала Шĕвĕркке сăмси патнех илсе пырать.)* Ça-

кă мĕн вăл, елки-моталки? *(Вулать.)* «Утнă чух Якур урисене урлăрах ярса пусать...» Эпĕ те çавăн пек утатăп вĕт! Пĕчĕк чухнех ялти ачасем манран «урлă ура, чалăш пуç!» тесе кулатчĕç. Тата... ха-ха-ха! Ну, маттур та çав эсĕ! Манăн янах айĕнчи шĕпĕн çинчен те манман вĕт! *(Вулать.)* «Якурăн сулахай янахĕ айĕнче темĕн пысăкăш шĕпĕн палăрса тăрать...» Тĕлĕнсех кайрăм çакна вуласассăн. Аçтан аса илме пултарнăха эс вăл шĕпĕне?!

Ш ĕ в ĕ р к к е. Шĕпĕне? Санăн унта нимĕнле шĕпĕн те çук-иç, янахху мăлированнăй турилкке пекех яп-яка та çап-çутă!

М ă н Я к у р. Халь çук, анчах та пулнă! Эсĕ кунта иртнĕ вăхăтри çинчен çыратăн вĕт-ха? Астăватăн-и, виçĕмçул ман янах айне ак çакăн пысăкăш ӳпне çăпан тухрĕ те, кайран çав тĕлте пĕр муклашка пулса юлчĕ... Астăватăнах ĕнтĕ! Çав муклашка халь те пур, пӳрнепе кăшт хыпашласанах тупăнать. *(Шĕвĕркке патнерех пырса.)* Акă, ху та тытса пăхма пултаратăн... Халь кала ĕнтĕ — çăпан йĕрĕпе шĕпĕн хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур? Паллах, нимĕнле уйрăмлăх та çуккă! Ну, мĕн калăн ĕнтĕ мана хирĕç? Тытрăм вĕт сана, ха-ха-ха! Чăн та писателех çав эсĕ, чисти Толстоевский! Унтан та чаплăрах — Стихван Малсай! Вăт кам эсĕ! Икĕ çул астуса пурăннă ман шĕпĕн çинчен! Тата тепĕр хут тав тăвататăп сана, елки-моталки, ĕмĕрлĕх чапа кăлартăн вĕт. Варарахпа, ĕç хыççăн, пĕр кĕленче хĕстерсе килетĕп-ха, манăн пилĕк çăлтăрлă коньяк пур — çĕнĕ çултах пытарса хăварсаттăм... Ярăпăр пĕрре! Эх!

Ш ĕ в ĕ р к к е *(хăранă пекрех).* Йăнăшатăн эсĕ, Якур. Пĕртте сан пирки мар вăл калав... Сăмахран каласан, эсĕ колхоз ферминче нихçан та ĕçлемен вĕт, ĕнесем патне те пырса курман!

**М ă н Я к у р** *(ал сулса).* Э-э, вăл ниме те пĕлтермест! Ялта пуранна чух фермăра сахал мар пулна эп, унти хĕрсем патне те чылай çӳренĕ, ăшă сĕтне те пăру пекех ĕçнĕ... Ну, халлĕхе сывă пулса юл-ха эппин... Каçхине кĕретĕп, закуски те хамăнах пулать. Писательпе ĕçсе курам хуть. Эх, Чехов-Тургенев, елки-моталки! *(Шĕвĕрккене çурăмĕнчен лăпкаса илет те «Наш паровоз летит вперед» юрласа тухса каять.)*

**Ш ĕ в ĕ р к к е** *(пĕчченех, шухăша кайса).* Ак тата кĕтмен япала... Чапа тухма пуçласан, кун пек пулать-иç? Лайăх-ши ку, япăх-ши? Тĕлĕнмелле... Маюк мана чуптуса савăнтарчĕ, клуба пыма чĕнсе хăварчĕ, ку ăçтиçук Якур ман калаври чи ырă героя йышăнса илнĕ. Эпĕ вăл, ман çинчен çырнă, тет. Килĕшнĕ эппин вăл ăна, унăн чăнах та ман герой пек пуласси килсе кайнă. Анчах... кам та пулин ку калаври пĕр-пĕр киревсĕр çынна хăй пек тесе шутлама тытăнчĕ-тĕк? Пулма пултарать вĕт ун пекки те? Вара мĕн? Ку Мăн Якурĕ, савăнса ӳкнипе, коньяк ĕçтеретĕп, терĕ-ха, анчах лешсем мĕн калĕç? Вĕсенчен ыррине кĕтме çук вĕт! Таккойски чап кăтартма пултараççĕ вĕсем, аттеанне ятне те манса кайăн!

Сасартăк алăкран К у к о л е в кĕрсе тăрать. Сăнĕ-пичĕ шутсăр хаяр. Кашкăр пек пăхать...

**Ш ĕ в ĕ р к к е** *(тăрса).* Килех, Куколев юлташ. Ирт малалла, лар. Сывлăхсем мĕнле, суту-илӳ еплерех пырать?

**К у к о л е в** *(пĕр сăмахсăрах ларать, хашкать, Шĕвĕркке çине пăхмасăрах пирус тивертсе ярать, пăравус труби пек мăкăрлантарать, темшĕн сăмси вĕçне хыçкаласа илет).* Кăххăм!

**Ш ĕ в ĕ р к к е** *(аяккалла).* Мĕн шуйттанĕ тума килчĕ-ха ку? Эп унпа ĕмĕрне те çывăх пулман-çке? Тем

тесен те, ырра мар ку, туршăн-хĕвелшĕн, ырра мар! (*Куколева*) Сăмах пурччĕ-и сан, Симон Христофорччă? (*Куколев чĕнмест.*) Пĕркун пирĕн ЗАГСра ят хунă йĕкĕрешсем мĕнле пурăнаççĕ? Пит хитре ачасем сирĕн, Серафима Мироновнăпа иксĕрĕн, ытармалла мар!..

Куколев (*пирусне паш! паш! тутарать те урайне пăрахса таптать, пĕççине шарт! çапать*). Так, значит... Çыратăн, да? Хăвăрăн кооператорсене, хăвăра çăкăр-тăвар çитерекенсене лапăртататăн? Так, так... Эп ĕçетĕп, значит, пур лайăх таварсене те халăхран пытарса усратăп, вĕсене хамăн çывăх çынсене, тăвансене хыçалти алăкран парса яратăп... Çапла-и? (*Тăрук сиксе тăрса кăшкăрса ярать.*) Анчах хăçан куртăн эс ăна?! Тытрăн-и мана? Тытса акт çыртăн-и? Свидетельсем пур-и санăн? (*Урипе тăрст! тапать.*) Кала халех!

Шĕвĕркке (*хăрама пуçласа*). Эс кирлĕ мара ан калаç-ха, Куколев юлташ...

Куколев (*кăшкăрать*). Мĕнле кирлĕ мара?! Эс суйса, элеклесе çыртăн, çынна пуçран пуçласа ура тупанне çитичченех вараласа хутăн пулать те, халь тин çеç çуралнă ача пек тап-таса пулса юлас тетĕн-и? Çапла-и?

Шĕвĕркке. Чим-ха, тăхта-ха...

Куколев. Ним тăхтамалли те çук! Опозорил мана! Чăн та, питĕ чее çырнă эсĕ, ним палăрми туса пыма тăрăшнă, анчах эпир те чухлатпăр çав, пире тăруках улталаймăн, тавариш! Вуласанах тавçăрса илтĕм эсĕ кама шак хунине, кама чĕпĕте-чĕпĕте илнине. Да, да, çапла!

Шĕвĕркке. Сана вара... Эп хамăн калавра сан çинчен çырнă пек туйăнчĕ-и?

Куколев (*тата ытларах вĕриленсе*). Ман çин-



Библиотека Академии Наук СССР
Чувашская республиканская библиотека им. М. Горького
П 1697 чув

чен пулмасӑр, эсремет ҫинчен ҫырнӑ-им тата?! Йӑлт ман пек туса пынӑ, юри мӑшкӑллама тӑрӑшнӑ! *(Каллӗ-маллӗ чупкаласа илет.)* Йӑлт паллӑ! Ман хушамат — Куколев, кукӑль сӑмахран пулнӑ вӑл,— эсӗ хӑвӑн кооператорна Пирожков хушаматлӑ тунӑ. Хам ятпа атте ятне те пӗр манерлех ҫавӑрса хунӑ: эпӗ Ярмулай Иванч, санӑн Иван Ярмулайч... Манӑн виҫ ача — унӑн та виҫҫӗ, манӑн арӑмӑн малти шӑлӗсем ылтӑн, унӑн арӑмӗн те тимӗр... Йӑлт пӗрешкел, усал фотограф пекех ӳкерсе илнӗ! «Кӑкӑрӗсем малалла мӑкӑрӑлса тӑраҫҫӗ...» тенӗ тата. Мӗн ӗҫ пур санӑн ют ҫын арӑмӗн кӑкӑрӗпе? Ма ҫыратӑн ун ҫинчен? Сана хӗрарӑм кӑкӑрӗсем питех илӗртеҫҫӗ пулсан — тыт та авлан! Илсе яр авӑ пирӗн чайнӑйри Мархва-поварӑ е райисполком конюхне, Калери-Кавалерине, кӑкӑр енӗпе вӗсем фермӑри тепӗр ӗнерен те ирттереҫҫӗ!

Ш ӗ в ӗ р к к е *(тархасланӑ пекех).* Йӑнӑшатӑн эсӗ, хисеплӗ Пирожков... тьфу, Куколев юлташ! Ним ҫукран ан кӳрентер ҫынна...

К у к о л е в *(ун патнеллех пырса).* Епле ним ҫукран, епле ним ҫукран? Пӗтӗм республика умӗнче намӑс кӑтартрӑн пулать те, ҫав вара «ним ҫукран» пулать-и? Картинка ҫинчи пек ӳкерсе кӑтартнӑ-иҫ ман сӑна? Халь ӗнтӗ кашни паллакан ҫын, кашни тунката кулать манран. Шупашкартисем мӗн калӗҫ?! Акӑ, ҫитес эрнере мана унти пуҫлӑхсем отчетпа чӗнеҫҫӗ. Вӗсен куҫӗнчен мӗнле пӑхас манӑн, каттӑршнӑй, э? Мӗншӗн ҫавӑн пекех мӑшкӑлларӑн манран? Мӗн турӑм эп сана? Мӗнпе тарӑхтартӑм? Ман арӑм мӗнрен айӑплӑ пулчӗ? Кала, шуйттан этемми!..

Ш ӗ в ӗ р к к е *(шалт аптраса).* Итле-ха, Куколев юлташ, ӑнлан, Симон Христофорччӑ...

К у к о л е в. Мӗн, мӗн ӑнланмалла? Ахаль те йӑлт ӑнланнӑ ӗнтӗ эпӗ!

Ш ё в ё р к к е. Эп журналта çырни вăл — ялкор заметки те мар, пурнăçри чăн фактсене илсе такама тăрă шыв çине кăларас шутпа çырнă материал та мар, ку вăл — художествăллă произведени! Ана л и т е р а т у р а теççĕ! Хамăн геройсене эпĕ темĕн тĕрлĕ те туса кăтартма пултаратăп. Вăл манăн, авторăн ирĕкĕ...

К у к о л е в. Çук, шалиш, пултараймастăн, ун пек саккун çук, пулма та пултараймасть! *(Урипе тăрст! тапать.)* Пурнăçра мĕнле пулнă — çапла çеç çырмалла, неччу унта хăвăн кăтра пуçунтан шухăшласа кăларма!

Ш ё в ё р к к е. Литература вĕт-ха вăл, Куколев юлташ! Унта авторăн фантазийĕ те, шухăшласа кăларни те пулма пултарать. Тавçăрса ил-ха эс çавна!

К у к о л е в. Тавçăрса илнĕ ĕнтĕ, ак çак таранах! *(Хăйне мăйĕнчен çĕçĕпе каснă пек туса кăтартать.)* Элекçĕ эсĕ! Клеветник теççĕ сан пеккисене! Эп никама та хыçалти алăкран нимĕнле тавар та парса яман! Хăшпĕр начальниксен арăмĕсене ăна-кăна базăран парса янисем пулкаланă, ăна тунмастăп, анчах лавккан хыçалти алăкĕнчен — çук, паман, паман! Ухмах мар вĕт эпĕ пĕтĕм халăх умĕнче çавăн пек хăтланма, йӳтемен! Ун пек тусан, пĕр наччасра лекме пулать, ма тесессĕн кураççĕ, анчах базăран парса янине никам та сиссе юлаймасть. Турра шĕкĕр, торговльăра çирĕм çул ытла ĕçлетĕп, тем тĕрлине те курнă, анчах пĕрре те лекмен-ха. Понял? *(Шĕвĕрккене çисе ярас пек пăхать.)* Ĕçет, тенĕ тата... Анчах хăçан куртăн эс мана ӳсĕр çапкаланса çӳренине?! Э? Пĕлессӳ килет-тĕк, эпĕ çулталăкра иккĕ ĕçетĕп: ревизи хыççăн, остаткăсем снимать тусан. Ун чух та пĕччен мар, пĕтĕм ревизи комиссипе пĕрле. Мĕншĕн пĕлмесĕр çырса тултартăн? Кала!

Шĕвĕркке *(сăмахĕсене тăсса).* Литература вăл, донос та, жалоба та мар, ăнлан-ха эс çавна!

Куколев *(сĕтел çине çапать).* Манăн мĕн ĕç?! Литература, литература!.. Тупнă пĕр сăмах! Такама кирлĕ пуль санăн литературу! Эпир унпа раймагра селедка чĕркетпĕр çеç! Ав, ĕнер кăна кĕнеке магазинĕнчен пĕр лав сăвă кĕнеки илсе пытăмăр — уцененнăйсене, пĕр штукĕ виçĕ пус çеç. *(Аллинчи журнала лăр-лар! çурать те Шĕвĕрккене питĕнчен перет.)* Ме, çи хăвăн литературуна! Чыхăн! *(Чышкипе юнаса илет).* Элексĕ! Суда паратăп ак сана, кăтартĕç унта... Çирĕм пилĕк процент тӳлесе тăмалли принуд параççĕ те, пулать вара... фантази! Пĕлсех тăр — таккуй ташлаттаратăп сана! Эккей, тупăннă поэт-писатель-браматург!

Куколев алăка чăнт-чант! хупса тухса каять. Шĕвĕркке ик аллипе пуçне тытса кравать çине ларать. Хаш та хаш сывла-сывла илет хăй...

Шĕвĕркке. Кун пек пулать иккен-ха, чапа тухма пуçласассăн... Пĕри мухтаса пĕтерчĕ, тепри тытса çурма хатĕр... Виççĕмĕшĕ мĕнле пулĕ-ши тата? Майран туртса çакĕ-ши? Е Маюк пек ыталаса чуптăвĕ? Эй, ай-ай... *(Кравать çине тăсăлса выртать.)* Çук, çăмăл мар иккен чапа тухнă писатель пурнăçĕ, тинех ăнлана пуçларăм... *(Тăрук тăрса ларать.)* Çапах та — аптăрамăпăр-ха. Хăрамăпăр. Лев Толстойпа Максим Горький тӳснине эпир те тӳсĕпĕр-ха. *(Пĕççине шарт! çапать.)* Нич-чево! Трахом ермен.

Чӳрече тĕлĕпе Калери тем мăкăртатса иртет, Шĕвĕркке ăна курать те вырăн çинчен сиксе тăрать.

Шĕвĕркке. Тур çырлах, ку мĕн тума килет-ши тата? Ку та калав пиркиех мар пулĕ те? Пĕтрĕм ва-

ра! Ăçта кайса кĕрес? Кравать айне кĕрсе выртас мар-ши? *(Пĕшкĕнет, пытанма тăрать, анчах çав вăхăтра Калери кĕрсе тăрать. Аллинче — журнал.)*

Калери. Ан пытан, эп сана чӳречеренех куртăм!

Шĕвĕркке *(кулнă пек туса)*. Хе-хе... Камран пытанас-ха манăн, тата мĕншĕн пытанас? Кăранташ çухалнă та, çавна шыратăп мар-и? Килех, Калери, иртсе лар, сана курманни пит нумай пулать. Акă — пукан, хытă çĕрте ларма кăмăл тумасан — кравать çине те юрать. Тӳшекĕ, улăм пулсан та, хытах мар...

Калерие пукан лартса парать, анчах лешĕ ăна пĕррех тапса сирпĕнтерсе ярать. Шĕвĕркке стена çумнелле йăпшăнать, чӳрече çине пăхса илет. Калери, çакна асăрхаса, чӳрече патнелле пат! пат! утса пырса ăна хупать.

Калери. Манран тарса хăтăлăп тесе ан шутла эсĕ, шăркалчă. Кирлех пулсан, эп сана лашапа та хуса çитме пултаратăп. Райисполком лашисем пурте ман алăра, хуть те хăшне тытса утланма пултаратăп. Ахальтен-и мана хăш чух «кавалери» текелеççĕ...

Шĕвĕркке. Мĕншĕн тармалла вара манăн санран? Тарма мар, эс килсе кĕнĕшĕн питĕ савăнатăп.

Калери. Ах, тур, савăнсах кайрăн пуль! Тен, эрех те илсе ĕçтерес тейĕн мана?

Шĕвĕркке. А мĕн? Иккĕ куç хупса илнĕ хушăрах пĕр кĕленче хĕрли илсе килме пултаратăп...

Калери. Кĕсре хӳри мар-и?

Шĕвĕркке. Эс çав тери ырă хĕрарăм та-ха... Райцентрта сана пурте юратаççĕ, мухтаççĕ. Ну, эпĕ те ара... ырхантарах пулсан та, арçын вĕт-ха...

Калери *(аллинчи журналĕпе сĕтеле çапать)*. Молчать, йĕпе сăмса! Юраттарăп ак эп сана!

Шĕвĕркке. Эс мĕн вара паян... ун пекех хаяр?

Калери *(пукан илсе ун çине пĕррех утланса ла-*

*рать, вăрахчен Шĕвĕрккене куçĕсемпе пăралать, тутине пăркалать).* Эсĕ мĕн пур çĕре те хăвăн сăмсуна пырса чикетĕн? Мĕн кирлĕ сана? Мĕншĕн чипер пурăнакан çынсем çинчен журналсенче çырса кăларатăн?

Ш ĕ в ĕ р к к е. Ăнланаймастăп, мĕн çинчен калаçатăн эсĕ?..

К а л е р и *(каллех журналпа çапать).* Ак çакăн çинчен! Эсĕ ман пирки лăпăртатса тултарни çинчен! *(Хăвăрт кăна Шĕвĕркке патнех пырса тăрать.)* Кала-ха, йытă вилли, мĕн ĕç пур санăн манпа? Ăçти кĕçтет санăн? Эккей, тупăннă крытик-самокрытик! Эп арçынсемпе нумай кулять тăватăп иккен, ĕçсе ӳсĕрлетĕп, намăссăр такмаксем каласа ташлатăп, тата тем шуйттанĕ те... Сана хăш енчен пырса тĕкĕнет вăл? Э? Эпĕ кăвалерсемпе мар, качака такисемпе çӳресен те, не вашшă делă, илтрĕн-и? Эп тута сăрланипе сана мĕн ĕç? Краскине сан укçуна вăрласа илмен пуль? Тата ют упăшкасене хăçан илĕртнĕ эпĕ? Вĕсем хăйсем ман хыççăн чупаççĕ пулсан, уншăн эпĕ айăплă-и? Арăмĕсем айăплă, упăшкисене юратма пĕлмеççĕ пулсан, илтрĕн-и? Мĕн лăпăртатса тултарнă эс унта, асат çапса хуçманскер? Ма чĕнместĕн? Ак, тытăп та пĕрре... *(Урайĕнчи шăпăра çавăрса тытать, хăмсарать. Шĕвĕркке аллисемпе хӳтĕленсе чакать.)*

Ш ĕ в ĕ р к к е *(чĕтрекен сасăпа).* Сан çинчен çырман унта, Калери... Тупата туршăн, сан çинчен мар...

К а л е р и. Епле ман синчен мар?! Йăлт ман çинчен! Пĕр пуккине çеç улăштарнă-иç, Калери вырăнне Валери туса хунă? Мĕн, улталас терĕн-и? Райисполком секретарĕ Шаклашкин юлташ мана йăлт ăнлантарса пачĕ ĕнтĕ — улталаймастăн! Пĕтĕмпех сан çинчен, тет!

Ш ĕ в ĕ р к к е. Тĕрĕс мар вăл, ун пек мар...

К а л е р и. Тĕрĕс, йăлт тĕрĕс çырнă! Ман çинче-

нех! Каçармастăп-ха сана куншăн, тем пулсан та ҭаваратăп! Пĕлсех тăр, аçа çапманскер: акă, ятарласах тепĕр ача тăватăп та — ан тив, тур калашле виççĕ пултăр! — юри сан çине çырса хуратăп, тапкаланăн вара таппа лекнĕ кушак кайăкĕ пек. Свитетлĕсем те тупатăп, алимент шырама тытăнатăп. Илтрĕн-и, тăм пăшал?

Шĕвĕркке. Манра ним айăп та çук, çылăхлă мар эпĕ сан умăнта... Сан çинчен çырман унта, тархасшăн ĕнен ĕнтĕ, Калери!

Калери. Ĕненместĕп! Ы-ых, сана-и? *(Шĕвĕрккене хулпуççинчен тытса лăскама тапратать.)* Халех катлет тăватăп санран, шăршлă çăвар! Пĕрре авланса курмасăрах леш тĕнчене ăсанатăн вĕт, эсрелĕ! *(Силлет.)*

Чӳречере Амаев курăнса каять. Чарăнса тăрать.

Амаев. Аха-а, килте-и-ха пирĕн писатель-копатель? Пар ăна лайăххрах, хытăрах силле, чунĕ тухса кайтăр!

Шĕвĕркке *(Калери аллинчен вĕçерĕнсе тăрук сцена хĕррине чупса пырать).* Тепри те çитрĕ! Ну, халь пуçĕпех пĕтрĕм эппин! Вĕлереççĕ кусем мана, пусаççĕ, ку выльăх тухтăрĕ, сысна аçисемпе такасене касакансскер, яланах виç-тăватă çĕçĕпе çӳрет вĕт, çитменнине, кашни кунах ӳсĕр тата... О, пĕтрĕм, вилтĕм, халь тин мана никам та килсе çăлас çук! Сыв пул, çут тĕнче, сыв пул, çамрăк ĕмĕр, сыв пул, юратнă литература!..

Амаев пӳлĕме кĕрет те аллинчи сумкине васкамасăр алăк патне пăрахать. Сумкинче темскер чăнкăр-чанкăр! тăвать, унта чăнах та çĕçĕсем пулмалла. Хăй ерипен, енчен енне тайкаланарах утса, ниçта кайса кĕрейми хăраса ӳкнĕ Шĕвĕркке патне пырать.

Амаев *(Калерие).* Тăн кĕртрĕн-и пăртак?

К а л е р и. Тин çеç пуçласаттăм, эс килсе кансĕрлерĕн...

А м а е в. Нимех те мар. Иксĕмĕр эпир ăна тата лайăхрах тыткалама пултаратпăр. *(Стена çумне лăпчăннă Шĕвĕркке патне пырса ăна янахĕнчен шаклаттарса илет.)* Ну, мĕнле?

Ш ĕ в ĕ р к к е. Нич-чево... аптрамасть... трахом ермен...

А м а е в *(кĕсйинчен журнал кăларса).* Так-с, тейĕпĕр... Хулиган-ха, эппин, эпĕ, çапла-и? Хĕрсене хĕсĕрлетĕп? Ĕçсе ÿсĕрĕлсе, урамра намăссăр юрăсем юрлатăп? Çынсене лăпкăн пурăнма памастăп? Çапла-и? Çапла-и, тетĕп!

Ш ĕ в ĕ р к к е. Пĕл... пĕл... пĕлместĕп!

А м а е в. Пĕлместĕн эппин? Пĕлместĕн, çапах та çыратăн?!

Ш ĕ в ĕ р к к е. С... сан çинчен çырман!

А м а е в. Çырман, тетĕн?! Ак çакă мĕн вăл? *(Шĕвĕркkене сăмсинчен журналпа чышать.)* Кала, мĕн тăвас сана ку элекшĕн? Э? Тавай, ху каласа пар — мĕнле ытларах килĕшет сана? Çупкăпа-и, тапкăпа-и е чышкăпах сăмса урлă парас? Кала!

Ш ĕ в ĕ р к к е. Литература вăл, Амаев юлташ... Сан çинчен ним те çук унта, пĕтĕмпех фантази... художествăллă творчество, литература...

А м а е в *(хаяррăн мăшкăлласа).* Литература... лăтăртаттура! Анчах эп сана ак çакăнтах ярса илсе хăвăн пилĕкне латăртаттарса хуçса хурсассăн — мĕн калăн-ши эсĕ, сысна шăрки?

Ш ĕ в ĕ р к к е *(кăшкăрса ярать).* Мана тивме эп айăплă мар, уншăн сана ответ тытмалла пулать! Саккун умĕнче!

А м а е в. А-а... *(Шĕвĕркке тавра утса çаврăнать.)* Санăн тата ответ тыттарассипе хăратас шуту пур-и-

ха? Кăтартăп эп сана ответ! *(Пĕр хушă Шĕвĕркке ҫине куҫĕсене хĕссе, хашкаса пăхса тăрать.)* Так... Йышăнмастăн-ха эппин хăвăн айăпна?! Пит аван, пи-итĕ аван, апла пулсан... Апла-тăк, эпир санпа урăхла калаҫăпăр. Калерипе иксĕмĕр халех санăн чĕлхÿне касса илетпĕр! А ну, Калери-кавалери, тыт ăна лайăхрах, чÿречерен тухса ан тартăр. Эп ăна халех, халех... *(Алăк патнелле кайса сумкине илет те ун ăшĕнчи тимĕр япаласене чăнкăртаттарать.)*

Ш ĕ в ĕ р к к е *(кăшкăрса ярать).* А-а!.. Ҫăлă-ăр!..

Чÿрече умĕпе М и л и ц и с е р ж а н ч ĕ утса иртни курăнать. Ăна пурте кураҫҫĕ те шăп пулаҫҫĕ.

С е р ж а н т *(питĕ хавассăн пырса кĕрсе).* Салам, юлташсем! Ырă кун пултăр! *(Амаевпа Калерие пуҫ таять, Шĕвĕркке патне пырса ал парать.)* Сана вара пуринчен те пысăкрах салам, Шиверкин юлташ! Вуларăм сан калавна. Питĕ килĕшрĕ! Маттур, лайăх ҫырнă, ним те калаймăн урăх... *(Ларать те пирус чĕртсе ярать.)* Пуринчен ытла эс унта милици сержантне лайăх кăтартнă... Епле паттăр вăл санăн! Пĕрпĕччен икĕ бандита тыса килет, ним хăрамасть. Ҫавăн пек пулмалла та пирĕн, тĕрĕс! Районри пур милиционерсен ячĕпе тав тăватăп сана ку калавшăн. Малашне татах ҫыр ҫавăн пекки! Хулигансене, харампырсене, жуликсене, вăрăсене, ҫăмăлттай хĕрарăмсене ним хĕрхенмесĕр ҫунтар, вĕсемпе кĕрешекенсене — мухта! Пит тĕрĕс пулать вара... *(Амаевпа Калери ҫине пăхапăха илет.)* Эсир вуланă-и Шиверкин юлташăн калавне? Вуламан пулсан — мейĕр, вуласа савăнăр! *(Вĕсене журнал пама тăрать.)*

К а л е р и. Вуланă, пĕлетпĕр. *(Ал сулать те алăк патнелле каять.)*

А м а е в. Савăнтăмăр вуласа. Тавтапуç ăна...

Калерипе Амаев тухса каяççĕ.

С е р ж а н т. Кусем сан патна канмалли кун ирирех мĕн тума килнĕ ара?

Ш ĕ в ĕ р к к е *(ассăн сывласа ярса)*. Çавăн пирких... Журналти ман калава вуласа тухнă та, вăл хăйсене çав тери кăмăла кайни çинчен калама, мана тав тума килнĕ.

С е р ж а н т *(Шĕвĕрккене çурăмĕнчен юлташла çапса илет)*. Тĕрĕс, кун пек калавсемшĕн тав тăвас пулать. Усăллă калав! Хăвна та чапа кăларать вăл.

Ш ĕ в ĕ р к к е *(ассăн сывласа)*. Çапла, чапа кăларчĕ...

Пĕр пайлă камит

# Виçĕ кирпĕч



## КАМИТ * КĂТАРТАКАНСЕМ:

**Истрат**, çамрăк художник, тĕнче çине çав тери хавассăн пăхакан йĕкĕт.

**Мархи**, Истрат амăшĕн аппăшĕ, аллăран иртнĕ, анчах никама та маххă парас çук-ха, сутас-илес енчен пит маттур, килте вара — турă та, патша та вăл.

**Çемен**, Мархин киле кĕртнĕ иккĕмĕш упăшки, чĕмсĕр чун Хăй пĕчĕккĕ, сухалĕ кĕреçе пек.

**Арçын ача.**

---

* А. Лазарева калавĕ тăрăх çырнă.

Сад пахчи. Сылтăмра — картишне тухмалли пĕчĕк алăк. Çулла, улма-çырла пиçме тытăннă вăхăт. Шăп. Кайăксем чĕвĕлтетеççĕ. Хĕвел. Шăрăх.

Пĕр лапсăркка улмуççи айĕнче, пĕчĕк тенкел çинче, çăварне кукăр чăпăклă чĕлĕм хыпнă Семен чăлха çыхса ларать. Нумайранпа ларать пулмалла вăл,— йăлт ĕнтĕркесе çитнĕ. Куçĕсем хупăнаççĕ, хушшăн-хушшăн малалла тирĕнсе каяс пекех сулăнса илет. Унтан карт! вăранса каять те каллех пŭрнисене вылятма тытăнать — чăлха çыхать. Кăшт ларсан татах тĕлĕрме тытăнать. Çăварĕнчи чĕлĕмĕ шăкăртах тухса ÿкет. Улмуççи хыçĕнчен Арçын ача йăпшăнса тухать. Вăл Семен харлаттарсах çывăрнине курать, унăн çурăмĕ хыçĕнчи чи шултра панулмисене çăтăр-çатăр татса хĕвне тултарать, унтан аяккарах кайса Семене чĕлхипе кăтартса витлет, пŭрнисемпе «сăмса» туса кăтартать те куçран çухалать. Самантрах вăл сцена хыçĕнче хыттăн кăшкăрни илтĕнет: «Хура-ах! Хура-ах! Семен пичче, çаратаççĕ! Пĕр улма та хăвармаççĕ!..»

Семен *(сиксе тăрса)*. Мĕн пулнă? Кам кăшкăрчĕ? Ăçта хурахсем? Кам хурах? *(Йĕри-тавралла пăхкалать, уткалать.)* Ара, никам та çук-иç? Кам эсрелĕ кăшкăрчĕ пулать «хурах, çаратаççĕ!» тесе? Е эп, çывăрса кайсан, тĕлĕкре куртăм-ши? *(Итлет, ĕнсине хыçать.)* Чăнах та тĕлĕкре илтнĕ пулмалла... Эх, ватсупнă, ватсупнă! *(Ларать, чĕлĕмне çĕртен илсе хыпса чĕртсе ярать, каллех чăлха çыхма тытăнать.)* Никак

та ёç малалла шумасть паян. Мархи кайнăранпа пĕр шит тăршшĕ те çыхаймарăм шуйттан чăлхине. Пасартан таврăнсан каллех çавраçил пек лекци пулать ĕнтĕ... Эх, пурăнăç, пурăнăç! *(Хаш! сывласа ярать.)* Мĕн çитменшĕн, мĕн шыраса килсе кĕтĕм-ши эп çакăнта? Чип-чипер пурăннă çĕртенех, хам ирĕкпех Мархи чури пулса тăтăм, ват ухмах! *(Чĕлĕмне мăкăрлантарать, чăлхине хăвăрт-хăвăрт çыхать.)* Тупата туршăн, тепре кӳрентерсенех тухса таратăп çак вĕреçĕлен йăвинчен. Çитет мана кун чухлĕ мăшкăл тӳснипе. Халь вăйăм пур-ха, ĕçлеме пултаратăп. Ман пек платнике хуть ăçта та йышăнаççĕ... Мăшкăллаттармастăп, çитет!

Пĕчĕк алăкран Истрат кĕрсе тăрать. Кĕске çанăллă ула-чăла кĕпе, ансăр шăлавар тăхăннă. Хулпуççинчен этюдник çакса янă, сылтăм аллинче — пысăк папка, ун ăшĕнчен шурă хут листисем курăнаççĕ.

**Истрат.** Салам, Çемен пичче! Ман килес! Юрать-и?

**Çемен** *(сиксе тăрать).* Э-э... Килех ара, килех. Анчах кил хуçи çук-ха çав, эп пĕчченех. Сана Мархи кирлĕччĕ пуль те ĕнтĕ...

**Истрат.** Çемен пичче, эс мĕн, мана паллаймарăн-им?

**Çемен.** Э-э... Ытлах уйăрса илеймерĕм çав...

**Истрат.** Ара, эпĕ вĕт ку, Истрат, Мархи аппа йăмăкĕнаслă ывăлĕ. Мантăн-им мана?

**Çемен.** Э-э... Чăнах та-çке! Халь палларăм, палларăм! Килех, ара, ирт кунталла...

Вĕсем пĕр-пĕрне хирĕç пырса ал тытаççĕ.

**Истрат.** Мĕнле пурăнкалатăр, Çемен пичче? Чиперех пуль?

Ç е м е н. Э-э... Ман пурнăç пирки мĕн калаçмалли пур! Хай каларăш, пурăнатăп, çул хĕрринчи ясмăк пек...

И с т р а т. Çул хĕрринчи ясмăка ăна пурте таптаççĕ-çке-ха, сана кам таптать вара? Тата таптанă курăк ÿсмест вăл, анчах сан сухалу ав епле паркаланса кайнă — Лев Толстой сухалĕ пек-иç!

Ç е м е н. Сухалĕ ÿсет-ха вăл, унăн ĕçĕ çавă... Анчах таптас енĕпе илсен, çынна темиçен мар, пĕччен таптасан та, çĕр ăшнех путарса кĕртсе яма пулать. Майне пĕлни çеç кирлĕ... Кил, никам кансĕрлемен чух ларса калаçар-ха. Эп сана курманни пилĕк çул та çитет пуль?

Тенкел çине ларaççĕ.

И с т р а т. Çапла çав, курманни нумай пулать. Темшĕн-çке хулана пĕртте пымастăн? Мархи аппа кашни эрнере тенĕ пекех пыркалать хуть.

Ç е м е н. Вăхăт çук манăн, ывăлăм, каккуй унта хула — килте пурăннă çĕрте те çурăм хыçса илме вăхăт тупаймастăп. Колхозĕнче те ĕçлемелле, куртăн пуль — ял вĕçĕнче мĕн пысăкăш ферма çурчĕсем тума тытăнтăмăр. Платникĕсем сахал, анчах, сăмсаран юн кайсан та, хĕле кĕриччен фермине туса çитермелле, теççĕ. Килĕнче те маншăн ĕçĕ шуйттан чухлех... Мархин унăн ма çÿрес мар? Спекулянцă вĕт вăл, те-ек пасартан пасара йăрккать, лара-тăра та пĕлмест. Хамăр килти çимĕççене, çăмарти-çуне сутни çитмест ăна,— ялти ватăрах хĕрарăмсенчен ăна-кăна йÿнĕрех хакпа илет те пасара кайса икĕ хакпа ярăнтарать! Елĕкхи усламçăсенчен пĕрре кая мар хăтланать, мур. Чарса та чарăнмасть. Вăл тухса кайсан, манăн килне те пăхас пулать, сад пахчи те сыхлас пулать...

Истрат. Апатне те хăвах пĕçеретĕн пуль ĕнтĕ?

Çемен. Ара çав! *(Хаш! сывласа ярать.)* Йăлтах хам тăватăп. Каттăршнăй пекех. Выльăх-чĕрлĕхĕ те, кайăк-кĕшĕкĕ те ман çинче. Апатне те хамăнах пĕçермелле, эрнере пĕрререн кая мар аншарлине те юхтармалла — Мархи аппу унсăр пурăнаймасть вăл, хăйне те кирлĕ, мухмăрпа аптракансене те ыр тăвать — паллах, ахаль мар, укçалла, калатăп-иç, спекулянцă! Кĕпе-йĕмне те час-часах хам çăватăп. Ял кулли вĕт! Леш эрнере авă çырмана кĕпе чӳхеме антăм те, хĕрарăмсем веç мăшкăлласа пĕтерчĕç мана: арçын-и эсĕ, матка-и, теççĕ. Тавай, тĕрĕслесе пăхас сана, теççĕ. Шалт аптрарăм. Унтан пĕри, харсăртараххи, хыçалтан пырса тапрĕ те *(хăй тапнă пек туса илет)*, шăмпăрт! шыва кĕрсе ӳкрĕм. Пĕве пусĕнче шывĕ та-арăн пирĕн, хам ишме пĕлсех каймастăп, чут путаттăм! Хĕрарăмсем кĕçенеççĕ кăна, вĕсене мĕн? Камит пултăр! Çырана тухма та памаççĕ, снай каялла тĕке-тĕке яраççĕ. Аран-аран хăтăлтăм эсреметсенчен! Киле килсен, Мархие шалăп патăм та çавăн çинчен, вăл мана хĕрхенес вырăнне: «Сана пусĕпех путармалла-мĕн, эс çĕр çинче пурăннинчен мĕн усси?» — терĕ. Макăрса ярас патнех çитрĕм çав, шутсăр хурлантăм... *(Тăрук нăшăкласа куçĕсене çанă вĕçĕпе шăлса илет.)*

Истрат *(куллине пытарса)*. Ха тата! Мĕншĕн ун пекех чунсăр пулнă-ши-ха вăл? Тепри пулсан, чăнах та хĕрхенмелле пек... Унăн сана часрах типĕ кĕпе-йĕм тăхăнтарса, ăшăнмалăх пĕр черкке те пулин эрех памалла-мĕн. Çын чирлесе ӳкме пултарать ун пек!

Çемен. Ан та кала, ачам, ан та кала! Чул чĕреллĕ çын вăл, санăн аппу. Хăвах шутласа пăх-ха эсĕ: епле-ха манран ним усси те çук пултăр? Çынсем те хисеплеççĕ мана, колхоз правленийĕ те тиркемест,

Пит ăста платник вĕт эпĕ, чăн-чăн маçтăр. Пĕлтĕр кĕркунне хĕрарăмсене ача çуратмалли çурт срокчен пĕр уйăх малтан туса патăмăр та — пире пурне те преми тыттарчĕç. Мана стена çине çакмалли сехет пачĕç, халь те кашни çур сехетрех чиркӳ чанĕ пек янратать. Мĕн, япăх-им вăл?

Истрат. Ăçтан япăх пултăр-ха? Питĕ лайăх!

Çемен. Анчах вăл çавна ним вырăнне те хумасть. Çын шутĕнчен кăларчĕ ĕнтĕ мана, çăвар уçма та памасть, эсремет.

Истрат. Пăх-ха! Эп Мархи аппа ун пекех хаяррине пĕлмен. Пирĕн пата пырсан, пит лайăх калаçать те...

Çемен. Э-э... Кирлĕ чухне ун чĕлхи пыл та çу, мĕн калăн. Майракаллă шуйттана та хăй майлă çавăрма пултарĕ. Шăлать кăна. Пĕр кастарма тапратсан вара — чăтма çук, çава пек чашлаттарать. Эп хам ĕнтĕ тахçанах хирĕç чĕнме пăрахнă, мĕншĕн тесен ăна пурпĕрех çĕнтерес çук. Янратăр! Анчах кӳршĕсене те пурнăç памасть вăл — пулчĕ-пулмарĕ тем те каласа тăкать, кайран хуть те пĕтĕм тĕнче йăтăнса антăр. Пĕр-икĕ хут тăн кĕрткелерĕç-ха хăйне, çапах та усси курăнсах каймасть...

Истрат. Епле тăна кĕртрĕç?

Çемен. Судпа айăпларĕç. Пĕрре çирĕм тенкĕ штраф тӳлерĕ, тепре вунă талăк ларса килчĕ...

Истрат. Ларса килчĕ? Вунă талăк? Мĕншĕн?!

Çемен. Ара, мĕншĕнни паллă ĕнтĕ. Мелкий хулиганство. Ун пирки указ пур, ăна пурте пĕлеççĕ.

Истрат. Мĕнле хулиганство тунă вара вăл ват пуçĕпех? Урăллах-и? Е ӳсĕрпе лекнĕ-и?

Çемен. Мур пĕлет ăна! Тен, урăллах хăтланнă-и. Сăмах майĕн каласан, мана хама вăл урăллах пит лайăх ислетет тепĕр чух. Алла мĕн лекнĕ — çавăнпа яра

парать. Акă, тытса пăх, мĕн пысăкăш мăкăль... *(Пуçне хыпашлаттарать.)* Иртнĕ эрнере писмен тукмаккипе янклаттарчĕ.

Истрат *(Çемен пуçне хыпашласа).* У-у, чăнах та мăкăль-çке, чăх çăмарти пысăкăш! Мĕншĕн лектерчĕ-ха ун пекех?

Çемен. Ара, кĕтӳрен таврăнсан, ĕне лаççа кĕрсе кайнă та аншарли юхтарма хатĕрлесе лартнă пракана çур катка ĕçсе янă, аçа çапманскер! Ӳсĕрлсех кайнă, ахăрать кăна, ытти выльăхсене йăлт тĕксе пĕтерчĕ.

Истрат. Апла, ыр кураканни — ĕне пулнă, патакĕ сана лекнĕ, çапла-и?

Çемен. Ийя çав, ийя, çаплах пулса тухрĕ.

Истрат. Анчах эсĕ Мархи аппа вунă талăк мĕншĕн ларса тухнине каламарăн-ха, манăн çавна питĕ пĕлес килет.

Çемен. Э-э, ачам, çынсем каланă тăрăх вăл тияттăрти спектакль пекех пулнă. Чисти камит. Хи-хи-хи...

Истрат. Каласа пар-ха эппин, эп те кулам!

Çемен. Халех, чĕлĕм чĕртер-ха малтан...

Истрат. Ме акă, пирус турт.

Çемен. Тавтапуç. Тутлине ĕмсе пăхар-ха эппин.

Иккĕшĕ те пирус мăкăрлантараççĕ.

Истрат. Эп сана итлеме хăлхасене тăратрăм, Çемен пичче.

Çемен. Çапла пулнă вăл... *(Уткаласах калама тытăнать.)* Сулахайри кӳршĕсен сар автанĕ пирĕн чăхсем патне çӳреме вĕреннĕччĕ. Килет те килет, ниепле чарма çук эсреле. Чăхсемпе пĕрле пирĕн апата çини çитмест, çиелтен тата кашнинчех хамăр автана хĕнесе хăварать. Тепĕр чух чĕп-чĕр юн тăвать. Ну... Мархи

пĕррехинче çавна чулпа яра парать. Палт! кайса ӳкет автан. Ӳкет те — урăх тăмасть. Вилет! Мĕн тăвас? Мархи хайскере тытать те çырманалла вăрать. А-ав çава́нталла... Анчах кӳршĕсен кĕçĕн ачи çакна пĕтĕмпех курса тăнă-мĕн. Каять те амăшне каласа парать. Лешсем наччасрах автан виллине тупса пирĕн пата чупса килеççĕ. Эп хам курман ăна, ферма тунă çĕрте пулнă ун чух... Ну, пуçланать харкашу, ятлаçу — пĕрне-пĕри чи витĕмлĕ сăмахсемпе çунтараççĕ. Çавна илтсе урампа иртсе пыракан çынсем те чарăна-чарăна тăраççĕ. Пурте пирĕн кӳршĕсем майла́ пулаççĕ — вĕсен автанне çапса пăрахнă-çке-ха, вĕлеренни — Мархи. Хăшĕсем ăна намăслантарма пăхаççĕ. Мархи парăнмасть. Асту, часах парăнтарăн-ха эс ăна! Алла виç юплĕ йывăç сенĕк илет те пуçлать хăвалама! Пурне те! Пĕр-иккĕшне хытах лектерет: пĕринне кĕпине, тепринне йĕмне çурса пăрахать. Тахăшĕ ун аллинчи сенĕке туртса илсен, ку урăхла меслет тупать: картишĕнчи типсе хытма ĕлкĕреймен ĕне тислĕкне ывăçла-ывăçла пеме тапратать. Нач та нач! Лач та лач! Пĕрисен кĕписене вараласа пĕтернĕ, теприсене пит-куçран та лектернĕ. Ну... лешсем акт çыраççĕ, ал пусаççĕ те — ял Советне каяççĕ. Кайран вара, паллах, суд, вунă талăк... Хи-хи-хи...

И с т р а т *(кулать).* Матту-ур, маттур Мархи аппа. Хайне валли шыраса тупнă эппин? Тĕрмерен вара мамăк пекех çемçелсе таврăнчĕ пуль? Халь йăваш пуль?

Ç е м е н *(ал сулать).* Э-э, калаçатăн кирлĕ мара! Малтанхинчен те усалтарах. Ют çынсемпе питех шарламасть, тепĕр хут лекесрен шикленет пулмалла, анчах мана... мана чĕррĕнех çиет. Çаççим аптрал эпĕ халь. Акă, пăх-ха эсĕ, ачам... *(Хăй çыхакан чăлхана илсе кăтартать.)* Мĕн вăл çак?

Истрат. Мĕн пултăр? Çыхса пĕтермен алсиш е чăлха... Мархи аппа çыхать пуль ерçнĕ вăхăтра?

Çемен. Эп çыхатăп ăна!

Истрат. Эсĕ?! Ан тĕлĕнтер-ха! Арçын ĕçĕ мар вĕт вăл!..

Çемен. А вăт, мĕн тăвас тетĕн? Хушать! Итлемесĕр кутăнланса тăма юрамасть, атту-тăк каллех писмен тукмакки тутанса куратăн... А вăл тимĕр вĕт, лексен ай-ай ыраттарать!

Истрат. Тĕлĕнмелле... Шутсăр тĕлĕнмелле!

Çемен. Хам та тĕлĕнетĕп те çав, нимĕн те тăваймастăп. Хушать. Приказ! Ахаль кăна хушмасть-ха тата: план парать, задани!

Истрат. Мĕнле задани?

Çемен. Сивĕсем пуçланиччен манăн вăтăр мăшăр чăлха çыхмалла. Вăтăр! Унтан пĕртте кая мар. Шутласах хунă вăл: кашни мăшăрне виçĕ тенкĕпе сутсан та, тăхăрвун тенкĕ пулать. Ĕлĕкхи укçапа тăхăрçĕр тенкĕ вĕт вăл, пине яхăн! Çав плана тултармасан, эп сана хĕлле киле те кĕртместĕп, терĕ. Хуть те сысна çурисемпе пĕрле витере пурăн, терĕ.

Истрат. Ай-ай, апла... чăнах та йывăр-çке сан пурнăçу...

Çемен. Çапла, ырри сахалтарах! *(Тарăхнипе чăлхине тытса хăвăрт çыхма тытăнать.)* Эсĕ ху мĕнле пурăнкалатăн? Вĕренетĕн-и, службăра тăратăн-и? Авланмарăн пуль те?

Истрат. Çук-ха, авланма иртерех мана. Кăçал вĕренсе тухатăп та, ун хыççăн салтака кайса килес пулать. Кайран куç курать унта.

Çемен. Тĕрĕс сан сăмахху, ачам. Анчах хуть те хăçан авлансан та ман пек ухмах тăрпалтай ан пул. Нимрен ытла — киле ан кĕр, акă мĕн! Киле кĕрекен çын вăл — чи мĕскĕн çын. Эп куна хамăн пурнăçа

йлсе калатăп. Хĕрĕн хуть те виçĕ хутлă чул çурт пултăр, хуть ге сан умна пĕр лаххан ылтăн лартса паччăр — ан килĕш! Асту, ан ман çавна. Киле кĕме — ни-ни-ни! *(Пÿрнипе юнаса илет.)*

Истрат *(кулать)*. Юрĕ, Çемен пичче, сан опытна шута илĕп. Кил-çуртсăр, хваттерсĕр арăм тупма тăрăшăп.

Çемен. Тĕрĕс. Çапла ту. Эс кам пулма вĕренетĕн-ха?

Истрат. Художник пулма ĕмĕтленетĕп, Çемен пичче.

Çемен. Э-э... леш, картинкăсем сăрлаканни-и? Аван япала. Пĕчĕк чухне эп хам та ÿкерме юрататтăм. Пит лайăх астăватăп... Пĕррехинче, мăнкун умĕн, анне кăмакана шап-шур шуратса лартрĕ. Хутран та шурăрах. Эп вучахран кăмрăк илтĕм те тытăнтăм çав кăмака çине картинкăсем тума! Сыснасем, качакасем, шуйттан пуçĕсем ÿкерсе тултартăм — пĕр кĕтÿ! Питĕ интереслĕ пулчĕ хамшăн, чунтанах савăнтăм. Анчах анне чиркÿрен таврăнчĕ те чĕн урхалăх сÿсленичченех хĕртрĕ. Çавăн пирки тепĕр чух халь те купарча пĕçеркелесе илет... Пăрахрăм вара художник пулма. Эс мĕн çине ÿкеретĕн-ха?

Истрат. Хăш чух хут çине, хăш чух — пир çине, хăçан мĕнле май килет. Акă, паян автобус çинчен ансанах сирĕн ял çыннисене ÿкертĕм-ха, ферма çуртне тăвакансене. Пит хитре стариксем ĕçлеççĕ те унта...

Çемен. Аçта ÿкерчĕкĕсем, кăтарт-ха?

Истрат папки ăшĕнчен хут листисем кăларса кăтартать.

Истрат. Мĕнле пек сана, майĕ пур-и? Паллама пулать-и?

Çемен. Палламасăр ара! Пурте чăн шивой пекех

пулса тухнӑ-иҫ! Ак ку акӑ Вӗҫкӗн Ваҫли, ку — Шакӑльчак Ларкки, ку — Кӑххӑм Еххӗмӗ пулмалла-ха.

Истрат. Ӳкерчӗкӗсем аптрасах каймаҫҫӗ эппин?

Ҫемен. Каккуй унта аптрамалли те! Шутсӑр лайӑх тунӑ! Пултаратӑн иккен эсӗ, маттур.

Истрат. Пултарасах пулать ҫав, пиллӗкмӗш ҫул вӗренетӗп те-ха... Манӑн, Ҫемен пичче, халь диплом валли пысӑк картин ӳкермелле. Ҫӗнӗ ял сӑн-сӑпатне кӑтартас тетӗп. Ҫавӑнпа килтӗм-ха сирӗн пата, хама кирлӗ сӑнарсем шырама.

Ҫемен. Юрать, ачам, юрать. Питӗ аван. Тен, асӑнмалӑх, ман сӑна та ӳкерсе илӗн, э?

Истрат. Ун ҫинчен эпӗ хам та шухӑшларӑм-ха. Сан сухалу пит килӗшет мана, ун пек чаплӑ сухал чӑвашра сайра тӗл пулать.

Ҫемен. Хе-хе... Сухалӗ аптрамасть ҫав манӑн. Хам пӗчӗккӗ пулсан та, сухалӗ пур... *(Сухалне шӑлкалать.)*

Истрат. Юрӗ, тавай эппин, ӳкерер.

Истрат этюдникне вӗҫертсе урисем ҫине тӑратать, ӳкерме хатӗрленет. Ҫемен те ҫӳҫне-пуҫне, сухалне шӑлса якатать, урисене явса, паттӑрланса ларать. Ҫав вӑхӑтра пахчана Мархи кӗрет те, арҫынсене курса, алӑк патӗнчех чарӑнса тӑрать. Сӑнӗ-пичӗ хӗп-хӗрлӗ, самаях сыпнӑ пулмалла. Куҫӗсем ялкӑшаҫҫӗ кӑна. Малтанах Истратпа Ҫемен мӗн ӗҫленине ӑнланаймасть-ха вӑл. Лешсем ӑна асӑрхамаҫҫӗ. Мархийӗ аллисене кӑкри умне тытса итлет...

•

Ҫемен. Ҫапах та эсӗ мана ытла ватӑ тума ан тӑрӑш, ачам. Утмӑл улттӑра кӑна-ха эпӗ, манпа тантӑшшисем ку чухне ҫирӗм пиллӗкрисене качча илеҫҫӗ. Хе-хе... Тепӗр чух, пасара-мӗне кайсан, хӗрӗсем ман ҫине те пӑхкаласа кулаҫҫӗ... Кам пӗлет, тем шут вӑл хӗрарӑмсен?

Мархи ывӑç тупанне хӑлхи патне тытса итлет.

**Истрат.** Сан сухална ытараймаççĕ пуль, Çемен пичче.

**Çемен.** Çавӑнпа та пуль çав. Анчах юлашки вӑхӑтра сухалĕ сайралансах пырать çав манӑн.

**Истрат.** Мĕншĕн? Тӑкӑнма пуçларĕ-им?

**Çемен.** Мархи аппу айӑплӑ! Пулчĕ-пулмарĕ, кӑшт тарӑхсанах сухалтан ярса тытать. Шутсӑр хытӑ туртать, вĕреçĕлен! Качака путекки пек çухӑратӑп вара, ниçта кайса кĕме пĕлместĕп.

**Истрат.** Çухӑрсан туртма пӑрахать-и?

**Çемен.** Каккуй, тата хытӑрах тӑпӑлтарать! Шуйттан вĕт вӑл, этем мар, мӑйракаллӑ шуйттан! Тепĕр упӑшка пулсан, ӑна тахçанах çапса пӑрахса вакка ямалла та çав...

Мархи тек тўссе тӑраймасть. Вырӑнтан тӑрук хускалса пат! пат! утса каять те ним сисмен Çемене хыçалтан пырса пĕррех хӑлха чикки парать. Старик палтӑрт! кайса ўкет, анчах çавӑнтах çурӑмĕ çине çаврӑнса выртса, хўтĕленнĕ пек, алли-урисене çĕклет. Мархи унӑн хырӑмĕ çине пусать. Сӑнĕ-пуçĕ вара — упӑшкине халех вĕлерес пек.

**Мархи.** Ну, кала-ха тепре халь мĕн каланине! Йӑлт кала, лайӑхрах илтсе юлам!

Çемен чĕнмест, ни чĕрĕ, ни вилĕ выртать.

**Мархи.** Кала, теççĕ сана. Кам вӑл мӑйракаллӑ шуйттан? Кам вĕреçĕлен? Кама çапса пӑрахса вакка ямалла? Кала! Ма каламастӑн? Ай чĕлхўне çăтса ятӑн-и? Кала теççĕ часрах, атту-тӑк халех пуçна çапса çуратӑп! *(Икĕ чышкипе пĕр харӑс юнать.)* Эп сана-и... эп сана... ы-ых!

**Истрат** *(шиклĕн)*. С...салам, Мархи аппа, сирĕн пата килсе курас терĕм-ха. *(Ал пама тӑрать.)*

М а р х и *(ун аллине аяккалла çапса ярать).* Эс тăхта, пирĕн санпа сăмах-юмах кайран пулĕ, халь ман çак усала тăн кĕртес пулать-ха, ун чĕлхине касса ярас пулать, атту ытлашши вăрăмланса кайнă! *(Çемене.)* Ну, нумай кĕттерсе выртатăн-и эсĕ? Кала мĕн ыйтнине! Кам кунта мăйракаллă шуйттан, кам вĕреçĕлен, кама вакка ямалла? Э?

Ç е м е н. К... к... каçар, карчăк. Эпир... Истратпа иксĕмĕр... шӳтлесе çеç к...калаçрăмăр...

М а р х и. Ха, епле юрлать вăл! Çынна вĕлерсе вакка ярасси çинчен кам шӳтлесе калаçать?! Эппин, эс чăнах та мана вĕлерес шутпа пурăнатăн-ха. Мана вĕлерес те манăн пĕтĕм кил-çурта, пĕтĕм пурлăха çавăрса илес, тетĕн. Çирĕм пиллĕкрисем çинчен ахаль мар аса илетĕн, ватсупнă, санăн хăвăн та çав ĕмĕт пур эппин. Çамрăккисемпе, чăмăрккисемпе, чĕпĕтсенех тиха пек кĕçенекеннисемпе йăпанса пурăнас килсе кайрĕ-и? Ман пӳртре! Ман пружинлă кравать çинче! Ман тӳшек çинче! Çапла-и?

Ç е м е н. Ç... çук, ун пек шухăш ĕмĕрне те пулман...

М а р х и. Пулман пулмасăр! Эп сана... кăтартăп çирĕм пилĕк çулхисене! Хамран малтан сана хăвна пытаратăп-ха, сан пумилккунта тапăртатса ташлатăп! Эп сана-и... *(Çапă илсе çапма тăрать, анчах Истрат çаппине туртса илет.)*

И с т р а т. Юрĕ-çке, Мархи аппа, каçар пĕреллĕхе. Ытлашши нимех те каламарĕ-çке вăл.

М а р х и. Эс пĕлместĕн-ха çав, ăна кашни кун тăна кĕртсе тăрас пулать, унсăрăн вăл йалт ухмаха тухса кайма пултарать. Çынни çавăн йышши!

Ç е м е н *(эхлеткелесе тăрать).* К...каçар ĕнтĕ, карчăк, хăна умĕнче те пулин намăс ан кăтарт. Кайран, пĕччен чух хĕне. *(Тумтирне тасаткалать.)* Урăх сан

çинчен нихçан та пĕр сăмах та каламастăп. Туршăн та, хĕвелшĕн те. *(Сăхсăхса илет.)* Тепре çăвар уçсанах ман чĕлхе хăрса лартăр...

Мархи. Асту çав! Кам хӳттинче пурăннине, кам çăкрине çинине ан ман! *(Сылтăмалла пăхса илет.)* Ав, вишни çине каллех кайăксем ларса тулнă, пĕр çырла та хăвармаççĕ, кайса хӳтер!

Çемен. Юрать, карчăк, юрать... *(Çапă йăтса чупать.)* Кша, кша, мурсем!

Мархи *(Истрата ал парса)*. Ну, халь ал пама та юрать. Мĕн çăмăлпа килтĕн, ачам?

Истрат. Ялти лайăх çынсен сăнĕсене ӳкерес пулать-ха, çавăнпа килтĕм. Юлашки экзамен панă чух кăтартма пысăк картин тумалла. Акă, пуçларăм ĕнтĕ... *(Хут листине кăтартать.)*

Мархи *(пăхать-пăхать те пĕççине шарт! çапать)*. Айтурух! Пĕтрĕ пуç! Эс вара çак Шакăльчаксемпе Кăххăм Еххĕмĕсене ыр çын тесе шутлатăн-и?! Ара, вĕсем ниме тăман çынсем-иç! Пурте тата мана кураймаççĕ, кашни пухурах мана çиеççĕ, колхозра ĕçлемест, пасартан пасара чупать, сăмаконщĕк, спекулянттă, теççĕ. Хăйсен арăмĕсем çич-сакăршар ача туса тултарнипе килтен ниçта та тухаймаççĕ те, çавăн пирки эпĕ ирĕклĕ çӳренĕшĕн кураймаççĕ. Çук-çук, ачам, эс ку картинсене никама та ан кăтарт. Намăс анчах куратăн вĕсемпе.

Истрат. Мĕншĕн намăс куратăп пуль?

Мархи. Ниме тăман халăх. Вырăсла каласан — шваль. Ĕнен эс мана, тĕп-тĕрĕссипе калатăп.

Истрат *(этюдник çине кăтартса)*. Ак ку мĕнле тата?

Мархи *(аллисене хире-хирĕç çапса)*. Тур çырлах! Ман Çемене те ӳкерсе хунă! Ну, тĕнче...

Хыçалтан çапă çĕкленĕ Çемен пырса тухать.

**М а р х и.** Ку ухмах мĕн тума кирлĕ пулчĕ тата сана? Тупнă та çав сăн ӳкермелли артист! Мĕн майĕ пур вăл?

**И с т р а т.** Мана килĕшет.

**М а р х и.** Ара, мĕн килĕшмелли пур ун çумĕнче?!

**И с т р а т.** Пăх-ха, сухалĕ мĕнле унăн... Пинте пĕрре пулать ун пекки!

Ç е м е н сухалне шăлкаласа илет.

**М а р х и.** Сухал, сухал! Вăл енне кайсан, качака та сухаллă. Тытса кил те пĕр качака таки, юпа çумне кăкарса ларт та ӳкер те ӳкер! Ман Çеменрен пĕртте кая пулмасть.

**Ç е м е н** *(тӳсеймесĕр).* Ну, карчăк, каçар та эс мана, анчах куна эсĕ ытлашширех каласа хутăн. Так не пойдет.

**М а р х и.** Мĕн, мĕн «не пойдет»? Тĕрĕс каламарăм-и мĕн? Качака такинчен хăш енĕпе уйрăм эсĕ?

**Ç е м е н.** Çапах та, вунпĕр çул ĕлĕкрех эсĕ мана киле кĕртрĕн-çке-ха. Качака такине мар. Эп лайăхрах пулнă, сначчăт.

**М а р х и** *(çапма хăмсарать).* Ан лăркаса тăр кунта! Кай, нӳхрепрен сăра ăсса тух. Çынна хăна тумалла пуль? Часрах!

**И с т р а т.** Ан чăрман, Мархи аппа, мана ним те кирлĕ мар...

**М а р х и.** Сана кирлĕ мар пулсан, мана хама кирлĕ. Пĕтĕм ăшчик хыпса тухать...

**Ç е м е н.** Халех, карчăк. *(Каять.)*

**М а р х и** *(тенкел çине ларать).* У-ух!.. Веç ăшша пиçрĕм паян, тарламан вырăн та юлмарĕ. Çичĕ çухрăм çуран танкка-ха эсĕ çакăн пек шăрăхра! Кутамкки йы-ывăр тата, икĕ пăт та пулĕ...

Истрат. Машинпа килмерён-им? Çул çинче машинсем туллиех-иç? Автобусёсем те, ахаллисем те. Эпё сирён ял пуçёнчех анса юлтăм, пит ансат пулчĕ.

Мархи. Эп те малтан машинпах килсеттём, анчах Сёнтёр çул юппине çитсен, эсрелё шоферё машинне чарса тăратрĕ те: анса ут, эп Тӳрикассинчи пуçана патне менелнике каятăп, ырансăр таврăнмастăп, терĕ. Кăшт çывăхарах килсе яма тем пекех ӳкётлерём, анчах хальхи çамрăксем ватăсене хисеплеççĕ-им? Хăлхана та чикмерĕ, асат çапса хуçманскер! Малтан миххе туртса антарчĕ, унтан — мана хама. Çуран утни саншăн усăллă пулать, атту эсĕ ытлашши мăнтăр, терĕ те — кĕрлеттерчĕ кăна! Танккарăм вара, мĕн тăвас тетĕн. Çул çинче кайран çирĕм машин та вĕçсе иртрĕ пуль ман тĕлпе, кашнинех ал тăратрăм, анчах усси пулмарĕ — çĕмренсем пек иртсе каяççĕ! Чăнах та, пĕри чарăнчĕ, шоферĕ ыйтса пĕлме тытăнчĕ—ăçтисем, ăçта кайнă, мĕн тума... Ку ĕнтĕ лартатех пуль тенĕччĕ, анчах пулмарĕ вĕт! «Спекулянтсене илсе çӳреместĕп», терĕ те хама тусанпа хупласа çеç хăварчĕ. Чут чыхăнса вилеттĕм!

Истрат *(пуçне пăркалать).* Ай-ай-ай... Пăх-ха, мĕн хăтланаççĕ! Айăпламалла вĕсене куншăн. Айăпламалла...

Мархи. Ара çав, ара, эпĕ те çавнах калатăп! Шоферсем вĕсем пурте хулиганcем вĕт, пурте пандитсем. Хам патша пулас пулсан, эп вĕсене пурне те хупса хумалла!

Çемен кăкшăмпа сăра, авăрлă йывăç курка илсе пырать, Мархи вĕсене ун аллинчен кăрт-карт! туртса илет, куркине тултарать те никамран малтан хăй лăнкăртаттарать.

Мархи. Ухх! Мунча чулĕ çине сив шыв сапнă пекех пулчĕ, чашкăрсах анса кайрĕ. *(Хырăмне шăл-*

*калать.)* Тепре ĕçес пуль, чĕре патне пытăр. *(Татах ярса ĕçет.)* Ну, сăрине тума пĕлетĕп çав хам! Нимле шикули те çитейместь ман сăрана. Эх, тур калашле, вичçĕ пултăр! *(Тултарать.)*

Ç е м е н. Ара, Истрата парсам тата.

М а р х и. Параççĕ. Эс ан хутшăнса тăр. Сăрине эсĕ ху нӳхрепрех ĕçрĕн пуль-ха. Пĕлетĕп эс манран вăрттăн ĕçсе-çисе пураннине. Анчах халь эсĕ тавай, пуртуна тыт та тухса ут ферма тунă çĕре! Ĕçле, тĕттĕм пуличчен те ан таврăн, паянхи норма пуç тӳпи таран пултăр. Атту каллех радиопа каласа мăшкăллаççĕ кăна ак санран: лотăр, симулянцă, темтепĕр! (*Ĕçет.*) Ух!! Хырăм параппан пекех пулса кайрĕ.

Ç е м е н. Эп паян апат та çимен-ха, ман хырăм выçă...

М а р х и. А мĕн туса лартăн кун каça? Ма çимерĕн?

Ç е м е н. Чăлха çыхрăм.

М а р х и. Çыхнă пулин. Чăлха çыхни çăкăр чăмлама кансĕрлемест пуль? Ну, ан лĕпĕртетсе тăр, кай, кай! Пĕр чĕлĕ çăкăр касса тăвар сап та—çитет сана. Ав, кăштах симĕс сухан чĕлсе илме пултаратăн, шывĕ унта ферма патĕнчех нумай.

Çемен чĕнмест, ерипен тухса каять.

И с т р а т. Ытла та хытă тыткалатăн-çке эсĕ ăна, Мархи аппа.

М а р х и. Унпа урăхла май килмест. Çынни çавăн йышши.

И с т р а т. Çапах та шалккă-çке ăна. Ват çын вĕт. Ĕçлессе нумай ĕçлет.

М а р х и. Шалккă, шалккă! Мана мĕншĕн никам та хĕрхенмест? Леш эсрел шоферĕ çичĕ çухрăм çуран уттарчĕ. Хулара тата штраф тӳлеттерчĕç...

**Истрат.** Мĕншĕн?

**Мархи.** Автобус çинче билет илменшĕн, терĕç.

**Истрат.** Ну, куншăн эсĕ ху айăплă, Мархи аппа. Саккуна пăснă. Кашни япалан хăйĕн йĕрки пур. Ăна пăхăнас пулать.

**Мархи.** Кам пĕлсе çитертĕр вĕсен саккунĕсене! *(Тăрук аса илсе.)* Ах, турă, эп сана халь те сăра ĕçтермерĕм-и çав? Эй, тĕнче! Пĕр тăн та юлмарĕ паян. Ĕçсе пар-ха, ĕçсе пар, ачам... *(Сăра тултарать.)* Сăри шутсăр лайăх, тӳрех юн тымарĕсем тăрăх каять...

Истрат ĕçет.

**Истрат.** Тавтапуç, Мархи аппа. Сăри чăнах та аван иккен.

**Мархи** *(хăпартланса).* Маçтăр мар-и ара эпĕ! Пĕтĕм ялĕпе те ман пек сăра тума пĕлекен çук теççĕ!

**Истрат.** Лешне тата?

**Мархи.** Мĕне?

**Истрат** Хаяртараххине.

**Мархи.** Э-э, çук, ун пеккипе çыхланман... *(Кулать.)* Мĕн, кăмăлу пур-им кăштах сыпса пăхма?

**Истрат.** Тур ан хуштăрах, Мархи аппа.

**Мархи.** Ма вара? Очищĕннинчен пĕртте кая мар...

**Истрат.** Çук, çук, ун çинчен калаçмăпăр. Эп сирĕн пата аншарли ĕçме мар, ĕçлеме килнĕ.

**Мархи.** Хăвăн ирĕк. Мана мĕн? Сĕнсе пултăр.

**Истрат.** Акă мĕн, Мархи аппа... Ерçетĕн пулсан, çакăнтарах лар-ха эсĕ, манăн сана ӳкерсе илес шутăм пур.

**Мархи** *(хавасланса).* Чăнах та-çке! Ӳкер-ха, Истрат, ӳкер, ĕмĕр асăнмалăх пултăр пĕрре. Атту эсĕ унта такам шуйттанне те ӳкерсе тултарнă, пĕр мана

çеç ӳкермен. Намăс пулать вĕт: çичĕ юта ӳкеретĕн, тăван аппуна манса хăваратăн... *(Юсанса ларать.)*

Истрат *(каярах чакса унтан та кунтан пăхкалать.)* Так... кăштах кунталла сик-ха... Пуçна ку еннелле пăр, хĕвел çути ытларах ӳктĕр. Та-ак... Илемлĕрех пулма эпир сана панулмисем тыттарăпăр. *(Улмуççирен виçĕ пысăк панулми татса илет.)*

Мархи *(сиксе тăрать).* Уй, ачам, ача-ам, ма йывăç çинчен тататăн?! Çĕре ӳкнисене илсен те юратчĕ! Йывăç çинчисем çитĕнеççĕ вĕт-ха вĕсем...

Истрат *(ӳкерме пуçласа).* Çĕре ӳкнисем хуртлă. Ниушлĕ вара санăн хуртсемпе пĕрле ӳкерĕнес килет?

Мархи *(ларать.)* Юрĕ-çке эппин... Ытлах усал мар-и эпĕ? Ӳкерме пулать-и?

Истрат. Аптрамасть, ӳкеретпĕр. Анчах та, лайăх тухтăр тесен, тăп ларас пулать. Вăхăта шеллемесĕр, тӳсĕмлĕ...

Мархи *(аллине сулать).* Э, ларма пулĕ-ха ăна, вăл тыр вырассиех мар.

Истрат. Эс ав çавăнталла, мăкăнь йăранĕ еннелле пăх. Вара пĕрре те ан хускал.

Мархи. Юрать, юрать. Хускалмăп. Сак çумне пăталанă пекех ларăп. Мана суд тунă чух та çавăн пекех лартрĕç, пĕлетĕп.

Пĕр хушă чĕнмеççĕ. Истрат, темле хаваслă кĕвĕ шăхăркаласа, питĕ тимлĕ ĕçлет. Кăшт тăрсан Мархи куçĕсем хупăна пуçлаççĕ, вăл ик-виçĕ хут та анасласа илет.

Истрат. Асту, Мархи аппа, çывăрса ан кай.

Мархи *(анасласа, çăварне аллипе хупласа).* Çу-ук, эп кăнтăрла нихçан та çывăрмастăп. Ăна кахалсем çеç кăнтăр кунĕнче харлаттараççĕ. Анчах паян çанталăкĕ питĕ пăчă-ха. Çумăр пулать пуль.

**И с т р а т.** Эпир ёçлесе пётеричченех пулмĕ-ха тен. Кайран хуть те витререн ятăр...

Сасартăк кушак сасси илтĕнет: «Мяу! Мя-а-у!» Мархи аллинчи панулмисене çĕре ўкерсе сиксе тăрать, çапă ярса илет, сылтăмалла темиçе утăм тăвать. Истрат ун çине тĕлĕнсе пăхать.

**М а р х и** *(çухăрать).* Прис, тухатмăш пуçĕ! При-ис! Çакăнта килсе тухмасăр урăх вырăн пулмарĕ-и сан валли?!

Кушак сасси: «Мя-а-у!»

**И с т р а т.** Мархи аппа, кушак сан сад пахчуна нимĕнле сиен те кўмест пуль-çке? Ма ун пекех хўтеретĕн ăна?

**М а р х и.** Кўрет çав, питĕ сиен кўрет, эс пĕлместĕн. Киле ют кушак пырса кĕрсен — ыррине ан кĕт, мĕнле те пулин хурлăх пулатех! Паян та акă — те Çемен пиччу аллине касать-ха, кайран вара ĕçлемесĕр ухмаха супса пурăнать, те хам варсăр пулса ларатăп-и! Тьху, шуйттан! *(Çапăпа суллать.)*

**И с т р а т.** Ара, вăл сан çулу урлă каçса кайман-иç!

**М а р х и.** Пулин! Эсир, çамрăксем, нимĕн те пĕлместĕр-ха, анчах эпир пурнăçра куркаланă, чухлатпăр.

**И с т р а т.** Ну, лар ĕнтĕ вырнаçса. Кушакĕ хўрине тăратсах тарчĕ! *(Кулать.)*

Мархи ларать, тутисене пăркаласа илет.

**М а р х и.** Хуса çитсе çапса пăрахмаллаччĕ...

**И с т р а т.** Кăмăллăрах пулма тăрăш-ха, Мархи аппа. Атту-тăк картин çинче вĕреçĕлен тĕслĕ пулатăн.

**М а р х и.** Çук, çук, вĕреçĕлен пек ан ту, килĕшмес-

тĕп ун пек. Лăплантăм ĕнтĕ, халь анкĕл пекех тухма пултаратăп. *(Кăшт ларсан.)* Йăлтах çав эсремет кушак аçи айăплă. Эккей, урăх вырăн тупайман вăл. Тепре килсенех наркăмăш паратăп-ха, чыхăнтăр.

Чĕнмеççĕ. Истрат ĕçлет, Мархи тата анаслама пуçлать, анчах çывăхрах автан çунат çапса питĕ янравлăн авăтни илтĕнет те, унăн ыйхи вĕçсе каять, вăл сиксе тăрса чупать.

**Истрат.** Мархи аппа! Аçта каятăн?

**Мархи.** Кша, кша, вилменскерсем! Эп сире! Кша, теççĕ! У-у!

Çапăпа çапни, хăранă чăхсем кăтиклени илтĕнет. Кăшт тăрсан Мархи хашкаса таврăнать.

**Истрат.** Мĕн пулчĕ унта, Мархи аппа?

**Мархи.** Илтмерĕн-им, кӳршĕ чăххисене хуса ятăм. Пĕтĕм купăста-хăяра çисе яраççĕ! Хăйсенне тивмеççĕ, каяннисем, ятарласа çын пахчине кĕреççĕ. Кам пĕлет, тен, хуçисем юри кунталла килсе яраççĕ-и? Тем те пулĕ! Паянах кайса пăскăртатăп-ха!

**Истрат.** Юрĕ ĕнтĕ, лăпланса лар. Унсăр ĕç малалла каймасть пирĕн. Паçăрах каларăм-çке, портрет тунă чух тăп лармалла, терĕм!

**Мархи.** Çапла, çапла, каларăн... *(Ларать, анчах пĕр минут та иртмест пулĕ — каллех çапă çĕклесе тепĕр еннелле чупать.)* Кша, эсрелсем! Халь эсир килтĕр-и тата манран мăшкăллама? Кша-а! Ма хурчкасем тытса пĕтермеççĕ-ши сире?! Кăçал пĕр çырла та хăвармаççĕ пуль ĕнтĕ! *(Вĕсен кайăксемпе вăрахчен çапăçнă хыççăн таврăнса сак çине ларать. Хăй питĕ ывăннă.)* Ах, турă, турă амăшĕ! Пурте мана хирĕç, пурте мана сиен тăвасшăн! Мĕнле чарас ку явăл кайăкĕсене? Çисех яраççĕ çырлана, сутма мар — çимелĕх

те юлмасть. Хуть те кунӗле пӑшал тытса лар! Эх-ха-хай!

И с т р а т. Шутлатӑп та, Мархи аппа, санӑн чӑнах пӑшал туянмалла. Ун чух вара чупма та кирлӗ мар, сак ҫинче ларнӑ ҫӗртенех танлаттаратӑн. Пӗр харӑсах ик усӑ пулать: ҫырла та упранса юлать, каҫхине кайӑк-кӗшӗк яшки те пӗҫерсе ҫиме пулать. Пите лайӑх вӗт?

М а р х и. Пӑшалӗ ҫук-ҫке-ха! Анчах пурӑна киле туянмаллах пуль. Кӗр енне, панулмисем пулса ҫитсен, сада хулигансем киле-киле тапӑнаҫҫӗ акӑ...

И с т р а т. Апла эсӗ ҫынна та персе вӗлерӗн? Тӗрмене кайса ларса кирпӗч шутламалла пулать вӗт?

М а р х и. Уй, ма вӗлерес? Хӑратма ҫеҫ кирлӗ...

И с т р а т. Анчах та, тен, санӑн пысӑкрах йытӑ, леш кашкӑр пеккине илсе ямалла?

М а р х и. Йыттине ӑна ҫитермелле-ҫке? Пустуй тӑкак пулать.

И с т р а т *(ӗҫлеме чарӑнса).* Ну, Мархи аппа, эсӗ чӑнах та пигӗ пуясшӑн пулмалла...

М а р х и. Ара, ҫӗр ҫинче кам пуясшӑн мар пуль? Пурте пуясшӑн, пурте! Пурте сӑх.

И с т р а т. Эс те-и?

М а р х и. Ҫынсенчен ма юлас?

Сасартӑк аслати кӗрлесе илет.

М а р х и. Ай тур-тур! Ҫумӑр килет мар-и? Ха! Ӳкелеме те пуҫларӗ. Каям-ха, эп картишӗнче кӗпесем ҫуса типме ҫакнӑччӗ... Тепӗр хут йӗпенме парас марччӗ! *(Чупать.)*

Истрат хӑйӗн пир ҫинчи ӳкерчӗкне унтан та кунтан та пӑхкалать, каллӗ-маллӗ уткалать, кӑмӑлӗ тулнипе «Туй, туй, туй тесе» кӗввине шӑхӑрать, аллисене сӑтӑркалать.

Истрат. Тĕп-тĕрĕссипе каласан, пирĕн Мархи аппа çав тери вăйлă типаж ĕнтĕ. Унăн куçĕсем, малалла мăкăрăлнă тути, калаçнă чух сиккелесе тăракан сăмса çунаттисем, çамки çинчи картлашкисем... Уй, вăйлă! Юри шырасан та тупас çук ун пеккине! Характерĕ мĕнлерех тата! Тимĕр! Хурçă! Епле те пулсан, манăн çав характера кăтартса парасчĕ-ха. *(Çӳлелле пăхать.)* Э, çумăрĕ чăнласах çума пуçларĕ-çке! Паян урăх ĕçлесси пулмасть эппин. Пуçтарас...

Истрат этюдникне илсе алăк патнелле каять. Çав вăхăтра тепĕр енчен Мархи васкаса кĕрет, ун аллисенче — улт-çичĕ кирпĕч.

Мархи. Алăкне уçса тытса тăр-ха, Истрат, эп кĕрсе каям...

Истрат. Ăçтан тупрăн ку кирпĕчсене?

Мархи. Шыракан тупать, ачам! *(Шалалла кĕрсе каять, анчах пĕр-ик самантранах каялла тухса чупса каять.)*

Истрат. Çумăр витĕрех ăçта каятăн тата?

Мархи *(аллине сулать)*. Чим-ха эсĕ, ан кансĕрле! Васкас пулать манăн! *(Тухса каять.)*

Истрат. Пулать те çав лара-тăра пĕлмен çын! *(Çумăртан алăк çумне йăпшăнать.)*

Çемен кĕрет.

Çемен. Çумăр çума тапратрĕ те, бригадир вăйпах хăваласа ячĕ. Кун пек чух ĕçлемелле мар, килте сăра ĕçсе лармалла, тет. *(Шăппăн.)* Мархи аппу ăçта?

Истрат. Пĕлместĕп, таçта чупрĕ. Пĕр çĕклем кирпĕч йатса килсе хучĕ те татах тухса вăркăнчĕ.

Çемен *(хăраса)*. Каллех кирпĕч йăтать-и?! Эх, тăранма пĕлменскер! Мĕн тăвать-ши кирпĕчĕпе? Ле-

кет те-ха пĕрре, пит лайăх лекет... Э, лектĕрччĕ пĕреххут!

Истрат. Мĕн, такамăнне вăрлать-им?

Çемен. Вăрлать çав! Колхозăн кирпĕч сарайĕнчен йăтать. Кăнтăрла хурал çук унта. Çумăр вăхăтĕнче çын та çӳремест, çав хушăра йăтать те вăл.

Истрат. Ну, куншăн чăнах та лектермелле!

Мархи каллех кирпĕч çĕклесе талт-талт-талт чупса тухать те сцена варрине çитсен тирĕнсе анать.

Мархи *(аран тăрать, уксахлать).* И-и, шуйттаншуйттан-ан! Пур ĕçе те манăн хамăнах тăвас пулать! Хĕрарăм ĕçĕ-и çак?! *(Семене.)* Мĕн пăхса тăратăн, тăнран тухнă така пек? Ма халех сĕтĕрĕнсе килтĕн? Сан нормуна кам тултарать унта?

Çемен. Бригадир хуса ячĕ, эп айăплă мар.

Мархи. Атя эппин манпа пĕрле, пĕр пилĕкшер кирпĕч те пулин илсе килер, никам та çук унта.

Çемен. Çук, тĕрмене ларас килмест манăн.

Мархи. Мĕске-ер? Мĕнле тĕрме çинчен калаçатăн эсĕ, тăрпалтай?!

Çемен. Кирпĕчрен купаласа туни çинчен. Вăрăсене илсе кайса хупаканни çинчен.

Мархи. Эс мĕн вăрларăн?

Çемен. Акă халь эсĕ вăрра илсе каясшăн-иç мана...

Мархи. Кил валли темиçе кирпĕч илсе килни— вăрлани пулать-и вара вăл? Ухмах! Ут ман хыççăн!

Çемен. Утмастăп.

Мархи. Э-э, кутăнлашса тăрать-ха тата, этем усалли! *(Çемене хулĕнчен тытса туртса каять.)*

Çемен *(Истрата, кăшкăрса).* Истрат, ачам, çвиделĕ пулатăн: Мархи мана ирĕксĕрлесех вăрра илсе каять! Хам ирĕкпе каймастăп эпĕ, куран!

М а р х и *(Çемене тапать).* Ут тата часрах, этем усалли!

Истрат вĕсем çине кулса пăхса юлать. Сасартăк сылтăмра ача сасси илтĕнет: «Анне, эп ку шыв урлă каçаймастăп! Ӳкетĕп эпĕ, ура шуçать!..» Амăшĕн сасси: «Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ, манăн алăсем пушă мар-çке, йăтса каçараймастăп эп сана! Хăвах каç епле те пулсан!» Çакна илтсе тăнă Истрат сасăсем еннелле чупса каять.

И с т р а т с а с с и. Чим-ха, ачам, тăхта, эп сана халех каçă туса паратăп! Кĕпер пулать, тăхта! *(Чупса кĕрет те Мархи пăрахса хăварнă кирпĕчсенчен виççĕшне илсе каять.)* Акă, кĕпер пулчĕ те сан валли. Ут ĕнтĕ халь, ан хăра, шанчăклă.

Х ĕ р а р ă м с а с с и. Тавтапуç сана, ырă çын!

А ч а с а с с и. Пыр пирĕн пата, эп сана куншăн çырла çитерсе ярăп. Пирĕн çырла нумай!

И с т р а т с а с с и. Юрĕ, юрĕ, ерçсенех пыратăп. Халь чипер кайăр.

Истрат хавассăн утса каялла кĕрет. Унăн кăмăлĕ тулнă. Шăхăркаласа пĕлĕтелле пăхса илет.

И с т р а т. Çумăрĕ чарăнать те пулмалла. Чипер уяртсан, каçчен пăртак ĕçлеме те пулатчĕ. Ӳкерсе пĕтересчĕ Мархи аппана, ун пек натурщица кашни кунах тупăймастăн...

Мархипе Çемен кирпĕчсем çĕклесе кĕреççĕ. Иккĕшĕ те хашкаççĕ, питĕ васканă курăнать. Çемен кирпĕчсене кĕмсĕрт! пăрахать, хăй тарăхса çитнĕ, Мархи вара е-ерипен, çăмарта хунă пек хурать.

М а р х и. Акă ĕнтĕ, пулчĕ те пирĕн! Çирĕм кирпĕч хушăнчĕ паян. Пилĕкшер пус пулсан та — пĕр тенкĕ... *(Сасартăк, тĕлĕнсе.)* Ай-уй, чим-ха, ара, эп паçăр ултă кирпĕч йăтса килтĕм марччĕ-и? Ма-ха сахал кунта?

Ма виççĕ анчах? Ак япала... Истрат, ачам, эс таçта шала илсе кĕртсе хумарăн пуль?

Истрат *(уçă кăмăлпа).* Эпĕ, Мархи аппа, кунтан виçĕ кирпĕч илсе урама кăларса хутăм, ав çавăнта...

Мархи *(тĕлĕнсе хытсах каять).* У-ра-ма?! Мĕн шутпа? Мĕн тума-а? Ан ухмахлан-ха...

Истрат. Çынсене иртсе çӳреме каçă туса патăм, хулари тротуар пекки...

Мархи. Кай-кай-кай... Эс ухмаха ертĕн пуль! Мĕн пăртуарĕ пултăр ялта? Çитменнине, эпир вăл енпе нихçан та çӳреместпĕр-иç? Мĕне кирлĕ пире унти пăртуар?!

Истрат. Çынсем çӳреççĕ, çынсене кирлĕ.

Мархи *(аллисемпе пилĕкĕнчен тытса, тарăхса).* Эппин, çынсене ыр тăвас терĕн пулать! А-ав мĕнле... ачаш кăмăллă иккен эсĕ!

Истрат. Ун пек каласан та юрать.

Мархи *(ун çинеллех пырать).* Анчах та кала-ха, тăванăм, сана хăвна кам та пулин, хăçан та пулин, мĕнпе те пулин ыр тăвакан пулнă-и? Пулнă-и?

Истрат. Çынсем мана нумай ыр тунă. Пулăшнă.

Мархи. Суя сăмах ку! Пулăшам пекки тусан та, ячĕшĕн çеç пулать вăл. Ячĕшĕн, сан куçу умĕнче хитрен курăнса тăма. Анчах таса чун-чĕререн никам та çынна ыр тумасть. Ĕлĕкех ваттисем: «Çынна ыр тăвиччен — усал ту!» тенĕ. Ахальтен каламан çавна.

Истрат. Вăл — ĕлĕк. Ĕлĕк пурнăçĕ урăхла пулнă. Ĕлĕк каланă сăмахсем вĕсем тахçанах пăрахăçа тухнă, Мархи аппа.

Мархи. Тухман! Халь те тĕрĕс! Ан та тавлаш манпа! Эс айван-ха! Симĕс, теççĕ сан пеккисене, акă мĕн!

Çемен *(хăюсăр).* Мархи, тин кăна килнĕ хăнапа çав виç кирпĕчшĕнех ан çĕтĕл ĕнтĕ... Эккей, тупнă...

М а р х и. Эс ан хутшăн, сан ĕç çук кунта! Эп ним те çĕтĕлместĕп, çамрăк çынна ăс паратăп çеç. Килтен халăх çине хуçăк пуртă аври те, çурăк куршак та илсе тухма юрамасть — уншăн сире спаççипă каламаççĕ.

И с т р а т *(тÿсеймесĕр).* Анчах халăхăнне килелле туртма юрать-и?

М а р х и. Мĕн туртатăн унăнне? Сан халăхун мĕн пур?

И с т р а т. Сăмахран каласан, эс халь кăна вăрласа килнĕ кирпĕч те халăхăн...

М а р х и. Ха, тупса каларĕ те вĕт! Мĕн вăл кирпĕч? Тăм кăна, тăм! Çырмара вăл тăм мĕльюн пăт та пулĕ!

Ç е м е н. Çапах та тăмĕнчен кирпĕч тума пит нумай ĕçлемелле-çке, хăй тĕллĕн пулмасть вăл...

М а р х и *(ун çинелле сулса ярса).* Эс каллех çăвар уçатăн-и? Писмен тукмакки çинчен мантăн та-и? Сĕлекÿне юхтарса тăриччен, халех çав урама тухса пăрахнă кирпĕчсене каялла йăтса кĕрт!

Ç е м е н. Мĕн тума? Лапăртаннă халь вĕсем.

М а р х и. Çуса тасат та аслăк айĕнчи купа çине хур! Кай!

Ç е м е н *(кулать).* Ху кай! Çав виçĕ кирпĕчшĕн çынсем умĕнче намăс курмастăпах эпĕ.

И с т р а т. Тĕрĕс, Çемен пичче. Ан кай.

М а р х и. Э-э, эсир иксĕр те мана хирĕç-и? Ну, юрĕ, кăтартăп эп сире! *(Чупса тухса каять.)*

И с т р а т *(Çемене).* Маттур, Çемен пичче. Пăрах эсĕ ăна тек пăхăнса пурăнма. Ытла арçури пек пулса кайнă. Чарас пулать. Эп те ăна асăнмалăх парне парса хăварам-ха. Акă, кур, Çемен пичче.

Этюдникне халăх курăнмалла çавăрса лартать. Хут çинче — Мархи аппан пулса çитме пуçланă портречĕ. Аллисенче — хитре панулмисем.

**Истрат.** Тӗрӗс мар ку ӳкерчӗк. Ăна тӳрлетес пулать. Ак çапла. *(Кисть илсе сăрлама тытăнать.)* Панулмипе ытлашши хитре вăл. Эпир ăна кирпӗч тыттарăпăр. Ак çапла. Ыталаса лартăр хăйӗн виçӗ кирпӗчне! *(Мархи чӗрçи çине виçӗ пысăк кирпӗч ӳкерсе хурать.)* Халь мӗнле пек, Çемен пичче? Юрать-и, майӗ пур-и?

**Çемен** *(чыхăнса кайса кулать).* Шутсăр лайăх... хи-хи-хи... Каснă-лартнă... хи-хи-хи... Мăйракасем туса хурсан, тата лайăхрах пулатчӗ... хи-хи-хи...

**Истрат.** Мӗнех вара! Ăна тума йывăрах мар пирӗншӗн! *(Мăйракасем ӳкерсе хурать.)* Пулчӗ вӗт?

**Çемен.** Пулчӗ! Хи-хи-хи...

**Истрат.** Халь ӗнтӗ ӗç пӗтрӗ тесе шутлăпăр. *(Ӳкерчӗке этюдникрен кăларса алăк çумне çакать, пӗр хушă кулкаласа пăхса тăрать, унтан этюдникне хăвăрт кăна пуçтарса хулпуççинчен çакса ярать.)* Ну, Çемен пичче, эп кайрăм. Сывă пул! *(Аллине тăсать.)*

**Çемен.** Ай-уй! Паянах каятăн-и вара? Эсӗ паçăр кăштах пурăнатăп терӗн-çке?

**Истрат.** Çук, Çемен пичче, каяс пулать. Кунта питӗ пăчă мана. Сывлăш çитмест. Тата хам та кирпӗч вăрлама тытăнасран хăратăп. Сывă пул! *(Каять.)*

Мархи хайхи çуса тасатнă виçӗ кирпӗче ача йатнă пекех ачашшăн йӑтса тухать. Ăна курсанах Çемен тӗмӗ хыçне пытанать. Мархи алăк çинчи портрет патне пырать, юпа пек хытса тăрать. Ун аллинчи кирпӗчсем пӗрин хыççăн тепри туха-туха ӳкеççӗ.

**Мархи** *(кăшкăрать).* Истра-ат! Çакăн пек мăшкăллама ӳкертӗн-и эс мана, шуйттан ачи?! Халех çурса тăкатăп!

**Çемен** *(тӗмӗ хыçӗнчен тухса).* Мӗн вара, кăмăла каймасть-им? Сан пекех тухнă-çке? Каснă-лартнă...

М а р х и. Хуп ҫӑварна! Ăҫта Истрат?

Ҫ е м е н. Ҫук Истрат. Кайрĕ. Сана салам калама хушса хӑварчĕ. Ку патретне рамка ӑшне лартса турӑш вырӑнне ҫакма хушрĕ. *(Сӑхсӑхнӑ пек тӑвать.)*

М а р х и. Эп сана! Вĕлеретĕп! *(Пĕр кирпĕчне илсе Ҫемене перет, анчах лектерейместь.)*

Ҫ е м ен *(тепĕр енчен тухса «сӑмса» туса кӑтартать)*. Ак сана! Ак сана! Хӑрамастӑп! Ҫитет! Хӑ-ра-мас-тӑп!..

Мархи ним тума пĕлмест...

# Шанчăклă этем

Пĕр пайлă мыскара



## МЫСКАРА КӐТАРТАКАНСЕМ:

Марине, колхоз председателӗ, 25—27 ҫулсенчи илемлӗ те ҫивӗч хӗрарӑм.

ТеренЬ, ҫӳллӗ, упа пек тӗреклӗ йӗкӗт.

Сахрун, колхоз бухгалтерӗ, 50-ран иртнӗ, сарӑ-хӗрлӗ сухаллӑ ҫын, тимӗр кӑшӑллӑ куҫлӑхпа ҫӳрет, калаҫнӑ чух ӑна яланах хывать.

Ахваниҫ мучи, хаваслӑ, шӳт тума юрататакан пӗчӗкрех старик.

Микка, шофер, вӗҫкӗнрех, аслисене пӑхӑнма юратманскер.

Кулюк, ҫамрӑк хӗр, правленире техничкӑра ӗҫлет.

Колхоз правленийě, пысăках мар пÿлĕм. Таса, тирпейлĕ. Стенасем çинче — портретсем, плакатсем. Чÿречесем çинче хитре чечексем, кĕтесре радиоприемник.

Пĕр сĕтел хушшинче — Марине, теприн хушшинче Сахрун ларасçĕ. Сахрун шут шăрçине шаклаттарса тем шутлать. Марине çине тăрсах телефон аврине çавăрать.

Марине. Алло! Алло! *(Трубкăна вĕрет.)* Алло, тетĕп, ара! Ма никам та чĕнмест? *(Телефон аврине каллех çавăрать.)* Алло! Качкасси! Качкасси, тетĕп! Анюк! Вăт хăямат... Пĕр сасă та çук. Те пурте вилсе пĕтнĕ унта? *(Аллинчи сехечĕ çине пăхса илет.)* Кĕçех саккăр çитет вĕт-ха, хальччен пурте ĕçре пулмалла. Ну, пулать те халăх! Пуçран шаккасах тăмасан, наччас арканса каяççĕ, ним шухăш та çук... *(Телефон аврине тата тепре халтăртаттарать.)* Алло, теççĕ! Качкасси! Анюк, эсĕ-и ку? Çапах та, тупăнтăн пулать? Епле çухалман? Çур сехет ытла шăнкăртаттаратăп, эсир пĕри те çук... Ху эсĕ хĕвел тухиччен Çутă кÿлĕ хĕрринче хăвăн мăн Çтаппанупа ыталашса лартăн пулĕ-ха, çавăнпа çывăрса юлнă. Ан тун ĕнтĕ, ан тун, пĕлетпĕр, хамăр та çамрăк пулса курнă... Эп сана уншăн ятламастăп вĕт, ĕçе вăхăтра пыма çеç хушатăп.

Пĕреххут сирĕн туйне часрах тăвас пулать, вара пĕтĕм хуйхи-суйхи пĕтет, çывăрасса та тăраничченех çывăратăн. Юрĕ, юрĕ, тӳрре тухма ан тăрăш. Эс мана часрах виççĕмĕш бригадăпа çыхăнтар-ха. *(Телефон аврине çавăрать.)* Алло, кам ку? Эсĕ-и, Василь Тимофейччă? Салам, ыр кун пултăр. Ну, ĕçсем мĕнле унта санăн? Çынсем йăлăма утă çулма тухса кайрĕç-и? Миçе çава ятăн? Вăтăр? Сахал пулмасть-и вăл? Çитет, тетĕн? Юрĕ эппин, апла пулсан. Çанталăкĕ лайăх-ха паян, çумăр пулмасть. Эсĕ ху каймарăн-и халăхпа пĕрле? Мĕн? Çăпан? Мĕнле çăпан? Кăвапа çумне тухрĕ? *(Кулса ярать.)* Эккей, пăх-ха эс ăна! Урăх вырăн тупайман пулать хăйне валли... Эс çĕпре ытларах ĕç, иртсе каять вара. Сан вырăнна кам кайрĕ? Хăш Петюк? Комсомол секретарĕ-и? Ну, вăл ачи пултараканччĕ-ха. Юрĕ эппин. Кирлĕ пулсан — шăнкăртаттар, паян эп кунтах, правленинчех пулатăп пулмалла-ха, хăшпĕр каччăсемпе калаçмалла. Иртĕнекенсем йышлана пуçларĕç. Ăс парас пулать хăшне-пĕрне. *(Трубкăна хурать.)* Кулюк! Эс Микка патĕнче пултăн-и çав?

К у л ю к *(алăкран кĕрсе)*. Паçăрах кайса чĕнтĕм.

М а р и н е. Килет-и?

К у л ю к. Килетĕп, терĕ. Анчах малтан апат çиетĕп, унтан сухал хыратăп, брюки якатса тăхăнатăп, терĕ.

М а р и н е. Мунча хутса кĕретĕп, темерĕ-и тата? Тупăннă кавалер! Эп ăна венчете кайма чĕнмен пуль вĕт?

К у л ю к. Начальство умне пĕтĕм формăпа тухса тăмалла, якарах та тасарах пулсан темле хаяр пуçлăх кăмăлĕ те çемçелет, терĕ.

М а р и н е. Авă мĕн иккен! Анчах сухал хырса, одеколонпа шăршланса килнĕшĕнех каçару пулас çук-ха ăна. *(Сахруна.)* Софрон Федăрч, шутласа кă-

лартăн-и эс? Миккан штраф миçе тенкĕ тӳлемелле пулать-ха?

Сахрун. Ёнерех шутласа хунă, Марина Петровна. *(Шут шăрçине шăк-шак! тутарса илет.)* Пĕтĕмпе шутласан, вăл вĕçкĕн Миккан утмăл пĕр тенкĕ те хĕрĕх пĕр пус тӳлемелле.

Марине. Пусĕ те пур-и?

Сахрун. Пулмасăр! Бухгалтеринче йăлт тĕп-тĕрĕс кирлĕ. Чыхвăртан ни малалла иртме, ни каялла чакма юрамасть. Пурне те кĕртнĕ кунта: Микка ӳсĕр пулнă пирки машинипе хӳме çине пырса тăрăнсан икĕ фара çĕмĕрнине те, радиатора лапчăтса пăрахнине те, машин çунаттине авса хунине те, хӳме хакне те, унччен урампа ĕрĕхтерсе пынă чух таптанă ик кăвакал хакне те... Кăвакалĕсем колхозăн пулнă вĕт. Веç, веç кĕртрĕм, ним те шута илмесĕр хăварман...

Марине. Юрать-ха апла пулсан. Вĕрентĕпĕр ăна колхоз машинипе катаччисем чупма! Текех лихач пуласси килмĕ.

Кулюк. Ачам, хăй паттăрланать-ха вăл: эпĕ ытла питех хăракан йышши мар, тухатăп та каятăп ку колхозран, шоферсем халь пур çĕрте те навалом кирлĕ, тет. Чăрсăр мар-и, ара!

Марине. Инçех каяймĕ. Правине туртса илетпĕр те акă, шăпăрт пулать.

Сахрун. Ара, правленинче ăна шоферсен курсне яма йышăннă чухнех каларăм эпĕ: туй ачи вăл, вĕçкĕн, ухарь-купеццă, автомашина пек хаклă япала шанса памалли çын мар, терĕм. Итлемерĕç мана! Халь куратăр ĕнтĕ, мĕнешкел кăлтăрмач пулса тухать. Хăйне вĕрентнĕшĕн курс бухгалтерине хам алăпа ултçĕр тенкĕ куçарса патăм...

Марине. Ан кӳрен, Софрон Федăрч, эпир унран

вăл укçана каялла шăйăрса илме те пултаратпăр пуль?

Сахрун. Неней, ненай. Пур-ши ун пек саккун? Илтмен.

Марине *(Кулюка)*. Леш Уртмах Теренĕ патĕнче пултăн-и тата? Ăна чĕнтĕн-и? Мĕн тет?

Кулюк. Чĕнтĕм. Килетĕп, терĕ, анчах вал та: малтан паранкă пĕçерсе çиес пулать-ха, выçă хырăмпа утса çитейместĕп сирĕн пата, пĕр вăй та çук манăн, терĕ...

Сахрун. Ну, пулать те çав! *(Шуг шăрçисене шăкăрт-шакăрт! тутарса илет.)* Вăй çук пулмасăр унăн! Килĕнче тем те, тем те ĕçлеме пултарать. Иртнĕ кĕркунне хăйсен садĕнче ватă улмуççисемпе ытти кирлĕ мар йывăççене пĕр-пĕчченех каса-каса кăкларĕ — тĕлĕнсе каймалла! Леш Крылов мучи юптарăвĕнчи упаран та кая мар ĕçлерĕ. Тымарсем айне тăлăп çанни хулăнăш рычак чиксе ярса пĕррех хирет те — йывăç кăкĕ пăлтăрт! тухса ывтăнать...

Кулюк. Кăçал çуркунне тата, хăйсен ĕни лачакана кĕрсе ларсан, ăна та пĕчченех туртса кăларнă-иç? Хырăмĕ айĕнчен вĕренпе яваласа илнĕ те ним мар сĕтĕрсе тухнă!

Марине. Симулянт ĕнтĕ, мĕн каласси пур! Пĕркун лавкка умĕнче хам та куртăм: темиçе каччă пухăннă та — хăйсем кăштах сыпнă пулас — тараса пуканĕсемпе выляса ал вăйĕсене тĕрĕслеççĕ. Çак Уртмах Теренĕ те унтахчĕ. Икĕ пăт пуканĕпе мечĕкпе вылянă пек вылять вĕт! Шалт тĕлĕнтĕм!

Кулюк. Унран пурте тĕлĕнеççĕ...

Сахрун. Мĕнех тĕлĕнмелли пур вара питех? Амăшĕн пĕртен-пĕр ывăлĕ, нуша курман, килти пĕтĕм хăйма-çăмарта ун çăварне кĕнĕ, хуть те хăçан та кушак çури пек пурăннă... Çавăнпа улăп пек пулнă та вăл!

Кулюк. Анчах колхозра çав-çавах нимĕн те ĕçлемест...

Сахрун. Апла пулин те, хăйне хĕрсем юратаççĕ пулас. Çулталăк та çурă хушшинче виççĕ авланчĕ, мур илесшĕ, халĕ каллех хусахра çӳрет. *(Кулюка.)* Эс те куç хывмарăн-и-ха ăна? Каччи хитре, патвар, пĕрре пăчăртасанах çу кăларма пултарать... Э?

Кулюк. Тьху! Çав ухмахпа çыхланатăп пуль! Аллă çула çитиччен качча каймасан та, юнашар выртас çук эп унпа!

Сахрун *(тăрăхланă пекрех).* Темле-çке ара, темле, сире, хальхи çамрăксене, пĕлсех çитерес çук...

Кулюк. Эсĕ, Сахрун пичче, ăна хăвăн хĕрӳсенчен хăшне те пулин пар, санăн вĕсем виççĕ тан вĕт! Ыр курса пурăн вара чаплă кĕрӳпе, питĕ лайăх пулать! *(Тухса каять.)*

Марине. Ахалех кӳрентертĕн хăрачана...

Сахрун. Нимех те мар! Иртсе каять. Хĕрĕ маттур-ха вăл, кăмăлĕ уçă.

Иккĕшĕ те ĕçе тытăнаççĕ. Ерипен кăна Микка кĕрсе тăрать. Капăр тумланнă. Костюм, галстук, çутă пушмак. Улăм шлепкине чалăш лартнă. Çăварĕнче пирус, аллисене кĕсъене чикнĕ.

Микка. Ман килес, так сказать.

Марине. А-а... Килех, Микка, кил, иртсе лар малалла.

Микка. Лармасан та юрĕ. Пире начальство умĕнче яланах ура çинче тăма вĕрентнĕ.

Марине. Ура çинче чăнлăх çук, теççĕ пулас.

Микка. Честнăй çын хăяккăн выртсан та чăннине калать.

Марине. Честнăй çынсен çапла пулĕ те, анчах дисциплинăна пăсакансен, иртĕнсе каякансен мĕнле-ши?

М и к к а. Хама иртёнекен çынсен шутне кёртме пултараймастăп. Эп салтак пулнă çын. Виçĕ çул хушшинче пĕр взыскани те пулман. Ăна военкомат урлă пĕлме пултаратăр.

С а х р у н *(ӳсĕркелесе илет).* Чим-ха, шăллăм... Пĕррехинче гаупвахтăра пилĕк талăк ларса тухрăм, тесе мухтанаттăнччĕ мар-и çав эс? Тем, çавăн пекрех каланине астăватăп...

М и к к а *(ларать).* А вăл ман айăппа пулман. Вăл йăлтах женский персонал пирки.

М а р и н е. Хăш енчен айăплă пулнă-ши вĕсем?

М и к к а. Любов пирки. Юрату, так сказать. Çулла, лагерьте пурăннă чух, пĕр парикмахершăпа паллашма тӳр килчĕ те, вăл мана кашни каç свиданине чĕнме пуçларĕ... Старшина усалччĕ пирĕн, увольнительнăй эрнере пĕрре кăна паратчĕ, вара ирĕксĕрех хӳме урлă каçса çӳреме тиветчĕ. Хĕрĕ макăрать те-ха, пымасан... Ну, пĕррехинче, ир енне çавăн патĕнчен таврăннă чух, тытрĕç те мана — вара лекрĕм, шăнкăрттин! *(Çăраççи питĕрнĕ пек тăвать.)* Анчах манăн, честнă калатăп, нимĕнле айăп та пулман...

М а р и н е. Апла-ха эппин. Унта та хӳмесем урлă каçса çӳренĕ эсĕ, кунта та çав йăланах тытса пыратăн пулать — хӳме урлă машинăпа каçма тытăннă. Циркач пулас килсе кайрĕ-и?

М и к к а. Каçарăр, Марина Петровна, анчах ăнлансах çитейместĕп. Мĕн пирки ку шахвăрту?

М а р и н е. Акă, Софрон Федăрч ăнлантарса парĕ сана.

С а х р у н. М-да... Виçĕмкунхи туйшăн санăн колхоз кассине утмăл пĕр тенкĕ те хĕрĕх пĕр пус килсе хывмалла пулать...

М и к к а *(сиксе тăрать).* За што-о? Мĕншĕн, так

сказать? Мĕн сăлтавпа эсир мана çав териех грабить тăвасшăн?

М а р и н е. Пĕлместĕн пулать! Ах, пĕчĕк ача...

М и к к а. Ничего-та не признаю! Произвол ку! Беззакони!

М а р и н е. Эс ан кăшкăр, шăллăм. Лар! Лар та — итле. Йĕркеллĕ калаçăпăр. Виçĕмкун эсĕ никамран ыйтмасăр-тумасăрах Качкассине колхоз машинипе туя кайнă-и, çук-и?

М и к к а. Ну, кайнă, тейĕпĕр. Такой событи был, тунмастăп. Анчах хам ирĕкпе мар, халăх ыйтнипе.

М а р и н е. Мĕнле халăх ыйтнипе?

М и к к а. Молодеж, хамăр колхоз каччисемпе хĕрĕсем, так сказать. Сырса илчĕç те мана — тавай транспорт, туй курма илсе кай, терĕç. Эп хирĕç пулаймарăм, хĕрхентĕм вĕсене. Тепĕр енчен, туй курас килни те культурнăй запросах вăл, ăна хирĕç никак та пыма юрамасть...

М а р и н е. Тухса кĕрлеттертĕн пулать вара?

М и к к а. Ытлашшиех кĕрлеттермен, хăвăртлăх пĕр сехетре утмăл километртан ытла пулман. Норма. Ун пек хăвăртлăхшăн нимĕнле автоинспекци те тапăнмасть.

М а р и н е. Качкассине çитсессĕн мĕн турăн вара?

М и к к а. Халăхпа пĕрле туй куртăм...

М а р и н е. Туй курса тăнипех ӳсĕрĕлсе кайрăн-и? Çапла-и?

М и к к а. Ну, председатель юлташ... Эсĕ ху ĕмĕрне те туй курма кайман çын пек калаçатăн! Ара, унта пурне те йĕркипе ĕçтерсе çӳреççĕ вĕт-ха! Ну, эпĕ те пĕр-ик курка тытса патăм. Хуçисене кӳрентерес мар тесе. Çыннисем хама паллаççĕ те-ха...

М а р и н е. Сто грамсем хума лавккана миçе хут кĕрсе тухрăн?

М и к к а. Такой событи не был.

М а р и н е. Не был мар çав, виç-тăватă хутчен те был! Ыр çынсем каласа пачĕç пире.

М и к к а. Клевета, так сказать... Элек высшей марки!

М а р и н е. Унтан вара? Туй халăхне ял тăрăх кататчи чуптарма кам хушрĕ сана?

М и к к а. Хушман. Ыйтрĕç. Каллех çавсем, молодежсем... Чĕркуççи çине тăрас пек тархасларĕç! Ну, ял тăрăх пĕр-иккĕ çавăрам эппин кусене, çăва патне, терĕм. Кăмăлĕ çемçе-çке манăн, çынсем ыйтнине хирĕç никак та пыраймастăп, çав пĕтерет!

К у л ю к. Ах, тыттарать, намăса та пĕлмест...

М а р и н е. Çынсене лартса тултартăн та — кĕрлеттертĕн апла?

М и к к а. Сехетре хĕрĕх километртан ытла мар. Саккун. Ял-хула хушшинче унтан хăвăрт çӳреме юрамасть.

М а р и н е. Анчах ӳсĕр пуçпа руль тытма юрать-и? Ун пек саккун пур-и?

М и к к а. Эп ӳсĕр пулман. Нормăран тухман...

М а р и н е. Ӳсĕр пулман! Эппин, урăллах урамри хур-кăвакалсене таптарăн пулать, урăллах хӳме çине пырса тăрăнтăн, фарăсене çĕмĕртĕн, радиатора лапчăтса пăрахрăн, машин çунаттине хуçса хутăн? Э? Çавсемшĕн эсĕ пĕртте айăплă мар, çапла-и?

М и к к а. Тĕрĕс, айăплă мар.

М а р и н е. Кам айăплă вара? Атте-турă айăплă-и? Эпĕ-и, ак Сахрун пичче-и? Кам?

М и к к а. Женский персонал айăплă. Хĕрарăмсем.

М а р и н е. Мĕнле женский персонал тата вăл, мĕнле хĕрарăмсем? Мĕн, эсĕ хӳме çĕмĕрсех пĕр-пĕр хусах арăм патне кĕрсе каяс терĕн-им?

М и к к а. Апла мар. Ун пек арăмсем патне çӳреме

эпӗ тахҫанах пӑрахнӑ, манӑн халь чунтан-вартан юратса ҫураҫнӑ хӗр пур...

Марине. Тӗрӗссине кала!

Микка. Халь те суймастӑп: пӗр пралукран пӑрӑнса тухнӑ чух шӑп урам варринче виҫӗ карчӑк тӑра параҫҫӗ! Виҫҫӗшӗ те ӳсӗр, эсреметсем, ыталаннӑ та — юрра янратаҫҫӗ кӑна! Мӗн тӑвас манӑн? Вӗсем ик-виҫ метрта ҫеҫ... Тахӑш самантра ӗлкӗртӗм руле пӑрма, хам та пӗлместӗп, ҫапах та таптамарӑм вилме маннӑскерсене! Уншӑн мана ятлама мар, саккун тӑрӑх тав тумалла!

Сахрун. Саккун тӑрӑх сана суда памалла, шӑллӑм!

Микка. Мӗншӗн? Ҫав карчӑксенчен пашалу туса хуманшӑн-и? Вӗсен пурнӑҫне ҫӑлнӑ вӗт-ха эпӗ!

Марине. А-ав мӗн шутлатӑн-ха иккен эсӗ! Преми памалла мар-и тата куншӑн? Тен, путевка туянса курорта ярас, э?

Микка. Курортах ямасан та, дом отдых юратчӗ.

Сахрун. Пит лайӑх «дом отдых» тупма пултарнӑ та-ха эсӗ, юрать турӑ ҫӑлса хӑварнӑ. Пӗр улт-ҫич ҫуллӑха чиперех каяттӑн.

Микка. Турӑ непричом кунта. Эпӗ атеист, турра ӗненместӗп. Анчах улт-ҫич ҫул канмалли ҫӗре эс кай, мана килтех лайӑх пока.

Марине. Эппин, сан шутупа, санра нимӗнле айӑп та ҫук, ҫапла-и?

Микка. Паллах ҫук. Йӑлт ҫынсене ыр тума тӑрӑшнипе пулса тухрӗ вӑл. Хамӑн характер ҫемҫипе.

Марине. Шофер прави ӑҫта санӑн?

Микка. Мӗн вара? Туртса илес тетӗр-им? Ну, ҫу-ук, председатель юлташ, ун пекки пулаймӗ! Правана эсир паман мана, эсир илес те ҫук. Ун пек тума сирӗн власть ҫитмест.

Марине. Шофер пулма сана эпир вĕрентсе кăларнă.

Сахрун. Саншăн ултçĕр тенкĕ тӳленĕ! *(Шут шăрçине шăк-шак! тутарса илет.)*

Микка. Ун пек пулсан, паянах тухса каятăп колхозран!

Марине. Пулаймасть пуль. Малтан правине ман алла паратăн. Унтан мĕн пуласси курăнĕ вара. Ăнлантăн-и? Ача ăйййи вылямаççĕ санпа. Хальччен те чылай каçаркаланă, çитет.

Микка *(сиксе тăрать)*. Не имеете права! Эп ирĕклĕ çын! Хампа хам хуçа! Эп таçта мар, Совет çĕршывĕнче пурăнатăп!

Марине. Çавă çав. Анчах Совет çĕршывĕнче советла пурăнас пулать унта, хулиганла мар! Ĕçсе ӳсĕрĕлсе, халăх пурлăхне çĕмĕрсе, çынсене сусăртса çӳремелле мар, пĕлетĕн-и?

Микка. Кама сусăртнă эпĕ? Кама хĕненĕ?

Марине. Ана та пĕлместĕн пулать? Эсĕ машинупа хӳмене тăрук пырса çапăнсан, кузовран тăватă çын тухса ӳкнĕ, иккĕшĕ аллисене мăкăлтанă, пĕри пуçне шăтарнă, тепри халь аран уксахласа çӳрет.

Микка. Эп айăплă-им уншăн? Кам хушнă вĕсене ӳсĕр пуçпа машин çине хăпарса ларма? Ыттисем тухса ӳкмен-çке?

Марине. Сана хăвна ӳсĕр пуçпа руль тытма кам хушнă? Уншăн та эс айăплă мар пулĕ?!

Микка чĕнмест.

Сахрун. Çапла çав, пур айăпа та атте-турă çине яма çук, тавариш Ундрейкин! *(Шут шăрçисене шаклаттарать.)* Вырăсла каласан, санăн шидисят один руп та сорок один коп тӳлеме тивет...

Марине. Юрӗ, кун чухлӗ палканипе ҫитӗ! Каҫхине правлени пулать, унта мӗн калӗҫ. Анчах хӑвна пуҫран ачашласса ан кӗт. Хӑвӑн ҫылӑхна мӗнле каҫарттарасси ҫинчен шухӑшла. Асту, кутӑна пенипе нимӗн те тӑваймастӑн, хӑвнах япӑх пулать.

Сахрун. Цифрине манса ан кай: утмӑл пӗр тенкӗ те хӗрӗх пӗр пус...

Микка. *(Сахруна ҫисе ярас пек пӑхса илет).* Тӳлеместӗп! Чорту! Вӑл укҫана луччӑ ӗҫсе яратӑп!

Сахрун. Ан тӳле ара, ан тӳле, эпир уншӑн макӑрсах лармастпӑр. Эпир вӑл суммӑна санӑн ӗҫ укҫинчен шӑнкӑрт! тытатпӑр та, пирӗн пӗтӗм хуйхи-суйхи пӗтрӗ. Правлени йышӑнать те паян... Анчах та халь гаража кайса машинуна май килнӗ таран юсама тӑрӑш, тен кӑштах пулин усси пулӗ...

Микка пӗр хушӑ шухӑша кайса тӑрать. Унтан ассӑн сывласа илет те варт! ҫаврӑнса алӑк патнелле утать. Анчах алӑк патне ҫитиччен каялла ҫаврӑнса Сахрун умне пырса тӑрать, тем каласшӑн пек. Сахрун янахне хыҫкаласа кулать, «нимӗнпе те пулӑшаймастӑп сана!» тенӗ пек, аллисене ик еннелле сарса пӑрахать. Микка каллех алӑк патнелле вӑркӑнать, алӑкра Тереньпе тӗл пулса ун ҫине йӗрӗнчӗклӗн пӑхса тухса каять. Терень уксахласа кӗрет — ҫӳҫне-пуҫне тураман, майкӑпа, кӗскерех йӗмпе, ҫара уран. Аллинче пысӑк туя. Пурте ун ҫине пӑхаҫҫӗ. Пауза.

Терень *(кӑшт тӑрсан).* Ма чӗнтӗр ара? Кама кирлӗ пултӑм эп ир-ирех?

Марине. Курас килчӗ.

Терень. Мана курма — эп картинка мар пуль?

Марине. Калаҫмалли пур. Ирт-ха малалла, лар.

Терень уксахласа малалла иртет, хуллен, асӑрханса ларать.

Марине. Уруна мӗн пулчӗ тата, Терень, ма уксахлатӑн? Шӑрпӑк кӗртмерӗн пулӗ те?

Терень *(ассăн сывласа).* Ревматис аптратать.

Марине. Ăçтан тупрăн тата вăл чире? Ун пекки санăн çукчĕ мар-и?

Терень. Виçĕмкун мунча хыççăн сивĕ квас ĕçрĕм.

Сахрун. Ара, сивĕ квас ĕçсен пыр ыратаканччĕ-çке, ÿслĕк пулаканччĕ...

Терень. Манăн ун пек мар çав, манăн тÿрех урана каять. Урисем слаба. Пĕлетĕр вĕт-ха, мана салтака та урасем пиркиех илмерĕç. Окраниченнă эпĕ.

Марине. Сана урусем ыратнă пирки мар, уру тупанĕсем хăма пек лаптак пулнăшăн илмен тетчĕç пулас.

Терень. Пурĕпĕр мар-и вăл? Рас салтака юрăхсăр, наччăт ненормальнă. Инвалид хăраххи.

Кулюк *(алăк патĕнчен).* Виçĕмкун каçхине, вăййа тухсан, анатри кĕпер çинче питĕ хытă сикрĕн-çке? Кĕпер свайĕсене хуçса пăрахмаллах ташларăн?

Терень. Вăл виçĕмкун пулнă, ку — паян. *(Пĕççисене сăтăркалать.)* Çĕрĕпе çывăраймарăм кĕçĕр. Чăлăм куç хупман. Аптрал.

Кулюк. Эп сана чĕнме пынă чух çенĕкри чатăр айĕнче лаша тулхăрнă пекех харлаттараттăнччĕ-çке?

Терень. Астумастăп ун пеккине. Элеклетĕн.

Марине. Мĕнле ытла тăрук аптраса ÿкрĕн вара?

Терень. Манăн яланах çавăн пек тăрук пулать. Акă, калăпăр, çак самантра вар ыратмасть манăн, анчах тепĕр вунă минутранах абендицит е кастрит пулса ларма пултарать. Е тата катар шолуткă.

Марине. Ай-у-уй, тухтăрсем пекех калаçатăн-çке эсĕ! Капла часах профессăра та тухса кайăн?

Терень. Пĕлме çук. Çĕр çинче тем те пулма пултарать. Çичĕ çул хушши шкула ахаль чупнă-им эпĕ? Халь тата кашни кун татмалли календарь листисене

вулатăп. Унта тем çинчен те вĕрентеççĕ, ачам. Кашни листине вуланă хыççăнах ăс хутшăннă пек туйăнать. Анчах мĕн вуланине мансах пыратăп...

М а р и н е *(сассине хытарать).* Анчах çапах та çынсем пек чипер ĕçлекен колхозник пулса çитейместĕн-ха! Çавăн пирки юлашки хут каласса пăхма чĕнтĕмĕр те сана эпир.

Т е р е н ь *(пĕççисене сăтăркаласа).* Тем, усси пулать-ши...

М а р и н е. Пулать! Эс кала-ха, хăçан этемле ĕçлеме пуçлатăн колхозра? Хăçанччен пăлахая персе пурăнма шутлатăн?

Т е р е н ь *(шухăшланă пек пулса ларнă хыççăн).* Ăна тӳррĕнех татса калама пултараймастăп вара. Веçех сывлăхран килет. Калатăп-çке, окраниченнă эпĕ. Военнăй билетра та çаплах çырнă. Начар ман пурнăç!

М а р и н е *(тарăха пуçласа).* Ан палкаса лар кирлĕ мара! Сан пек паттăр сывлăхли ялта никам та çук-ха!

С а х р у н *(кулса).* Йăнăшатăн, Марина Петровна, тепре пур.

М а р и н е. Кам?

С а х р у н. Иккĕмĕш фермăри леш «Улăп» тенĕ вăкăр...

М а р и н е. Тĕрĕс, çав пур ĕнтĕ тепре!

Пĕр хушă никам та чĕнмест. Марине Терене татах ятлас кăмăлпа çирĕпрех сăмахсем суйласа тăрать, Сахрун пысăк журнал листисене уçкалать. Терень питĕ тутлăн анасласа илет те çăварĕ çине хĕрес хурать. Маринене ку тата ытларах тарăхтарса ярать...

М а р и н е. Мĕн, вырăн çинчен тăнă-тăман ыйхă пусма пуçларĕ-им? Çынсем хĕрсе ĕç тăваççĕ, санăн çывăрассу килет эппин?

Т е р е н ь. Çапларах çав. Пĕр çĕр çирĕм — çĕр аллă минут çывăрса илсен, кансĕрлемен пулĕччĕ. *(Татах анаслать.)*

М а р и н е *(сĕтел çине чант! çапать).* Çитĕ! Çитĕ сана çут тĕнчере пăлахая персе пурăнма! Нумай чăрманнă ĕнтĕ санпа, нумай касарнă сана. Текех ун пек пулмасть! Килте тем шуйттанĕ те ĕçлеме пултаратăн, колхозра нимĕн те тумастăн... Софрон Федорч, кăçал миçе ĕçкунĕ тунă-ха вăл?

С а х р у н *(журнал çине пăхса).* Çичĕ кун та çурă...

М а р и н е *(пĕççине шарт! çапать).* Çĕр çăттăр! Çакăн пек кӳлепепе çичĕ кун çурă тунă вăл, э? Ял кулли мар-и ку? Пирĕн хăшпĕр шкул ачисем те çитмĕлсакăрвунă кун тунă! Намăс мар-и сана, упа хăраххи?!

Т е р е н ь *(хаш! сывласа).* Чирлĕ. Окраниченнă.

М а р и н е. Ан лăпăртат! Кахалсăр пуçне санăн урăх нимĕнле чир те çуккă!.. Юлашки хут калатăп: енчен те эсĕ паян-ыранах колхозра этем шутлă ĕçлеме тытăнмасан, эпир халех сан кил выранне татса илетпĕр. Пĕлтĕр авланнă пек туса хăвăн ятпа çĕнĕ кил вырăнĕ илтĕн те арăмна хуса ятăн, халь пĕчченех усă куратăн... Анчах аннӳн хăйĕн кил вырăнĕ пур, сире иксĕре вăл та ытлашшипех. Ку — пĕрре. Унсăр пуçне, малашне те тӳрленместĕн пулсан, эпир сана харампырсем пирки кăларнă указ тăрăх...

Т е р е н ь *(туйине пăрахса сиксе тăрать).* Мĕн? Мĕн?.. Указ тăрăх? Мана-и? Мĕн тăватăр?

М а р и н е. Асататпăр кахалсене ĕçлеме вĕрентекен çĕре!

Т е р е н ь *(тăрук паттăрланса сĕтел çине çапать).* Не имееш правă!

М а р и н е. Мĕншĕн «не имееш правă»? Эсĕ мĕн, хăвна харампыр мар тесшĕн-и?

Т е р е н ь. Çук, харампыр мар!

Марине. Кам вара эсӗ?

Терень. Эпӗ... эпӗ — ухмах!

Марине *(тӗлӗнсе)*. Епле... ухмах?

Терень. Çаплах. Ухмах и вçо. Адиот йышши. Окраниченнӑ. *(Хӑйне пуç тӳпинчен пӳрне вӗçӗпе шаккать.)* Анне те мана кун каçа вуншар хут ухмах тет, пурӑнма, пурнӑç тума пӗлместӗн тет. Хам ухмаххине хам та лайӑх туятӑп эпӗ... Тепӗр чухне пуçра пӗр тӗпренчӗк ӑс та юлмасть, веç арканса каять. Пӗрре юриех нервӑннӑй тухтӑр патне кайса пӑхатӑпха, тен, вӑл мана ухмахсен больницине хурса сыватмалла тӑвӗ...

Марине. Ну çу-ук, Качакаев юлташ, ан янраса лар кирлӗ мара, ухмах мар çав эсӗ, вата тилӗ пекех чее этем! Ултавçӑ!

Терень. Ун пек мар, председатель юлташ, туршӑн та ухмах эпӗ. Точнӑ калатӑп. Енчен те ӑслӑ пулнӑ пулсан, эпӗ сан вырӑнта çынсене тӑн кӗртсе, хутсем çине алӑ пусса ларӑттӑм, май килсен сана та пӑсӑркки паркалӑттӑм. Ухмах пирки çеç халӗ сан умӑнта телефон юпи пек тӑратӑп... Анчах ухмахсене суд тумаççӗ, ӑна пӗлетӗп эпӗ. Эс каланӑ вырӑнсене те указ тӑрӑх ямаççӗ, ма тесессӗн ухмахсенчен усси çук. *(Маринепе Сахруна пӗр харӑс.)* Ӑнланатӑр-и çавна? Е тепӗр хут калас?

Марине. Ӑнланатпӑр, пит лайӑх чухлатпӑр... эсӗ мӗн тери чаплӑ ултавçӑ пулнине! Симулянт иккенне!

Терень. Ну, хисеплӗ председатель юлташ, кун пек сакраничнӑй сӑмахсемшӗн ответ тыттарма та пулать. Саккунӗсене пӗлкелетпӗр эпир те... Халь тата кил вырӑнӗ пирки калам. Тытса илейместӗр эсир ӑна, мӗншӗн тесен çак кунсенче эпӗ каллех авланатӑп та манӑн тепӗр хут çемье пулать, çӗнӗ хуçайствӑ! Хам

окраниченнă пулсан та, арăмне нормальнинех, сторовинех илетĕп-ха — вăл ĕçлеме, кил-çурт тытса пурăнма пултартăр...

Сахрун *(йĕкĕлтерех)*. Пĕлесчĕ, кама илетĕн-шиха эсĕ? Хĕрне тупса хутăн-и?

Терень *(ал сулса)*. Э-э, хĕрне тупасси темех марха вăл, пĕтĕм ĕçĕ те пĕрре шăхăрмалăх çеç.

Сахрун. Ай-ай пит паттăр калаçатăн-çке! Ху пĕр-пĕр прынц е лыцăр пекех! Е унтан та ытларах—Совет Союзĕн Геройĕ, космонавт. Лăпăрти!

Терень. А мĕншĕн калаçас мар? Санăн хăвăн та ўссе çитнĕ виçĕ хĕр качча каяймасăр килте йўçсе лараççĕ-ха, пырса ыйтсан, тўрех парса яратăн: тархасшăн, Теренти Семенч, суйла, хăшĕ ытларах килĕшет?..

Кулюк *(кулса ярать)*. Ак хайхи! Паçăрах каларăм вĕт сана, Сахрун пичче! Кĕрў тупăнчĕ те сан валли!..

Сахрун *(шутсăр тарăхса сиксе тăрать)*. Хуп лаппа çăварна, йĕксĕк! Чĕлхў хăрса лартăр! Сан пек ухмаха хĕр парса ларма çав териех йўтемен-ха!

Терень *(ун патнелле ыткăнса)*. Ак, эсĕ те мана ухмах терĕн! Тĕрĕс каларăн! Эппин, ма-ха çулăхатăр эсир ман çума, çыпçанкăсем пекех çыпăçатăр?! Мана сирĕн ĕçлеме мар, ăс пухма ярас пулать! Ман сывлăха тўрлетесси çинчен шухăшлăр эсир, çавăн пирки тăрăшăр! Вара эпĕ, тен, чăнах та çын пулăп-и...

Марине *(çилĕпе)*. Юрать, тăрăшăпăр! Хытă тăрăшăпăр! Енчен те эсĕ ыран пĕтĕм халăхпа йăлăма утă çулма каймасан, эпир сана пи-ит лайăх сывататпăр акă!..

Терень *(лăпланнă пек пулать, шухăша каять)*. Сыватăр çав. Эп сире уншăн тем пекех тав тăвăп. Авланнă чух туя чĕнсе кĕрекене лартăп... Анчах та

халь эсир мана ытла та волновать туса ятăр-ха. Эп нервăннăй пулнине пĕрре те шута илместĕр. Хама ытла хытă ятланине тӳсейместĕп эпĕ. Мана ун пек чух тытса пăрахма та пултарать. Шисофрени манăн. Эпилепси. Илтнĕ-и эсир çавăн пек сакраничнăй чирсем çинчен? Вĕсем пирки календарьте пит лайăх çырса кăтартнă, ачам.

С а х р у н. Ан палкаса лар кирлĕ мара! Нимĕнле шифрени те, нимĕнле леплепси те çук санăн.

Т е р е н ь. Пур çав! Окраниченнă вĕт эпĕ... *(Сасартăк хăлхана çурмалла хытă кăшкăрса, ура тапса юрласа ярать):*

Ана çинче хытхура,
Пирĕн ялта сас-хура:
Эй, тусăм, Тимахви,
Эс кахал теç, чăнах-и?

Колхоз хирте вырмара,
Тимук килте — выртмара.
Эй, тусăм, Тимахви,
Çак сăмах та чăнах-и?

Самай ĕçе тухнă чух
Сан ыратман çĕр те çук.
Эй, тусăмçăм Тимук,
Чăн сăмахăн суйи çук!

М а р и н е. Ку мĕнле опера пуçланчĕ тата? Мĕн шутпа çухăратăн?

Т е р е н ь. Ухмах пирки. Час-часах пулать ман ун пекки. Ларатăп-ларатăп та пурнăç çинчен шухăшласа, сасартăк юрлас килсе каять. Тепĕр чухне тутлă ыйхăпа çывăрнă çĕртенех сиксе тăрса юрлама тытăнатăп. *(Каллех юрлать.)*

Кай, кай Ивана!
Ма каймастăн Ивана?
Унтан лайăх пуян каччă
Ялта тупаймастăн!

Атту-тăк тата хурланса юрлама тытăнатăп: уй варринче лаштра юман, атте тесе, ай, кайрăм та...

С а х р у н. Сан пек ыр курса пурăнаканăн юрламалла кăна ёнтĕ!

Т е р е н ь *(хурланнă пек)*. Эх, Сахрун пичче, Сахрун пичче! Чирлĕ вĕт эпĕ, шутсăр чирлĕ! Тепĕр чух вилсе каяс патнех çитетĕп. Тытса та пăрахать мана. Эпилепси... Ак... акă, апайтурух, пуçланчĕ те пулмалла хайхи... *(Сасартăк алли-урисене чĕтретме тытăнать, куçĕсене чарса пăрахать, чĕлхине кăларса ярать.)* Пуçланчĕ! Пĕтрĕм! Тытăр мана! Çăлăр!..

Терень пукан çинчен йăванса каять, çурăмĕ çине çаврăнса выртать, алли-урипе тапкаланма, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтреме, пуçĕпе урайне çапма тапратать. Марине, Кулюк, Сахрун ун патне ыткăнаççĕ...

С а х р у н. Атьсемĕр, ăна чăнах та тытса пăрахрĕ тем?

М а р и н е. Юри тумасть-и вăл, эсрелĕ?!

К у л ю к. Çу-ук, юри мар пуль! Пăх-ха ара, сăнĕ те кăвакарса кĕл тĕслĕ пулса кайрĕ... Ай, хăрушă! Кун пеккине эп нихçан та курман... Уй, хăрушă!

Терень çаплах тапкаланать.

М а р и н е *(хăрама пуçласа, Сахруна)*. Мĕн тăвас пулать, ара? Эс пурăнса курнă çын, тен, пĕлетĕн?

С а х р у н. Тупата туршăн пĕлместĕп...

М а р и н е. Ай-уй, ара, пĕтес пулать-иç? Кунтах вилсе кайсан, тем курса ларăн! Кулюк, чуп-ха фельдшер патне!

К у л ю к. Фершăл çук, ирех хулана эмелсем илме кайрĕ.

М а р и н е. Ак тата, кĕтмен çĕртен хурлăх! Пĕреххут, ма чĕнтертĕм пуль усала, унпа калаçнинчен усси çавах пулас çук...

К у л ю к. Шывпа сапсан мĕнле-ши?

М а р и н е. Кам пĕлет, те юрать, те юрамасть...

С а х р у н. Çăварне уçса кăштах эрех парса пăхмалла мар-и? Ман чĕрĕк тĕпĕнче кăштах юлнăччĕха... *(Сĕтел ещĕкĕнчен чĕрĕк кĕленчи кăларать.)*

М а р и н е *(тĕлĕнсе)*. Ку мĕнле япала тата? Эсĕ мĕн, ĕç вăхăтĕнчех яркалатăн-им?

С а х р у н *(аллине сулать)*. Çук-çук, апат умĕн аппетит валли кăна вăл, килте карчăк вăрçать те, кунтанах пĕр аллă грамм ĕмсе каятăп... Мĕнле, сыптарса пăхас-ши? Тен, усси пулĕ?

М а р и н е. Пĕлместĕп çав, тем тусан тем пулать! Тьфу, эсремет япали! Тупрăмăр хамăра валли!..

Терень çаплах тапкаланать. Хушăран вăрăммăн «ы-ых!.. о-охх!..» тесе ярать. Пуçĕпе урайне çапать. Пурте пĕр хушă ним тума пĕлмесĕр аптраса тăраççĕ. Уçă чӳречерен М и к к а пуçĕ курăнать.

М и к к а. Мĕн пулнă кунта сирĕн, кам çухăрать? Кама тăн кĕртмелли тупăнчĕ тата?

М а р и н е. Кĕр-ха, Микка, кĕр часрах, Терене тытса пăрахрĕ, вилет пуль, ним тума пĕлместпĕр!

М и к к а чупса кĕрет.

М и к к а. Паçăрах-и?

С а х р у н. Чылай пулать ĕнтĕ...

М и к к а. Ун пек чухне çиелтен хăпарса выртма хушаççĕ, атту вăл пуçне çапса çурма та пултарать.

С а х р у н. Чăнах та пуль. Хăпарса вырт эппин часрах. Манăн ăна чарма вăйăм çитес çук.

М и к к а. Момент! *(Терень çине хăпарса выртать, ун аллисене, урисене урай çумне пусса лартать, пуçĕпе пуçне хĕстерет.)* Чарăн, шуйттан, чарăн, тетĕп!

М а р и н е. Хăçанччен пусса выртмалла вара ăна?

С а х р у н. Иртсе кайиччен ĕнтĕ, лăпланиччен...

М а р и н е. Урăх ним те тумалла мар-ши вара?

К у л ю к *(чӳречерен пăхса.)* Чимĕр-ха, Ахваниç мучи йăлăмран хулă тиесе таврăнать, çавна чĕнмелле мар-ши? Вăл тем те пĕлет!

М а р и н е. Чĕнес, чĕнес! *(Чӳречерен кăшкăрать.)* Ахваниç мучи-и! Ахваниç мучи, тетĕп! Йăпăрт кĕрсе тух-ха, ĕç пур!

А х в а н и ç с а с с и. Халех-и? Манăн малтан çак лава кайса пушатмаллаччĕ. Куран, карçинккасем тума мĕн тери чаплă хулă касса килетĕп...

М а р и н е. Халех, халех, Ахваниç мучи! Хулли тармĕ-ха вăл!

Кăшт лăпланма пуçланă Терень тепĕр хут тапкаланма тытăнать: «Ы-ых!..о-ох!.. у-у-ууу...» Халь те ун çинче выртакан Микка ăна аран чарать. Васкасах А х в а н и ç м у ч и кĕрет, аллинче питĕ хитре яштака хулă, ăна вăл çурăмĕ хыçнелле тытнă.

А х в а н и ç *(алăкран кĕнĕ-кĕмен).* Мĕн пулнă? Мĕн пирки кун пекех васкавлă кирлĕ пултăм сире?

М а р и н е *(пăлханса).* Хурлăх, Ахваниç мучи, кĕтмен-туман çĕртенех Терене тытса пăрахрĕ! Пĕр вунпилĕк минут тапкаланать ĕнтĕ. Мĕн тумалла-ши, мĕнпе пулăшмалла-ши ăна? Эс ватă çын, пурнăçра нумай курнă, тен, пĕлетĕн? Кала-ха...

Пурте Ахваниç çине пăхаççĕ, ун сăмахне кĕтеççĕ.

Ахваниç *(малараx иртет, тапкаланма чарăнман Терень çине пăхать, ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçса илет).* Пĕлкелетĕп пăртак, куркаланăччĕ кун пеккисене... Теренĕ хăех кăтартнăччĕ пĕрре, улт-çичĕ çул каялла колхозăн пăрçа уйĕнче вăрăра тытсассăн. Çакăн пекех тытса пăрахрĕ ăна, уй варринчех...

Кулюк. Хытах-и? Хальхи пекех-и?

Ахваниç. Тапкаланма пуçласан, çĕр кисренчĕ, ачам!

Марине. Сыватрăн-и вара?

Ахваниç. Çывăхра тухтăр тавращĕ пулмарĕ те, хамăннах эмеллемелле пулчĕ çав. Мĕн тăвас тетĕн! Аптрамарĕ, сывалкаларĕ... *(Каллех ĕнсине хыçать.)* Анчах хăйне мĕнле сыватни çинчен никама та калама хушмарĕ.

Микка. Кала эппин часрах, мĕн тумалла? Йăлăхрăм эпĕ ун çинче выртса, унран качака таки шăрши кĕрет! Тӳсме çук! Хăсса ярас патнех çитрĕм...

Марине. Пулăш, Ахваниç мучи!

Ахваниç. Халех, халех, атьсемĕр, ан васкăр, васкасан суккăр пулать, теççĕ... Сыватма май килет пулĕ, тетĕп-ха. Анчах ăна сыватма мана вырăн ытларах кирлĕ, эсир пĕртак сирĕлĕр. А эсĕ, Микка, тавай ан ун çинчен, ниçта та тармасть вăл...

Микка сиксе тăрать. Ыттисем кăштах чакаççĕ. Терень тапкаланса кăпăк кăларать. Ахваниç мучи пĕр утăм малалла ярса пусать те çурăмĕ хыçĕнчи хулăн хулла çĕклесе пĕççи тăрăх вăччăшт! вăччăшт! тутарса илет.

Кулюк. Ай-уй! Пĕтрĕм!

Марине. Мĕн хăтланатăн эсĕ, мучи?

Ахваниç. Эмеллетĕп! Эсир ăна сыватма хушрăр-иç мана? *(Вăччăшт! вăччăшт! тутарса çапать. Терень тăрук пĕтĕм кĕлеткипе çĕкленсе ӳппĕн — çурăмĕ-*

*пе çӳлелле çаврӑнса выртать.)* Маттур, Терень, маттур, кун пек выртсан, эмеллеме майлӑрах пулать! *(Çинеçинех чашлаттарать.)*

Марине *(хӑраса).* Чарӑн, Ахваниç мучи! Ухмаха ертӗн пуль!

Кулюк. Чирлӗ çынна хӗнеме юрать-и вара? Уншӑн суда та лекме пулать! Сасартӑк вилсе кайрӗ-тӗк?

Ахваниç *(Терене ӑшаланӑ май).* Ю-рать, ю-рать, кун пек туни пулӑшать! Ман эмелӗ — шанчӑклӑ!

Сахрунпа Микка кулса тӑраççӗ. Терень тӳсет-ха, хӑй юри хӑтланнине палӑртасшӑн мар пулмалла вӑл. Унтан хӑйне питех те витӗр тивет те — тӑрук тӑпӑл-тапӑл сиксе тӑрса Ахваниçе тапӑнать.

Терень. Эс мӗншӗн хӗнетӗн мана, ват шуйттан?! Ыратмасть тетӗн-и-мӗн? Эпӗ шивой чӗрчун мар штолӗ? Кӳр-ха, эп сана хӑвна... *(Ахваниç аллинчи хулла туртса илет те çапмах хӑмсарать.)*

Ахваниç. Но-но, ачамккӑ, мана çапма аллу кӗске-ха санӑн! Тата эпӗ сан пек симулянцӑ та мар вӗт, трудовой элементӑ!

Терень. Адиот эсӗ! *(Хулла çӑтӑр-çатӑр хуçса аяккалла ывӑтать.)* Эп сана, ватӑ вӗреçӗлене, суда паратӑп! Халех тухтӑртан справка кайса илетӗп те... Акӑ, свидетельсем кунтах тӑраççӗ! Хуптаратӑп!

Сахрун. Анчах эпир нимӗн те курман-çке?

Терень. Епле курман пулать? Эсӗ, мӗн, тунасшӑн-и?

Сахрун. Курман! Сана пӗçертнӗ чух эпӗ урамалла пӑхса тӑтӑм...

Терень *(Кулюка).* Эсӗ те курман-и?

Кулюк. Эп çынна хӗнени çине пӑхма пултараймастӑп...

Терень. Эсӗ тата, Микка?

**М и к к а.** Пӗр литр лартатӑн-и?

**Т е р е н ь.** Мӗншӗн?

**М и к к а.** Унсӑр манӑн куҫ курмасть...

**Т е р е н ь.** У-у, пьянчук! *(Маринене.)* Эсӗ мӗн калӑн тата, председатель? Санӑн пуринчен те ытларах ответ тытмалла пулать-ха, савнӑ чунӑм! Сан куҫу умӗнче колхозниксене ҫапса пӑрахаҫҫӗ, эсӗ пур — ҫавна кура ахӑрса тӑратӑн... Лекрӗн-и? Халӗ ӗнтӗ мана мар, сана хӑвна ямалла пулать кунтан курӑнман вырӑнсене! Ну, мӗн калӑн-ха ӗнтӗ?

**М а р и н е.** Эпӗ мӗн... Эпӗ Ахваниҫ мучие мӗнле преми парас-ши тесе тӑратӑп-ха. Те укҫан парас, те ӗҫкунӗпе...

**Т е р е н ь.** Мӗншӗн преми ӑна? Мана хӗненӗшӗн-и? А-ав епле иккен! Эсир пурте мана хирӗҫ? Ну и ну!.. Пӗлетӗн-и, кун пеккине суд ҫыннисем ушкӑнпа тапӑнни теҫҫӗ те уншӑн сроксене икӗ хут ытларах параҫҫӗ!

**М а р и н е.** Ҫук, сана хӗненӗшӗн мар, сана чиртен сыватнӑшӑн! Унӑн эмелӗ пит лайӑх пулнӑшӑн! Вилме пуҫланӑскернех ҫын турӗ вӗт сана? Мӗнле тав тӑвас мар-ха ӑна?

**Т е р е н ь.** Тав тутарӑп эп сире! Пурне те тӑрӑшыв ҫине кӑларатӑп. Паянах «Капкӑна» ҫырса яратӑп!

**М а р и н е.** Ҫыр ара, ҫыр, кам чарать сана ҫырма? Анчах пирӗнтен ыйтса пӗлмесӗр ҫавах кӑлармаҫҫӗ унта. Ыйтсан, ответне пама пӗлӗпӗр эпир. Вара шутсӑр лайӑх фельетон пулать. Тӗнчипех чапа тухатӑн...

Пурте кулаҫҫӗ.

**Т е р е н ь** *(шухӑша кайнӑ пек пулса).* Мӗн тӑвас-ха эппин манӑн? Мӗнле пурӑнас? Пӗтӗм ӑс-пуҫ арканса кайрӗ...

**М а р и н е.** Ыран çавапа лапатка йăт та халăхпа пĕрле йăлăма утă çулма кай.

**Т е р е н ь.** Вара мĕн?

**М а р и н е.** Унта çитмĕл çичĕ тар тухиччен ĕçле.

**Т е р е н ь.** Вара?

**А х в а н и ç.** Вара çын пулатăн. Çĕр процент. Тен, унтан та ытларах-и. Пĕтĕм ĕçĕ те çав кăна. Анлантăн-и?

Вĕсем калаçнă хушăра Кулюк радиоприемник патне пырса ун тӳми çине пусать. Тӳрех хаваслă юрă янраса каять: «Юратсах паян ĕçлерĕм эп колхозăн хирĕнче, хирĕнче...»

# Ҫĕрлехи йăнăш

Пĕр пайлă шўт



## ШӲТ ТĂВАКАНСЕМ:

Усламçу Микули, 35—40 çулсенчи çын.
Урине, унăн арăмĕ.
Якку, вĕсен кӳрши.
Шаклашкин, хула çынни.

Чаршав умне ик енчен икĕ çын тухаççĕ. Пĕри — Шаклашкин, лайăх костюмпа, улăм шлепкепе, куçлăхпа, хул хушшинче портфель, тепри — Усламçу Микули, пĕчĕк сар сухаллă çын. Вăл начартарах тумланнă, кивĕ кирза атăпа, лутăрканса пĕтнĕ карттуспа. Вĕсем пĕр-пĕрине хирĕç пыраççĕ. Шаклашкинваскать, Микула пуçне пĕксе, шухăша кайса утать. Ним те курмасть, ним те илтмест вăл. Уншăн халĕ тĕнче пĕтсен те пурĕпĕр пулмалла...

Шаклашкин Микулана хулпуççийĕнчен тĕртĕнет, «каçарăр», тет, анчах самантранах чарăнать те куçлăхне хывса каялла пăхать. Микула хăй çулĕпе малаллах утать-ха.

Шаклашкин. Эй, юлташ! Юлташ, тетĕп, тăхта-ха!

Микула (*чарăнать, ерипен каялла çаврăнса пăхать*). Эсĕ мĕн, мана юлташ тетĕн-и?

Шаклашкин (*ун патнелле пырса*). Сана çав, кама пултăр тата! Кунта урăх никам та çук-иç?

Микула (*кăмăлсăр*). Мĕн кирлĕ? Кала часрах.

Шаклашкин. Ним те кирлĕ мар-ха. Темле, паллана çын пек туйăнчĕ те... Ăçтисем эсĕ?

Микула. Эпĕ-и? Ку таранччен Лапракассисем пулнăччĕ-ха, малалла темле пулать. Выл шывĕ хĕрринче çав ятлă ял пур...

Шаклашкин *(хавасланса).* Усламçу Микули мар-и эсĕ?

Микула *(тĕлĕнерех).* Çавă та-ха... Анчах хăш енчен палларăн эс мана? Хăвна никак та паллаймарăмха эпĕ. Чим-ха... Якур мар пулĕ те эс?

Шаклашкин. Шăп та шай çавă! Якур эпĕ, Шаклак Якурĕ! Çимĕккассисем! Ара, эпир санпа пĕчĕк чух шкулта пĕрле вĕреннĕ вĕт, пĕр парта хушшинче ларнă! Ун чух пирĕн ялта шкул пулманнипе эпир сирĕн яла çӳреттĕмĕр... Салам, тусăм! *(Микула аллине тытса силлет.)* Вăтăр çул иртрĕ-иç унтанпа, э? Çапах та палласа илтĕм! Эх, тусăм-юсăм! Кӳр-ха, ыталаса чăмăртам! *(Микулана ыталать.)* Пĕртте шутламан тĕл пуласса...

Микула. Вăхăчĕ шăвать-ха вăл. Ватăлатпăр...

Шаклашкин. Ничево-ха! Ватăлсах кайман! Тепĕр чух ют арăмсем çине пăхкаласа илес кăмăл та пулкалать...

Микула *(ал сулать).* Э, каккуй ютти шухăшĕ! Килтипе те аптратăп, хăш чух тухса тарас килет. Çимеллипех çиет...

Шаклашкин. Айăпа кĕркелетĕн пуль.

Микула. Сыпкалатăп та, çавна юратмасть. Анчах хальхи вăхăтра кам сыпмасть? Чăх та ĕçет, теççĕ те...

Шаклашкин. Итле-ха, Микула, пĕрре тĕл пулнă чух атя-ха калаçса ларар пĕртак. Эс васкамастăн-и?

Микула. Çук, васкамастăп. Хĕвел çӳлте-ха, каçчен киле çитме пулать. Килĕнче те ырри нимех те çук.

Сак çине лараççĕ.

Шаклашкин *(пирус кăларса).* Туртатăн-и?

М и к у л а *(ал сулса).* Усал трактор пекех мăкăрлантаратăп.

Пируссем тивертсе яраççĕ.

Ш а к л а ш к и н. Ну, тусăм-юсăм Микулай, каласа кăтарт ĕнтĕ, мĕнле пурăнкаларăн юлашки çулсенче? Ачу-пăчу пур-и?

М и к у л а. Вĕсем пур-ха. Унсăр епле пултăр? Тăваттă тан. Кĕçĕнни сăпкара кăна-ха...

Ш а к л а ш к и н. Аслисем вĕренеççĕ пуль?

М и к у л а. Вĕренеççĕ. Ĕçлекенĕ те пур. Вăл енчен кулянмаллиех çук. Анчах эп хам йĕркерен тухса кайрăм-ха.

Ш а к л а ш к и н. Мĕн пулчĕ вара ун пекех? Чăнах та... *(Микула çине тинкерсе пăхать.)* Санăн сăну темле... эс нумай пулмасть кикен чăмланă тĕслĕрех. Мухмăр мар пулĕ те?

М и к у л а *(хашш! сывласа ярать).* Мухмăртан та усалтарах...

Ш а к л а ш к и н. Тем, инкек пулчĕ-им?

М и к у л а. Калама та пĕлмелле мар, Якур. Ăш хыпать. Ниçта кайса кĕме пĕлместĕп. Эх-ха-хай! темелли çеç юлать...

Ш а к л а ш к и н. Атя-ха эппин, пĕр-пĕр буфета кĕрсе тухар, иксĕмĕр тĕл пулнă ятпа пĕрер курка кăпăклă сăра ĕçер, сан ăшу хыпнине те лăплантарар...

М и к у л а *(ассăн сывласа).* Буфет терĕн-ха эсĕ! Сăрасем ĕçсе çӳреме, Якур, манăн халь «финансы поют романсы». Тӳлемеллисене те темле тӳлесе татмалла...

Ш а к л а ш к и н. Парăма кĕрсе кайрăн-и-мĕн?

М и к у л а. Кĕртрĕç-ха çав. Мăй таранах...

Ш а к л а ш к и н. Эккей! Япăх апла пулсан. Таçта

растрата таврашё пулмарё пуль те? *(Кулать.)* Ăнсăртран, çын сисиччен...

Микула *(пуçне пăркалать).* Çу-ук. Службăри çын мар вёт эпё. Рядовой колхозник. Тата унта-кунта ёçлекеленё чух та хысна укçине ал тупанё çумне пёр пус та çыпăçтарса курман. Тав турра, вăл енчен таса. Тёрмери пурнăç аптрасах каймасть, теççё те, мана килте пурăнни ытларах килёшет. Анчах çапах та акă... *(Ывăннă лаша пек сывласа ярать.)*

Шаклашкин. Çапах та — мён? Пёр пуçланă сăмахна каласа пётер ёнтё.

Микула. Пёлетён-и... эпё тин çеç судран тухрăм. Суд турёç паян мана...

Шаклашкин. Су-уд?!

Микула. Суд çав. По всем правилам. «Именем Российской Социалистической Федеративной Советской Республики...»

Шаклашкин. Ан сўпёлтет-ха! Пустуй калатăн пуль?!

Микула. Пустуй пулнă пулсан ырлăхчё те-ха, пустуй мар çав, Якур Митрич! Çёр çинче «Уголовно-процессуальный кодекс» текен питё хаяр кёнеке пур. Çав кёнекери статьясем тăрăхах айăпласа приговор йышăнчёç. Принуд пачёç. Çулталăк хушши 20 процент тўлемелле турёç.

Шаклашкин. Хайхи, тип алимент тенине ёнтё... Ай-ай-ай!

Микула. Çапла пулать ёнтё.

Шаклашкин. Анчах мён пирки вара, мёнле айăпшăн?

Микула. Нимшён те мар. Пёр çётёк карттусшăн. Чăнах, чăнах, ан тёлён, ухмаха ернё çын çине пăхнă пек ан пăх, тёрёссинех калатăп — çётёк карттусшăн суда лекрём!

Ш а к л а ш к и н *(кулам пекки туса).* Эс юптарма вĕренсе кайнă пулас, Микулайккă! *(Ăна хулпуççинчен лăпкаса илет.)* Эсĕ ача чухнех тĕрлĕ шӳтсем тума пит ăстаччĕ те, халь те пăрахман иккен çав йăлана. Астăватăн-и: пĕррехинче эсĕ сумка ăшне чиксе шкула кушак çури илсе пынăччĕ... Урок вăхăтĕнче ăна хӳринчен турта-турта çухăртма тытăнтăн: мяу! мяу!.. Ачасем ахăлтатса кулаççĕ, учительница ниçта кайса кĕме пĕлмест, унăн-кунăн чупкалать... Вăл аяккалла кайсанах, эсĕ кушакне каллех çухăртрăн... Сана уншăн чут шкултан кăларса ямарĕç...

М и к у л а. Ача-пăча ухмахланать çав...

Ш а к л а ш к и н. Халь те темле юптарса калаçатăн-ха. Тен, ăнланмалларах калăн? Çĕтĕк карттусшăн мĕн сучĕ пултăр!

М и к у л а. Калама та пулать те, чăнах ăш хыпса тухать-ха манăн, пыр типсе ларчĕ, чĕлхе те çаврăнмасть.

Ш а к л а ш к и н *(сиксе тăрать).* Сана эпĕ паçăрах буфета чĕнтĕм-иç! Укçи пирки ан пăшăрхан эсĕ, укçи пур, вăтăр çул курман юлташа тĕл пулнă ятпа хытса тăмастăп ĕнтĕ! Аслă бухгалтерта ĕçлетĕп те, шалуне самаях параççĕ мана... Атя, чĕлхе-çăвар çаврăнмалăх сыпăпăр тя, каласа парăн вара хăвăн хуйху çинчен. Тен, эп сана мĕнпе те пулин пулăшма пултарăп-и?

М и к у л а *(тăрать).* Ах, темле-çке, темле! Нихçан шутламаннине куртăм вĕт. Ку таранччен эпĕ судра свитетлĕ те пулса курманччĕ! Пĕтĕм ял кулать халь манран, арăм та çисех ярать... Çав çĕр çăтман çĕтĕк карттус пирки!

Ш а к л а ш к и н *(Микулана хулĕнчен тытать).* Атя, атя, пĕрер курка сăра ĕçсен каласа парăн...

Сулахаялла тухса каяççĕ. Çутă сÿнет. Кăшт тăхтасан чаршав уçăлать. Ялти пÿрт ăшчикки. Малтан тĕттĕмрех. Алăк патĕнчи кравать çинче хĕрарăм çывăрать. Ку—Микула арăмĕ Урине. Сцена хыçĕнче ÿсĕр Микула тăрăшсах юрлани илтĕнет:

Упи каçман çырминчен
Эпир каçса килтĕмĕр.
Упи тухман вăрманчен
Эпир тухса килтĕмĕр...

Çенĕк алăкне питĕ хытă шаккаççĕ. Урине вырăн çинчен сиксе тăрать, çутă çутса ярать.

**Урине.** Тинех килчĕ пулас хайхи сĕтĕрĕнчĕк! Каллех хыпса лартнă, эсрел пуçĕ!

Алăка тата хытăрах шаккаççĕ.

**Микула сасси.** У-уç, Урине! Хуçа килчĕ!
**Урине.** Уçаççĕ, ан вилсе кай!

Тухса уçать, унтан Микулапа пĕрле кĕрет те часрах вырăн çине выртать.

**Микула** *(алăк патĕнчех чарăнса тăрса).* Страсте, Урине Екимовна! М-ман килес! *(Пуçĕнчи карттусне хывса стенари пăтаран çакма кармашать, хăй юрлать.)*

Хĕвел анать, каç пулать,
Выляйрасчĕ хĕрпеле.
Кĕтни харам пултăрах,
Кĕтни харам пултăрах...

**Урине** *(пуçне çĕклесе).* Тархасшăн ан янра, ачана вăрататăн! Кÿпсе килтĕн пулсан — вырт та çывăр часрах!

**Микула** *(çаплах карттуспа тăрмашать).* Ника-

кой та янрамастăп эпĕ, юрлатăп çеç. Чун савăннипе.

Урине. Мĕн пулчĕ вара çав териех савăнмалли?

Микула *(карттусне тинех çакать те малалла иртсе пукан çине ларать).* А мĕншĕн савăнас мар-ха манăн? Уксах Якку менелникĕнче пултăм. Чи çывăх та юратнă юлташ вăл манăн. Юлташ кăна та мар — тус! Миллай друг, теççĕ вырăсла. Хисеплет мана, çавăнпа чĕнчĕ. Килсе чĕнчĕ! Анчах Митраппана чĕнмен, юнашар пурăнаççĕ пулин те! Мĕншĕн тесен лешĕ унăн хур амине çапса сусăртнă. Эп ун йышши çвер мар-ха. Çавăнпа хисеплет вăл мана. Маттур!

Урине. Тем маттурĕ пур ĕнтĕ сан Якку çумĕнче! Пĕр ĕçме тытăнсан, сан пекех тути урлă сурайми пулать. Пурне те пĕр калăпа тунă сире!

Микула. Э-э, ун пек ан кала, карчăк. Якку — çын вăл, чăн-чăн этем, пĕр-пĕр матяпайккă мар. Хăй уксах пулин те, ăсĕ-пуçĕ уксах мар унăн, çук! Кам вăл халь пирĕн колхозра? *(Пўрнисене хутлатса шутлама тытăнать.)* Техник, механик, электрик тата... тем шуйттанĕ те! Мĕн пĕчĕкренпех ăслăччĕ. Эпир ача чухне тăвакан çил арманĕсем хушшинче унăн арманĕсем пуринчен вăйлăрах хăлтăртататчĕç. Во! Ешĕл малалла вĕренме май килнĕ пулсан, пи-ит чаплă инженер пулатчĕ... Ну, халь те антрамасть-ха. Пур енчен те маттур, эс мана хирĕç çаптарса ан вырт. Вăйлă пурăнать. Арăмĕ те молодеццă, тăхăр ача турĕ, вуннăмĕшĕ те пулĕ-ха, анчах хăй халь те хĕр пекех. Питçăмартисем анис улми пек, унта-кунти те çап-çаврака... Канихват пек! *(Урине çине пăхса.)* Хăшпĕрисем пек мар ĕнтĕ!

Урине. Ан палкаса лар, çывăр выртса!

Микула. Санпа юнашар-и?

Урине. Асту, сан пек пьянчука çума выртраратăп пуль!

Микула. А ешӗл манӑн ҫыварас килмест пулсан мӗн тумалла? Юрлас килет пулсан, э? *(Юрлама тытӑнать.)*

Ашшӗ хаяр теесҫӗ,
Алтӑр тӗпӗ сыв пултӑр.
Амӑш хаяр теесҫӗ,
Курка тӗпӗ сыв пултӑр...
Эй, аппа, тус аппа...

Урине. Тьху, эсрел пуҫӗ! Ялан ҫапла вара — ӑҫтан та пулин кӳпсе килет те ҫӗрӗпе канӑҫ памасть. Ман ҫыварас пулать, ыран ирех ӗҫе каймалла!

Микула. Ҫыварах, ара, ҫывӑр! Харлаттар! Эп сана тӗкӗнместӗп вӗт. Ним тума та кирлӗ мар эс мана. Тӗп-тӗрӗссипе каласан, манӑн халь санран хаклӑраххи пур...

Урине *(пуҫне ҫӗклесе)*. Кам? Энтри Хветӳҫҫи-и? Каларӗҫ-ха мана, пӗркун лавкка хыҫӗнче иксӗр ӗҫсе тӑраттӑрччӗ, тет. Каях эппин ун патне, чармастӑп!

Микула. Такой слово не скажи, карчушка. Хветӳҫҫи ҫинчен сӑмах пымасть. Ун патӗнче икӗ тракторист хваттерте пурӑнаҫҫӗ, мансӑр та ҫитет ӑна. Тата, эс пур чух, мана нимӗнле Хветӳҫҫи те кирлӗ мар. Никамран та хаклӑ эс маншӑн.

Урине. Апла пулмасӑр! Шан сана!

Микула. Ҫаплах, тӗп-тӗрӗс калатӑп, Урина Екимовна.

Урине. Ма-ха эппин «санран хаклӑраххи пур» терӗн?

Микула. Хе-хе-хе... Пур, конешнӑ! Акӑ вӑл... *(Хӗвӗнчен пӗр чӗрӗк эрех кӑларса, ӑна чуптуса илет.)* Якку патӗнчен ҫаклатса тухрӑм... Ҫул курки вырӑнне...

Урине. Эх, намӑссӑр! Лере хыпни ҫитмест, тата

киле те вăрласа килтĕн пулать! Кĕççе пит! Кам пурши ун пек хăтланакан?! Каласа паратăп-ха акă Якkуне...

Микула. Каласам ара. Хăратăп, тетĕн-им? Анчах алла лекнĕ япалана вĕçертместĕпех. Çылăх пулать.

Урине. Татах хыпатăн-и?

Микула. Ма хыпас? Эп пĕ-ĕчĕккĕн, переке-етлĕн... *(Чĕрĕк кĕленчине тĕпĕнчен çапать, хытах юрласа ярать.)*

Пиччĕш хаяр тееççĕ,
Черкке тĕпĕ сыв пултăр.
Инкĕш хаяр тееççĕ,
Енчĕк тĕпĕ сыв пултăр...

Урине. Пăрах ӳлеме! Ачана вăрататăн, терĕм-иç сана, мур пуçĕ! Ачи ахаль те сывах мар пулас-ха!

Микула. А эсĕ ан вăрат. Лăпка-лăпка çывăрат. На то эсĕ амăшĕ... *(Эрехне ярса ĕçет те татах юрлама пикенет: «Эй, аппа, тус аппа...» Унтан пукан çинчен урайне кĕпсĕрт! ӳкет.)*

Урине *(пуçне çĕклет)*. Тинех тăранчĕ пулмалла шуйттан карланки! Ирччен çывăрать пуль-ха ĕнтĕ. *(Тăрса çутă сӳнтерет те каллех çывăрма выртать.)*

Пĕр хушă шăп пулать. Сцена çинче тĕттĕм. Унтан Микула харлаттарни илтĕнет: хăр-хар-р.. хăр-хар-р... Тата тепĕртак тăрсан Микула вăраммăн йынăшса яни илтĕнет.

Микула *(тĕттĕмре)*. Ы-ых!.. Карчăк! Урине! *(Урине ăна хирĕç чĕнмест.)* Урине, тетĕп! Тур çырлах, ăçта вара эпĕ? Хам айра — хытă, пуç айĕнче — хытă, пур енче те алла хăма лекет... *(Кăшкăрать.)* Урине, теççĕ!

Урине *(çилĕпе.)* Мĕн çухăрса выртатăн тата?

Микула. Кала-ха, эп килте-и?

Урине. Килтех, килтех, шуйттан! Сана, мĕн, Энтри Хветӳççи патĕнче выртнă пек туйăнчĕ-им?

Микула. Çук, ун пек мар, нӳхрепре выртнă пек туйăнчĕ. Эс ман мăя пуртăпа касса татнă та хама нӳхрепе пăрахнă пек.

Урине. Ан ухмахланса вырт. Çывăр! Ачана вăрататăн. Чирлĕ вăл.

Пĕр хушă шăп пулать.

Микула. Урине! Урине, тетĕп!

Урине. Тата мĕн кирлĕ пулчĕ?

Микула. Эс мана юрататăн-и?

Урине. Тьху, анра-сухра! Тупнă сăмах.

Микула. Юрататăн-и, тетĕп!

Урине. Ан çыпăç, тархасшăн, çывăрас килет.

Микула. Ан вăрç-ха, Урине. Эс мана юратнине пĕлетĕп вĕт эпĕ. Шутсăр хытă юрататăн...

Урине. Пĕлетĕн пулсан, мĕн лăркаса выртатăн тата?

Микула. Эп... эп вилетĕп. Çавăнпа калатăп. Юлашки хут...

Урине. Мĕн — юлашки хут?

Микула. Тархасшăн мухмăр уçтар. Вилетĕп.

Урине. Вилĕсĕн! Эп айăплă-им уншăн? Сысна пек хыпса çӳреме кам хушать сана?

Микула. Мухмăр уçтар, тетĕп. Санăн яланах пур вĕт. Мĕн те пулин пар. Чун тухать.

Урине. Çук манăн нимĕн те!

Микула. Суятăн, пур. Эс тĕплĕ çын, перекетлĕ. Тархасшăн, хĕрхен, тетĕп.

Урине. Вăт-тăк çыхланчĕ, явăл! Калаççĕ сана

нимĕн те çук тесе! Кăмака хыçĕнче краççын кĕленчи çеç тăрать.

Микула. Ах, Урине... Вунсакăр çул пĕр-пĕрне юратса пурăннă хыççăн халь ĕнтĕ эс мана краççын ĕçтерсе вĕлерес тетĕн-и? Тинатурат пулсан татахчĕ хуть, ăна тӳсме пултарăттăм...

Урине. Тинатурат мар сана, тикĕт ĕçтермелле! Ых, чунилли! Каçхине чĕрĕк пурччĕ-иç санăн, хыпса та ятăн-им?

Микула *(вăшт кăна тăрса ларать).* Мĕнле чĕрĕк?!

Урине. Якку патĕнчен вăрласа килни, намăссăр!

Микула *(ура çине сиксе тăрать).* Э-те-те-те... Чăнах та-çке! Эп ун çинчен мансах кайнă... *(Васкасах çутă çутать те сĕтел çинче чĕрĕк тăнине курать, ăна ярса илсе кăкри çумне пăчăртать.)* Ну, Урине, чăн та юрататăнах çав эс мана! Ылтăн хĕрарăм эсĕ! Сан пекки тĕнчере те çук пуль урăх... *(Ун патнелле пырать.)* Кӳр-ха, эп сана çурăмăнтан та пулин лăпкаса илем уншăн. Эх, мăнтарăн...

Урине. Кай кунтан, ан çыпăç!

Микула. Юрататăп-çке эп сана... *(Хăрах аллипе ыгалама тăрать.)* Урина Екимовна, чунăм...

Урине *(упăшкине тапса ярать).* Кай кунтан, çĕр çăтманскер! Эрехне тупрăн пулсан -- кӳп те вырт! Мана ан кансĕрле! Атту-тăк аллунти чĕрĕкне халех туртса илетĕп те кăмака çумне çапса çĕмĕретĕп, тĕсĕ те ан пултăр! Выртса макăр вара...

Микула. Юрĕ-çке, юрĕ, карчушка. Ун пек хаклă япаласемпе шутить тума юрамасть... *(Сĕтел патне пырса эрехне ярса ĕçет.)* Ухх! *(Ларать, хырăмне шăлкалать.)* Шерпет! Çĕçĕ пекех касса анса кайрĕ. Ай, лайăх! Халь ĕнтĕ туртса яма та пулать. *(Кĕсйисене хыпашлать.)* Ăçта пулнă вара ман пирус? Каçхине

Якку патне кайнă чух кăна лавккана кĕрсе «Аврора» тенине илсе тухрăм-çке? Ниушлĕ туртса ячĕç Якку хăнисем? Эккей... Стрелоксем нумайччĕ çав унта. Пăх-ха эс ăна, э... Пиншак кĕсйинче-ши? *(Тăрать те тăнт-тант уткаласа алăк патнелле, тумтирсем çакăнса тăнă çĕрелле каять. Аллине пиншак кĕсйине чикме тăрать кăна — пăтара вĕр-çĕнĕ кăвак карттус курать. Пĕр хушă питĕ тĕлĕнсе пăхса тăрать, куçĕсем тĕрĕс курмаççĕ пуль теге, вĕсене шăлкалать.)* Урине! Урине, тетĕп!

Урине. Ах, турă, хăçан лăпланатăн эсĕ!

Микула *(пăтари карттуса илсе çавăркалать).* Мĕнле карттус ку? Кам карттусĕ?

Урине *(пăхмасăрах).* Камăн пултăр, хăвăннах пуль. Пăх, ара, лайăхрах.

Микула. Чим-ха, чунăм, чим-ха, постой, вырăсла каласан. Ман карттус мар ку. Ун пекки манăн ĕмĕрне те пулман... *(Урине умне пырса тăрать.)* Уç-ха куçна, пăх лайăхрах кунталла...

Урине. Ну, мĕн, мĕн тата? Ых, шуйттан этемми... *(Тăрса ларать, куçĕсене сăтăркалать.)*

Микула *(хаярланса).* Кала, кам карттусĕ ку?! Ăçтан килсе лекнĕ вăл кунта?

Урине. Эп ăçтан пĕлем...

Микула. Эс пĕлмесен, кам пĕлтĕр-ха тата? Сансăр пуçне, каçхине килте никам та пулман пуль?

Урине *(хăрама пуçласа).* Паллах, пулман. Эс тухса кайсан, эпĕ чуста хутăм та тӳрех ачапа çывăрма выртрăм.

Микула *(тата ытларах хаярланса).* Ачапа-ши? Асту-ха лайăхрах! Аса ил!

Урине. Кампа пултăр тата? Атте турăпа выртнă-им эпĕ!

Микула *(кăшкăрса ярать)*. Суятăн, шуйттан кĕ-венти! Ак çак карттус хуçи пулнă сан патăнта!

Урине. Эс мĕн, ĕçе-ĕçе пуçĕпех ухмаха тухса кайрăн-и? Мĕскер сӳпĕлтететĕн?!

Микула *(аллинчи карттусне çавăркаласа)*. Э, çук, савнă карчăк Урине, сӳпĕлтетни мар кунта! Эс мана ан пӳл, тӳрре тухма та ан тăрăш! Улталаймăн!

Урине. Мĕн тӳрре тухмалли пур манăн? Эпĕ сан пек çĕрĕ-çĕрĕпе ял тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳреместĕп пуль?

Микула *(кăшкăрать)*. Ял тăрăх çӳреместĕн, анчах уншăн сан патна киле килеççĕ!

Урине *(сиксе тăрать)*. У-у, ухмах, уй тăмани! Ăçтан пырса кĕчĕ сан пуçна ун пек тискер шухăш?!

Микула *(карттусне силлесе)*. Ак çакăнтан! Ак çак карттусран! Эс мана ухмах тетĕн те, çапах та эпĕ мĕнрен мĕн пулнине чухлатăп-ха!

Урине. Мĕн чухлатăн?

Микула. Эп ĕнер Якку патĕнче хăналаннă вăхăтра сан патăнта урăх çын пулнă! Ют кушак ман киле хăйма вăрлама килнĕ! Еркĕн!

Урине. Эс... эс куна чăнласах калатăн-и е куласшăн-и манран? *(Тарăхнипе хашкама ерет, ним тума пĕлмест.)*

Микула. А мĕн тата, эп шӳт тăватăп тетĕн-им? Тĕрĕссине калатăп! Акă, манăн вещественнăй доказательство пур! *(Карттусне Урине пичĕ патнех илсе пырса силлет.)* Ют çын карттусĕ, пирĕн килте нихçан пулман япала! Ну? Кала, камăн вăл, камăн? Кала, теççĕ сана! Мĕнле еркĕн манса хăварчĕ ăна?!

Урине. Асту, Микула, кун пек мăшкăлланăшăн эп сана туршăн та çатмаруççи илсе туту урлă паратăп!

Микула. Мана-и?!

Урине. Сана çав! Мĕн палкатăн кирлĕ мара?

Микула. Эс мар-ха, малтан эп паратăп! *(Кĕтмен çĕртенех аллинчи карттуспа Уринене çапать.)* Ак сана! Ак сана!

Урине *(каялла сиксе илет, вĕресе каять).* Мĕн хăтланатăн эсĕ?! Мĕншĕн хĕнетĕн?!

Микула *(ун çывăхнелле пырса).* Ак çак карттусшăн! Эп çук чухне ют арçынпа ашкăннăшăн!

Урине. Эй, ухмах, эй, тăмана...

Микула *(кăшкăрать).* Вĕлере-еп! Кала, кампа ыр куртăн çĕркаç? Кампа? Эп сана ку таранччен йĕркеллĕ арăм тесе пурăннă, юратнă, ачашланă, анчах эсĕ ав мĕнлескер иккен! Еркĕнсем çӳреççĕ сан патна! Ы-ых, хура юн! Акă, кур, мĕн тăватăп эпĕ сан еркĕнӳ манса хăварнă япалапа! *(Шăлне çыртса, эхлетсе, карттуса лăр-лар çурать, йытă туллană пек туллать ăна.)* Акă, акă! *(Карттус çĕтĕкне урайне пăрахса таптать.)*

Урине. Эй, ухмах, тĕнче ухмахĕ! Сана хăвна çавăн пек урайне пăрахса таптамалла! Тăм çамка...

Микула. Эс тата мана хирĕç çаптарса тăрагăн-и?! Тухса кай ман килтен! Халех тухса кай! Кирлĕ мар мана сан пек аскăн хĕрарăм! Сан шăршу та ан пултăр кунта!

Урине *(ним чухлĕ те хăрамасăр).* Мана та сан пек пьянчук кирлĕ мар, йăлăхса çитрĕм санпа пăтранса пурăнма, эсрел пуçĕ! Тухатăп та каятăп анне патне, урăх ура та ярса пусмастăп сан килне! Çитет мана кун чухлĕ асапланнипе, май таранах тăраннă эпĕ! *(Вăскасах вырăн çинчи пĕчĕк ачине утиялпа чĕркесе тытать.)* Пурăнах ахăрса! Хуть те мĕн хăтлан! *(Алăк патнелле утать.)* Йытă эсĕ, урнă йытă, урăх никам та мар!..

Микула *(ун хыççăн пырса).* Ачана парса ямастăп! Тавай кунта ачана!

Урине. Ан çулăх! *(Микулана тĕртсе ярать.)* Асту,

пирӗн хыҫҫӑн ан пынӑ пултӑр! Пуҫна ҫапса ҫуратӑп! Пӳтсӗр, пьянчук, шӑршлӑ эрех пички!

Урине алӑка шӑлт-шалт уҫса хупса тухса каять. Микула пӗр хушӑ тайкаланкаласа тӑрать, унтан хӑй ҫурса тӑкнӑ карттус ҫӗтӗкне урайӗнчен илет те ҫавӑркаласа пӑхать.

Микула. Пӗлесчӗ-ха ҫапах та... Кам карттусӗ пулнӑ-ши ку? Мӗнле качака таки килнӗ ман арӑм патне эп ҫук чухне? Э-эх, тытнӑ пулсанччӗ! Ну, тӗветтӗм пӗрре, ну, тӑн кӗртӗттӗм!.. Но ничево, эп ун хуҫине пурӗпӗрех тупатӑп-ха! Килтен киле ыйтса ҫӳретӗп те, ҫавах тупатӑп! Мӑшкӑллаттармастӑп хамран. Шалиш! *(Сӗтел умне пырса тӑрса чӗрӗк кӗленчине тытса пӑхать.)* Эх, миллай! Санпа иксӗмӗр кӑна юлтӑмӑр пулать эпир... Ну, юрӗ-ҫке. Аптрамӑпӑр... *(Юлашки эрехне ярса ӗҫет те сӗтел ҫине чавсаланса ӗнерме тытӑнать: «Амӑш хаяр тееҫҫӗ, курка тӗпӗ сыв пултӑр...» Ларнӑ ҫӗртех ҫывӑрса каять.)*

Ҫутӑ сӳнет. Шӑп. Унтан Микула харлаттарни илтӗнет. Хӑр-хар-р... хӑр-хӑр-р... Лаша тулхӑрнӑ пекех! Каллех ҫутӑ ҫутса ярсан, эпир Микула кравать урлӑ выртса, урисене ҫӗрелле усса, аллисене ҫунатсем пек ик еннелле сарса пӑрахса ҫывӑрнине куратпӑр. Пит тутлӑ ҫывӑрать. Тул тахҫанах ҫутӑлнӑ ӗнтӗ, хӗвел те ҫӳле хӑпарнӑ. Картишӗнче автан авӑтать, пахчара кайӑксем чӗвӗлтетеҫҫӗ. Ырлӑх! Кӑшт тӑхтасан уҫӑ алӑкран Уксах Якку — хурарах патвар ҫын уксахласа кӗрет. пуҫӗнчи кивӗ карттуса хывса пӑтаран ҫакса ярать, Микула патне пырса тӑрать.

Якку. Микула! Микула, тетӗп!

Микула *(йынӑшнӑ пек)*. Ы-ы-ыхх...

Якку. Тӑр-ха! *(Микулана сӑмсинчен тытса туртать.)* Тӑр тавай, хӑҫанччен ҫывӑрма шуту пур?

Микула *(палт! тӑрса ларать)*. А? Мӗн?

Якку. Ним те мар. Эп килтӗм.

М и к у л а. Э-э, Якку-ҫке...

Я к к у. Мӗн пулнӑ вара сирӗн? Сансӑр пуҫне, килте никам та ҫук, пур алӑксем те яриех уҫӑ, хуть те тракторпа килсе кӗр. Выльӑхсем пурте килте, кӗтӗве те яман пулмалла паян... Эсӗ хӑвна ҫырмана ҫӗклесе кайса пӑрахсан та сисес ҫук. Мӗн пулнӑ?

М и к у л а *(пуҫне пӑркалать)*. Пӗлместӗп... Урине ҫук-им?

Я к к у. Курӑнмасть.

М и к у л а. Ха... Мӗнле-ха апла? Ӑҫта кайнӑ-ши вӑл?

Я к к у. Ӑна санран ыйтас пулать. Пуҫ ыратмасть-и?

М и к у л а. Ҫурӑлса тухать.

Я к к у. Ҫапла пуль, терӗм ҫав. Ҫавӑнпа чиксе килес, терӗм. Хамӑн та ырах мар. Атя, тӑр, пуҫсене кӑштах текущи ремонт тӑвӑпӑр. Акӑ, пур манӑн... *(Чӗрӗк кӗленчи кӑтартать.)*

Микула сиксе тӑрать, иккӗшӗ те сӗтел умне пырса ларақҫӗ. Якку эрех кӗленчине уҫса стакан ҫине ярать, малтан хӑй ӗҫет, унтан Микулана тыттарать. Лешӗ шӑршлать те пит-куҫне хӑрушла пӗркелентерсе илет.

М и к у л а. У-у, шуйттан эмелӗ! Ӗмӗрне пӗр ҫӑвар сыпмӑттӑм! *(Пӗтӗм кӗлетки пе чӗтренсе илет.)* Кам шухӑшласа кӑларнӑ-ши ӑна...

Я к к у. Ӑна-и? Вырӑссен чаплӑ писателӗ Левонти Толстов ҫырса кӑтартнӑ тӑрӑх, эрехе ӑна чӑнах та шуйттан шухӑшласа кӑларнӑ. Мӑйракаллӑ шуйттан. Лешӗ ара, виҫ кун пӗр урӑлмасӑр ӗҫнӗ хыҫҫӑн пирӗн куҫа курӑнаканни. Ҫавӑнпа Толстов хӑй те ӗҫмен, пире те хушман.

М и к у л а. Асту, ӗҫмен пуль! Ӗнен эсӗ писательсене! Вӗсем тем те ҫырса кӑтартӗҫ. Вӗсен ӗҫӗ ҫавӑ. Пӗри капла ҫырать, тепри апла. Акӑ, сӑмахран кала-

сан, эпӗ хӑш чух чӑваш поэчӗсен кӗнекисене вулакалатӑп. Ачасем шкултан илсе килеҫҫӗ те... Вӗсем эрех пирки пачах урӑхла ҫыраҫҫӗ, тӑванӑм.

Я к к у. Мӗнле ҫыраҫҫӗ?

М и к у л а. Хӑш-хӑш сӑввисене пит лайӑх астуса юлсаттӑм-ха. Мӗнлеччӗ ҫав? *(Ҫамкине сӑтӑркалать.)* Чӗлхе вӗҫӗнчех-ха...

Я к к у. Эрехне сыпса ил пӗртак, тен, аса илме пулӑшӗ сана?

М и к у л а. Эрехӗ тармӗ-ха вӑл... Э, аса илтӗм! Итле акӑ, мӗн ҫырать пӗри:

Тип апат шӑвармасӑр анмасть,
Туй сӑрасӑр, эрехсӗр пулмасть...
Ҫич инке чупкала ҫеҫ тӑрать,
Витрепе вӑл йӑтать пыл-сӑра.
Арҫынсем виҫӗ рет хушшипе
Ярӑнаҫҫӗ тулли четвӗртпе,
Сӑрине тыттараҫ куркапа,
Эрехне... чим-ха, чим! — стаканпа!

Илтрӗн-и? Эрехне — стаканпа!

Я к к у. Вӑйлӑ каланӑ. Маттур поэт.

М и к у л а. А эсӗ кунта Толстов тесе ларатӑн! Хамӑр писательсене итлес пулать! *(Черккери эрехе шӑршлать те чӗтренсе илет.)* Шухӑшласа кӑларакане шуйттанах пулнӑ пуль те-ха...

Я к к у. Ытах кӑмӑла каймасть пулсан — ан ӗҫ эппин, мана ытларах лекет...

М и к у л а. Ах, ӗҫмесен те май килмест-ҫке! Вилес пулать... *(Ӗҫет.)*

Я к к у. Ҫапла ҫав. Начар пирӗн пурнӑҫ. Арӑмсем вӑрҫаҫҫӗ. Ман Анюк ирех market: паян та ӗҫсен, санне тепӗр уруна ҫапса хуҫатӑп, терӗ. Вӑл хӑй сӑмахне тытма та пултарать.

М и к у л а. Эпир те ҫёрле янрарӑмӑр пулмалла. Кӑшт ҫеҫ астӑватӑп... Тухса тарман-и вӑл манӑн?

Я к к у. Э, килти кайӑк ӑҫта кайтӑр ёнтё! Ме, ёҫ тепёртак... *(Ярса парать.)* Ёнер эсё ман патра кӑшт ытлашширех ятӑн пулмалла ҫав. Ывтӑнса каякан пултӑн. Килне те ман шӑллӑм леҫсе ячё сана. Карттусне те хӑвӑнне мар, манӑнне тӑхӑнса кайнӑ. Ав, эп сан карттусна илсе килсе ҫакрӑм...

«Карттус» тенине илтсен Микулай картах сикет, ёҫме тытӑннӑ эрехёпе чыхӑнса каять, стаканне ҫӑварё патёнчен пӑрса Якку ҫине тӑнсӑр сурӑх пек пӑхать, куҫёсене мӑчлаттарать...

М и к у л а. К...карттус? Мёнле карттус?

Я к к у. Хӑвӑн карттусу. Ав, ҫакӑнса тӑрать. Калатӑп-ҫке, ёнер эсё ман ҫёнё карттуса тӑхӑнса килнё, хӑвӑн кив карттусна ман пата пӑрахса хӑварнӑ. Ӳсёрпе пулать вӑл ун пекки, тёлёнмелли ҫук уншӑн. Пёррехинче эпё те ҫавӑн пек, хӑнана кайсан, ҫын тӑлӑпне тӑхӑнса килнёччё... Ёҫсе яр тата, ма ёҫместён?

М и к у л а. Тем, анмасть-ха.

Я к к у. Слабӑланнӑ эппин эсё. Тепёр чух эп хам та ҫавӑн пек аптратӑп... *(Кравать айнелле кӑтартса.)* Ай-уй... Мён ҫётёкё выртать ара унта?

М и к у л а. Ӑҫта?

Я к к у. Ав, кравать айёнче.

М и к у л а. Пёлместёп. Арӑм вараланнӑ ача кипкине пӑрахса янӑ пуль.

Я к к у. Чим-ха, чим... Кипке мар-ха ку! *(Кравать патне чупса кайса хӑйён ҫурса пётернё карттусне туртса кӑларать.)* Микулай, тусӑм-тӑванӑм, ара, ку ман карттус вёт!..

М и к у л а. П...пёлместёп. *(Чётре-чётре, стаканри юлашки эрехе ёҫсе ярать.)*

Я к к у *(карттус ҫётёкне силлесе).* Ман карттус!

Ку... ку мĕне пĕлтерет, тусăм-тăванăм?! Мĕне пĕлтерет, тетĕп!

М и к у л а. Каларăм-çке сана, пĕлместĕп тесе.

Я к к у *(тарăхнăçемĕн тарăхса).* Епле пĕлместĕн пулать?! Эс тăхăнса килнĕ вĕт ăна! Хăвăн лăпăр-лапăрна пирĕн пата пăрахса хăварнă, манне вăрă пек тăхăнса килнĕ...

М и к у л а. Астумастăп ун пеккине.

Я к к у. Астумастăп парам эп сана! Намăссăр! Пăх-халĕ, мĕн хăтланать вăл! Эп ăна, этем выранне хурса, хăнана чĕнетĕп, вăл ман патăмра сысна пек кўпсе лартать, ним чухлайми пулнипе манăн вĕр-çĕнĕ карттуса тăхăнса каять те кайран ăна хапха айĕнчен вĕрекен усал йытă пек тулласа тăкать! Мĕншĕн? Кала, мĕншĕн?!

М и к у л а. Курман эп сан карттусна...

Я к к у. Епле курман? Ак çакă мĕн вăл, мĕн?

М и к у л а. Пĕлместĕп.

Я к к у. Мĕншĕн çурса тăкрăн? Ку карттуса арăм мана менелник ячĕпе илсе панăччĕ, парне вăл манăн, пĕлетĕн-и? Маншăн вăл чи хаклă япала пулнă!

М и к у л а *(тăрук паттăрланса сиксе тăрать).* Тытман эп сан карттусна! Çавăнпа та ан çулăх ман çума!

Я к к у *(карттус çĕтĕкне силлесе).* Ак ку мĕн вара? Çакă мĕн?

М и к у л а. Пĕлместĕп! Курман, илтмен! Ўсĕр пуçупа, арăму çине тарăхса, ху çурса тăкнă пуль, эп пĕлеп-и! Эс хулиган вĕт, высшей марки! Пьянчук тата...

Я к к у *(кăшт тытăнса тăрсан).* Ах, эс апла-и? Эс...

М и к у л а. Çапла эпĕ! Тухса кай кунтан, мĕн тума сĕтĕрĕнсе килтĕн ман пата? Кам чĕннĕ сана? Тухса кай! *(Урипе тăрст! тапса илет.)* Эккей, тупăннă...

Я к к у. Ну, пулать те иккен сысна...

**М и к у л а.** Эсӗ ху сысна! Йоркширски! Пошол вон кунтан!

**Я к к у** *(тарăхнипе чĕтреме ерсе).* Ну, тусăм-тăванăм... Эп сана куншăн ахалех каçаратăп тесе ан шутла!

**М и к у л а.** Мĕн шутламалли пур манăн? Хам килте халлĕхе хам хуçа! Тухса вăркăн, теççĕ! Пошшол!..

Микула Яккăва кăкринчен чышсах тĕртсе ярать, Якку, каялла чакса пырса, алăка çапăнать, анчах çав самантрах хулпуççисене çĕклет те Микула çине сиксе ларма хатĕрленнĕ тигр пек пырать.

**Я к к у.** Ну, Микулай, тӳссе кăна тăр халь! Эп сана, кĕççепите, халех пашалу тăватăп!

**М и к у л а.** Çыхланса пăх-ха! *(Хăй, шикленсе, пĕрикĕ утăм каялла чакать.)*

**Я к к у** *(Микулана çĕтĕк карттуспа пуç урлă çапать).* Ак сана! Ак сана! Мăшкăллаттармастăп!

**М и к у л а** *(хирĕç çапать).* Ку сана пултăр!

Микулапа Якку чăнласах çапăçма пуçлаççĕ, унтан, пĕр-пĕринпе çыхланса, иккĕшĕ те çĕре ӳкеççĕ те урайĕнче кăлтăрмач пек çаврăнма тытăнаççĕ. Пĕрре пĕри çиеле пулать, тепре — тепри. Тĕвеççĕ кăна пĕрне-пĕри. Икĕ арăслан çапăçнă пек. Хушшăн-хушшăн: «Ы-ых! о-охх! Ан çырт! Хăлхана ан тив! Кĕпене ан çур!» тесе кăшкăрни çеç илтĕнет. Хытă тăрăшаççĕ! Сасартăк алăкран **У р и н е** кĕрет те, урайĕнче йăваланакан арçынсене курса, шак! хытса тăрать. Ним тума пĕлмест вăл...

**У р и н е** *(кăшкăрать).* Чарăнăр! Мĕн хăтланатăр эсир?! Чарăнăр тетĕп!

Арçынсем çаплах йăваланаççĕ-ха.

**М и к у л а.** Сăмсаран ан çырт! Йытă!

**Я к к у.** Пыршу-пакартуна кăларатăп, явăл ратти!

У р и н е *(чупса пырса вӗсене пӗр-пӗринчен уйӑрма пикенет).* Чарӑнӑр, теҫҫӗ! Пӑрахӑр ҫапӑҫма! Пӗр-пӗрне вӗлерсе пӑрахатӑр вӗт капла! Ответне кам тытӗ? Чарӑнӑр!

М и к у л а. Ан хутшӑн, Урине! Ҫывӑха ан кил!

Я к к у. Эпир хамӑрӑнне хамӑр пӗлетпӗр!

М и к у л а. Манӑн ӑна пурӗпӗрех вӗлермелле паян!

Я к к у. Эпӗ та сан ухмах пуҫна ҫапса ҫурмасӑр тухса каймастӑп! Ман сатаччӑ ҫавӑн пек!

У р и н е. Тьху, шуйттансем! Иккӗшӗ те ир-ирех ӗҫсе лартнӑ иккен! Ну, чимӗр-ха, эп сире халех урӑлтаратӑп акӑ!

Урине алӑкран чупса тухатъ те пӗр-ик самантранах тулли шыв витри ҫӗклесе кӗрет, арҫынсем патне пырса меллӗрех тӑрать, вӗсен пуҫӗсем ҫине чашлаттарать. Ҫакӑн пек «душ» хыҫҫӑн арҫынсем пӗр-пӗринчен уйрӑлса тӑпӑл-тапӑл сиксе тӑраҫҫӗ.

М и к у л а *(йӗпе пуҫне силлесе).* Эс мӗн хӑтланатӑн? Ма сапан сив шывпа?

Я к к у. Чӑнах! Тарланӑ хыҫҫӑн эпир пӑрсутитсӑ тума та пултаратпӑр вӗт капла!

У р и н е *(тӳсеймесӗр, кулса).* Эппин, шӑнса пӑсӑласран сыхланса пӗр-пӗрне тип мунча кӗртетӗр-и, пӗр-пӗрне ҫапса пӑрахма тытӑнтӑр-и?

Я к к у. Ку вӑл пирӗн ӗҫ! Тен, эпир ҫапӑҫмастпӑр, вылятпӑр кӑна, ӑҫтан пӗлетӗн?

У р и н е. Куртӑм, ара, мӗнлерех вылянине!

М и к у л а. Вылятпӑр ҫав! Ак ҫапла! *(Яккӑва хӑлха чикки тыттарса ярать.)*

Я к к у. Ах, сана татах ҫитмерӗ-и-ха? *(Хирӗҫ парать.)*

Арҫынсем каллех автансем пек ҫапӑҫса каяҫҫӗ. Нӑч-нач, нӑч-нач тутараҫҫӗ. Урине пӗр хушӑ ним тума пӗлмест.

Урине *(кăшкăрать).* Чарăнăр, эсрелсем! Ытах çапăçас килет пулсан, картишне тухса тӳпелешĕр! Ман кунта урай çумалла, пӳрт ăшчиккине пуçтармалла! *(Çаплах тӳпелешекен арçынсене тĕрте-тĕрте алăкран кăларса ярать те алăкне çаклатса хурать.)* Эй, турă, çакăн пек ухмахсем ăçтан çуралаççĕ-ши!.. Иккĕшĕ те тăр-ухмах вĕт! *(Чӳрече умне пырса тăрать.)* Пăхха, мĕн хăтланаççĕ! Ай, параççĕ! Тепĕр тесен, çапăçчăр-ха, çапăçчăр лайăххрах, тăн кĕртчĕр пĕр-пĕрне!

Сцена хыçĕнчен Яккупа Микула кăшкăрашни илтĕнет: «Вĕлере-еп!» «Куçран ан çап, суккăр тăватăн!» «Эп сана пăвса пăрахатăп!» «Кала, эсремет, мĕншĕн çурса тăкрăн ман карттуса! Вилес умĕн те пулин кала!» «Карттусна мар, пуçна çуратăп санне!» «Ы-ых! О-охх!»

Урине. Яккăвĕ чăнах та вăйлă иккен! Пăх-ха, ман Микула çине утланса ларчĕ... Ай, парать, ай, парать! Ха! Микули те аптрамасть тата. Яккăва хăй çинчен илсе пăрахрĕ... Хăй утланса ларчĕ. Ай-уй! Мăйĕнчен пăвать мар-и? У-уй, шуйттан! Вĕлерсе пăрахать вĕт çынна! Темрен тем курса ларăн капла! Чарас пуль кусене! Чарас! *(Алăк патнелле чупать.)*

Çутă сӳнет. Вăл тепре çутăлнă çĕре чаршав хупăннă. Сылтăм енчен чаршав умне Микулапа Шаклашкин тухаççĕ. Микули халь паçăрхи пек мар, самаях хаваслă, вăрт-варт çаврăнкалать.

Шаклашкин. Кайран мĕн пулчĕ вара?

Микула. Кайран-и?.. Урине картишне сиксе тухрĕ те пире каллех сив шывпа сапса уйăрчĕ. Якку тек тытăнса тăмарĕ, асăнмалăх мана тепре хăлха чикки тыттарчĕ те, карттусшăн эп сана пурĕпĕрех тавăратăп-ха, тесе тухса тарчĕ. Ун хыççăн чупма мана Урине чарчĕ.

Сак çине пырса лараççĕ, пируссем чĕртеççĕ.

Шаклашкин. Вара?

Микула. Вара-и? Эп пӳрте кӗтӗм. Унтан маларах иртрӗм те тӗкӗр ҫинче хам сӑна курах кайрӑм... Апайтурух, тур ҫырлах! Чӗре чутах ҫуралса каятчӗ!

Шаклашкин. Ма вара ун пекех?

Микула. Пӗтнӗ ман патрет! Ним майӗ ҫук! Ҫамка ҫинче — чышкӑ пысӑкӑш хӗп-хӗрлӗ мӑкӑль, куҫ айӗсем — кӑн-кӑвак, сӑмсаран леш «лорх» йышши паранкӑ пулса ларнӑ, тута хӗрри ик ҫӗртен катӑлнӑ, янах шӑмми те чалӑшнӑ пек туйӑнать...

Шаклашкин. Художник пекех рисовать туса янӑ эппин?

Микула. Ан та кала ҫав! Ну, тепӗр хут ҫилӗ килсе кайрӗ манӑн! Ара, мӑшкӑл вӗт ку! Нихҫан каҫармалла мар мӑшкӑл!

Шаклашкин. Тӗрӗс, тӗрӗс, чӑн-чӑн мӑшкӑл...

Микула. Чип-чипер, киле пырсах ҫавӑн пек «юсаса» ҫын куҫӗ умне тухмалла мар туса хӑвараҫҫӗ! Анчах мӗншӗн? Виҫӗ пус тӑман карттусшӑн! Епле тӳсе тӑратӑн ҫавӑн хыҫҫӑн?!

Шаклашкин. Тӗрӗс, тӗрӗс...

Микула. Мӗн тӗрӗс? Мана хӗнесе хӑварни-и?

Шаклашкин. Ҫук-ҫук, карттус пирки калатӑп. Ара, пӗр пустуй япалашӑн сӑмса катаҫҫӗ... Сӑмсине ӑна пасара кайса илме ҫук-ҫке, карттус мар вӑл...

Микула. Ҫапла ҫав... Мӗн тӑвас? Тӗкӗр ҫине тепре пӑхрӑм та, хамран хам хӑраса кайса: «каҫармастӑп!» —терӗм. Тухрӑм та чупрӑм килтен. Ҫырма урлӑ мӗнле каҫнине те астумастӑп.

Шаклашкин. Хыҫалтан пропеллер лартнӑ пекех ӗнтӗ...

Микула. Ҫапла ҫав. Вӗҫсех каҫрӑм пулмалла. Яккусен калинккине пӗррех пырса хиртӗм хулпуҫҫипе. Уҫӑлмарӗ. Питӗрнӗ. Тытӑнтӑм хӑнтӑртаттарма.

Чышкӑсемпе, урасемпе. Сас паракан та, хирӗç тухакан та çуккӑ.

Ш а к л а ш к и н. Юри уçмаççӗ ӗнтӗ, хӑранӑ вӗсем санран.

М и к у л а. Аха-а, терӗм вара, хӗнерӗн-хӗнерӗн, манран ял кулли туса хутӑн пулать те, халь хӑраса ӳкрӗн-и, питӗрӗнсе ларатӑн-и, эдӑки-так? Не выйдет! Кӑтартам эп сана, уксах шуйттана!

Ш а к л а ш к и н. Тӗрӗс каланӑ, тӗрӗс...

М и к у л а *(хастарланса)*. Таçтан çавӑнтах алла рычак кӗрсе кайрӗ... *(Çапнӑ пек тӑвать.)* Р-раз! патӑм пӗр чӳречинчен. Рами-мӗнӗпех тухса вӑркӑнчӗ. Р-раз! — теприне, р-раз! — тата теприне. Урам енчи пӗр чӳрече те юлмарӗ...

Ш а к л а ш к и н. Вӑйлӑ панӑ, вӑйлӑ!

М и к у л а. Тата мӗн çӗмӗрмелле? Тавай калинккине те аркатас кунӑнне! Рычака пуç çинелле çӗклесе чупса пытӑм...

Ш а к л а ш к и н. Юмахсенчи леш Иван-паттӑрсем пек ӗнтӗ...

М и к у л а. Унтан пӗртте кая мар. Анчах çав самантрах хама хыçалтан çапса ӳкерчӗç те аласене каялла çыхма тытӑнчӗç. Эп урса кайса аташнине икӗ каччӑ курса чупса пынӑ иккен...

Ш а к л а ш к и н. Ак тата хӑямат! Кансӗрлекенсем тупӑннӑ-иç? Шел... Мӗн турӗç вара?

М и к у л а. Пӗр наччасра халӑх пухӑнчӗ. Митинг пек! Эх, тытӑнчӗç шавлама... Чисти ахӑрсамана тапранчӗ... Пӗрисем: халех тӗрмене ӑсатмалла, теççӗ, теприсем тата: ухмаха ернисен çуртне леçес, тесе мӑшкӑллаççӗ... Акт çырчӗç. Суда памалла турӗç... Акӑ, паян сучӗ те пулчӗ ӗнтӗ... Паллах, хам айӑпа çӑмӑллатас тесе, эпӗ пӗтӗмпех йышӑнтӑм, тунмарӑм, тата эпӗ ытла ватах мар-ха, тӳрленме те, хороши çын

пулма та пултаратăп, терĕм... Радио итлетĕп, кино куратăп, лекцисене çӳретĕп те, вара сто процент перевоспитани пулать манăн, терĕм. Яккăвĕ хăй судра мана хирĕç чĕнсех каймарĕ, шеллерĕ пулмалла, епле пулсан та — эпир пĕрле ĕçсе çинĕ-çке-ха, вăл хăй те мана ыванăнччĕнех хĕнерĕ, анчах унăн арăмĕ вара чисти сатана, апайтурух намăслантарчĕ, каламанни хăвармарĕ, çĕр тĕпнех анса каймалла!..

Ш а к л а ш к и н. Мĕнпе пĕтрĕ вара сучĕ?

М и к у л а. Паçăрах каларăм-çке: именем РСФСР... Штраф, принуд. Тепре кун пек хăтлансан — прощай мама, прощай папа, терĕç.

Ш а к л а ш к и н *(кулать).* Вăйлă панă сана. Хĕрхенсе тăман.

М и к у л а. Асту, хĕрхенеççĕ пуль! *(Ассăн сывласа, шухăшла кайнă пек пулса ларать.)* Итле-ха, Якур Митрич, мĕнле пурăнмалла ман халь? Э? Арăм çисех ярать ĕнтĕ халь, кӳршĕ-маршăсем кашни утăмрах кулаççĕ манран... Кала-ха, эс вĕреннĕ çын, манран ытларах чухлатăн.

Ш а к л а ш к и н *(сак çинчен тăрса Микулана хулпуççирен юлташла çапса илет).* Мĕн тумалла, тетĕн-и? Калама пултаратăп сана. Текех çавăн пек ухмаха ериччен ĕçмелле мар та çынсемпе çапăçмалла мар. Арăмупа та килĕштерсе пурăнмалла. Пĕтĕмпе те çав кăна. Вара йăлтах йĕркеллĕ пулать... Шутсăр, ытармалла мар йĕркеллĕ!

М и к у л а *(ĕнсине хыçать).* Тĕрĕс те пуль çав эс калани, Якур Митрич. Шутлатăп та, ку таранччен карахтер чăнах та усалтарах пулнă манăн. Анчах мĕн пирки, тетĕн? Пĕтĕмпех çав шуйттан эреки пирки. Халь çавăншăнах шар куртăм. Урă пуçпа Якку карттусне те тăхăнса пырас çукчĕ ĕнтĕ. Арама та хăваласа ямастăм, Яккупа та çапăçмастăм... Эх! Тем тăват-

тăм хама хам! *(Хăйнĕ пуçран чышса илет.)* Ўхмах, ухмах, уй тăмани...

Сасартăк хулăн сасăпа юрласа яни илтĕнет: «Ай, ĕçер-и, ай, çиер-и, виличчен пĕрле, ай, пурнар-и...» Микула сак çинчен сиксе тăрса Шаклашкина хулĕнчен ярса тытать.

**М и к у л а. Якур Митрич! Пĕлетĕн-и, кам сасси ку?**

**Ш а к л а ш к и н** *(пуçне пăркаласа).* **Çук, чухлаймастăп.**

**М и к у л а. Якку юрлать! Уксах Якку! Судра мана штраф тўлеттермелле тунăшăн хĕпĕртенипе ĕçсе лартнă ĕнтĕ, эсрелĕ! Атя, пăрăнар аяккалла! Вăл кунта килсе тухсан, каллех хăватлă çапăçу пулма пултарать! Манăн çапăçас килмест урăх! Атя часрах, таратпăр! Таси паха, таси паха!**

Микула Шаклашкина хулĕнчен пăчăртаса тытать те, вĕсем сценăн тепĕр еннелле чупса кĕрсе каяççĕ, хыçалта çаплах юрă кĕрлет: «Виличчен пĕрле, ай, пурнар-и...»

Çутă сўнет.

◆

# Ылтӑн кин

Тĕр пайлă камит



**КАМИТ КӐТАРТАКАНСЕМ:***

Ҫинави, утмӑлтан иртнӗ питӗ хастар карчӑк.

Аркаш, унӑн ывӑлӗ, ҫар ҫынни пек тумланнӑ, анчах погонсӑр.

Маша, Аркаш арӑмӗ, сап-сар ҫӳҫлӗ, шутсӑр хитре хӗрарӑм

Санюк, вӑтам шкул пӗтерекен хӗрача.

Кӳршӗсем, виҫ-тӑват арҫынпа хӗрарӑм.

---

* А. Лазарева калавӗ тӑрӑх ҫырнӑ.

Пит тирпейлĕ, таса пӳрт. Урамалла ик чӳрече, вĕсем хушшинче сăнӳкерчĕксем, татмалли календарь. Кĕтесре вĕр-çĕнĕ радиоприемник, ун çинче сехет-будильник. Пĕр-пĕччен пурăнакан Ç и н а в и сĕтел умĕнче, кичемрех юрă кĕввине мăрлатса, темле хутсене тыта-тыта пăхкалать.

Ç и н а в и. Пурте кивĕ çырусем. Çĕнни пĕрре те çук. Нихăшĕ те çырмаççĕ... Тунсăхласах çитрĕм ĕнтĕ... *(Ассăн сывласа ярать те сĕтел çине чавсаланса ларать.)* Эх, ача-пăча, ача-пăча! Мĕн калама пĕлмелле-ши? Асаплана-асаплана çурататăн вĕсене, çĕр çывăрмасăр генĕ пек пăхса ӳстеретĕн, пĕтĕм пурнăçа паратăн... Анчах вĕсем ӳссе çитеççĕ те, кайăк чĕпписем пек, тăван йăваран пăр-пăр-пăр! вĕçсе тухса каяççĕ. Пĕри — унталла, тепри — кунталла. Эс вара урăх кирлĕ те мар вĕсене. Хăйсен ăсĕпех пурăнаççĕ. Эс вĕрентнине хăлхана та чикмеççĕ. Аслăраххисем татахха хуть. Çемьеллĕ, ачи-пăчи пур. Вĕсен, чăнах, хăйсен пур-çук ăсĕ-тăнĕпе пурăнас пулать. Анчах кĕçĕннисем те итлесшĕн мар вĕт-ха сана! Акă Нинук Мускавра аслă шкул пĕтернĕ-пĕтермен çурçĕре ĕçлеме тухса кайрĕ. Тем пек каларăм, ан кай, шăнса вилетĕн унта, терĕм,— итлемерĕ. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ таçта шур упа-

сем патёнче пурӑнать. Ҫыру та сайра ҫырать. Те мӑшӑр тупрӗ-ха хӑй валли?.. Аркашӗ тата, чӑн кӗҫӗнни, салтакран тахҫанах таврӑнмаллаччӗ. Унпа пӗрле кайнисем пурте килчӗҫ, хӑшӗсем туй та турӗҫ... Эп пур — ҫаплах пӗччен пурӑнатӑп. Пӗр-пӗччен! Уй тӑмани пек. Аркашне тепре ятласа ҫырса ярас-ха. Тен, тӑна кӗрӗ... *(Хутсене пуҫтарса сӗтел ещӗкне хурать.)* Ватлӑхра пӗрре те пӗччен пурӑнас килмест мар-и! Килте лайӑх кин пултӑрччӗ, пӳрт тулли мӑнук чуптӑрччӗ, пӗринчен тепри ҫивӗчрех... Эп вӗсемпе те-ек выльӑттӑм, кирлех пулсан, кӑштах хулӑпа та ачашласа илӗттӗм... Тем, ун пеккине кӗтсе илме пулӗ-ши манӑн? Пӗр шутласан, пи-итӗ тарӑхмалла...

Чӳречерен шаккаҫҫӗ.

Санюк сасси. Ҫинави инке! Эс килте-и?

Ҫинави. Килтех-ҫке! Кам пулчӗ, ара, ку?

Санюк. Эпӗ-ха ку, Санюк! Уҫ-ха!

Ҫинави *(чӳречене уҫса ярать).* Мӗн каласшӑнччӗ?

Санюк. Ним те каламастӑп. Варькка-почтальон сан валли ҫыру парса ячӗ. Ҫула май кӗрсе пар-ха, терӗ. Ҫырӑвӗ Аркашран пулмалла, ҫавӑн алли пек туйӑнать. Ме акӑ, тыт... *(Ҫинавие канверт тыттарать.)*

Ҫинави *(канвертне унӑн-кунӑн ҫавӑркаласа пӑхать).* Ак хайхи! Тинех ҫырчӗ пулать, мур ҫимен ачи! Икӗ уйӑх ытла хӑй ҫинчен ним пӗлтермесӗр пурӑнчӗ, эсрел...

Санюк. Вӑхӑчӗ пулман пуль.

Ҫинави. Асту, пулман! Хулара мӗн ӗҫлеҫҫӗ ара вӗсем? Суха тӑваҫҫӗ-и, тыр выраҫҫӗ-и? Маннӑ вӑл амӑшне, маннӑ!

Санюк. Манман-ҫке, ак, ҫырса янӑ-иҫ...

Ç и н а в и. Тем çырнă-ха тата! Хăçан килесси çинчен каланă-ши хуть? Эс пӳрте кĕр-ха, хĕрĕм, çыруне вуласа парсах хăвар... Эп хам вулама ытла маçтăрах мар. Куçлăха та çĕмĕрсе пăрахрăм.

С а н ю к. Халех, Çинави инке! *(Пӳрте хăвăрт кăна чупса кĕрет, канверта Çинави аллинчен илет, çыруне кăларать.)* Ах, хитре çырать-çке сирĕн Аркаш! Шăрçа пек!

Ç и н а в и *(пукан çине кăтартса)*. Çыруне эсĕ ак çакăнта ларсах вула-ха. Васкамасăр вула, пăрçа сапнă пек мар. Ăнланмалларах пултăр. Ман тата хăлхи те витĕрех мар...

С а н ю к *(ларать)*. Юрĕ, Çинави инке! Итле эппин...

Ç и н а в и. Итлетĕп, хĕрĕм, итлетĕп. *(Ал лаппине хăлхи патне тытса итлеме хатĕрленсе ларать.)*

С а н ю к *(хыттăн, пысăк туйăмпа вулама пуçлать)*. «Чунтан-вартан юратнă хаклă аннеçĕм! Ырă кун пултăр сана. Инçетри мăн хуларан тем пысăкăш хĕрӳллĕ салам яратăп...»

Ç и н а в и. Хитре çырать, мур ачи. Хам пекех ылтăн кăмăллă сав вăл манăн. Пĕтĕмпех хама хывнă. Ашшĕ хаярччĕ...

С а н ю к. Малалла вулас-и?

Ç и н а в и. Вуламасăр тата! Эп сана çавăнпа чĕнсе кĕртрĕм-иç!

С а н ю к *(вулать)*. «Мĕнле пурăнатăн-ши, сывлăху чиперех-и? Пĕркун сылтăм хул айне ӳпне çăпан тухрĕ, кашăк та тытаймастăп, тесе çырнăччĕ эс, иртсе кайрĕ-и?..»

Ç и н а в и *(кăмăллăн)*. Пăх-ха эс ăна, çăпан çинчен те манман тата! Юратать çав вăл мана... юратать...

С а н ю к. «Эс мана кĕтсе ывăнтăн пуль ĕнтĕ... Пĕлетĕп, кичем сана...»

Ç и н а в и. Кĕтмесĕр ара! Кунĕн-çĕрĕн кĕтетĕп... Мĕн каламалли, хам ача вĕт... *(Хурланнă пек пулса, куçĕсене шăлкаласа илет.)*

С а н ю к. «Эпĕ те час-часах килти пурнăç çинчен шухăшлатăп, пурин çинчен те пĕлес килет. Чухлатăп, сана пĕччен пурăнма çăмăл мар-ха ĕнтĕ...»

Ç и н а в и. Ăçтан çăмăл пултăр-ха! Тĕрĕс çыратъ. Пур ĕçсене те пĕр-пĕччен туса пымалла та...

С а н ю к. «Çапах та, ку таранччен пурăннине мĕнле те пулин чăткала. Ялан ун пек пулмасть вĕт...»

Ç и н а в и. Чăтатăп çав, халь те чăтатăп. Мĕн тăвас тетĕн...

С а н ю к. «Пурнăçĕ çапларах çаврăнса тухрĕ-çке, юратнă аннеçĕм, эп айăплă мар. Çар служби пĕтсенех эпĕ, киле профессисĕр таврăнас мар тесе, вĕренме кĕтĕм...»

Ç и н а в и *(Санюка пӳлсе)*. Чим-ха, хĕрĕм, чим-ха. Ăнланаймарăм. Прохвессăра вĕренетĕп, тет-и? Мĕн тума кирлĕ ăна прохвессăра вĕренни, пĕр-пĕр тракториста е шофера вĕренсен те çитетчĕ-ха! Ах, вăл ачапчана! Тӳрех ытла мăнна хапсăнаççĕ-çке!

С а н ю к *(кулать)*. Профессор çинчен каламан кунта, професси çинчен каланă.

Ç и н а в и. Çавах мар-и вара вăл?

С а н ю к. Ытла çавах мар çав. Професси тесе пĕрпĕр ĕçе лайăх пĕлекен пулнине калаççĕ. Сăмахран, çын агроном, выльăх тухтăрĕ, платник, тимĕрçĕ пулатъ...

Ç и н а в и. Çапла, çапла, пур ун пеккисем. Кăмака тăвакансем те пур. Ăнлантăм, малалла вула.

С а н ю к *(вулать)*. «Вĕренсе пĕтерсен, эпĕ тракторист та, комбайнер та, кирлĕ чух шофер та пулма пултаратăп...» *(Çинави çине пăхса.)* Ак хайхи, эс ĕмĕтленнĕ пекех пулать! Тракторист та, шофер та. Пит лайăх!

Ç и н а в и. Пултăрччĕ çав! Ача-пăчан яланах ашшĕ-амăшĕ шутланă пек тумалла.

С а н ю к *(хавассăн)*. Вулар-ха, малалла мĕн çырать? *(Вулать.)* «Вĕренсе пĕтерсен тӳрех киле таврăнатăп...»

Ç и н а в и *(савăнса)*. Киле манмасть-ха эппин, тав турра! Анчах хăçан килессине каламан-и?

С а н ю к. Асăнман.

Ç и н а в и. Вула-ха эппин, тен, каярахра çырнă...

С а н ю к. «Анчах унччен манăн сана пĕр кĕтмен хыпар пĕлтерес пулать...»

Ç и н а в и. Айтурух, мĕнле хыпар-ши тата? Хăрасах кайрăм...

С а н ю к. «Хаклă аннеçĕм, ан ятла мана. Эп кунта пĕр хĕре питĕ килĕштерсе пăрахрăм. Вăл та мана юратать, ĕмĕр манпа пĕрле пулма килĕшет...»

Ç и н а в и *(сиксе тăрать)*. Ай тур-тур, ай тур-тур... Çаплах çырнă-и, мур çимен ачи? Йăнăшмарăн-и эсĕ? Вула-ха тепре!

С а н ю к. Тĕрĕсех вуларăм. Итле акă: «Эпĕ кунта пĕр хĕре питĕ килĕштерсе пăрахрăм... Вăл та мана чунтанах юратать...»

Ç и н а в и *(пăт-пат сăхсăхса илет)*. Пĕтрĕ пуç, пĕтрĕ пуç...

С а н ю к *(вулать)*. «Хĕрĕ питĕ аванскер, хитри те шутсăр хитре, кăмăлĕ те калама çук лайăх, ĕçре те пултарать, никамран та юлас çук...»

Ç и н а в и. Пĕтрĕм, пĕтрĕм...

С а н ю к. «Эс ăна курсан, ху та килĕштеретĕн пуль, тетĕп. Хĕрĕ Маша ятлă. Сана унран питĕ пысăк салам. Çак çырупа пĕрле унăн сăнӳкерчĕкне ярса паратăп...» *(Малалла хăвăрт вуласа каять.)* «Çакăнпа çырăва пĕтеретĕп. Кама та пулин çыртарса хăвăртрах ответ яр. Питĕ хытă кĕтетĕп. Сывă пул, чипер юл, хак-

ла аннеçём. Санăн ывăлу — Аркаш...» Ай-ай, лайăх çыру янă-çке Аркаш пичче! Çапла вĕт?

Çинави *(хытнă пек пулса ларса).* Çапла... питĕ лайăх... шутсăр, мĕн каламалли! Чĕререн çĕçĕпе чикнĕ пекех пулчĕ!

Санюк. Ай-уй, ма ун пек калатăн, Çинави инке? Савăнмалла çеç куншăн! Чим-ха, ӳкерчĕкĕ çине пăхар, вăл канверт ăшне хĕсĕнсе юлнă пулмалла. *(Васкасах канвертран сăнӳкерчĕке кăларать.)* Эй, тĕнче-е! Пăхха, мĕн тери чаплă кин пулать санăн! Пăх-ха, тетĕп, кур-ха! *(Ӳкерчĕкне Çинавие пама тăрать.)*

Çинави *(тутине мăкăртса, аллипе сулса, тепĕр майлă çаврăнса ларать).* Кирлĕ мар! Пăхмастăп! Çук, çук! Алла та тытмастăп, куçпа та пăхмастăп! Эх, турă...

Санюк *(тĕлĕнсе).* Мĕншĕн, Çинави инке?

Çинави. Çавăншăнах! Манран мăшкăлланăшăн! *(Тăрать те, куракансем еннелле, сцена хĕрринелле темиçе утăм тăвать.)* Ак сана ывăл... Чи юратнă кĕçĕн ывăл! Пăх-ха, мĕн хăтланать вăл, эсрел ачи! Мĕн хăтланать!..

Санюк. Эс мĕн ара, Çинави инке... Кăмăлсăр пултăн-им? Пит лайăх çырнă-çке?

Çинави *(ун енне варт! çаврăнса).* Ăçта унта лайăххи?! Мĕн лайăххи пур?! Манран ыйтмасăр авланма тапратнă, мур çименскер! Çавă-и лайăххи? Ара, эп ун патне кун пирки иртнĕ кĕркуннех çырса ятăм вĕт-ха! Эс асту, таçта аякра мăшăр тупма ан шутла, ухмаха ан ер, терĕм! Сан валли пит лайăх хĕр, хам валли ытармалла мар кин суйласа хутăм ĕнтĕ, тесе ăнлантартăм! Эх, Аркаш, курасчĕ санăн Еххĕм Зинки епле чаплă хĕр пулса кайнине, терĕм. Сарă, чипер, кăмăллă, çав тери ĕçчен тата! Пĕтĕм колхозĕпе те ун пек ӳрĕк хĕр çук вĕт! Хăвна салтакран киле ямалла

тусан пĕр кун та тытăнса ан тăр, часрах килелле вĕçтер, вара эп сана тӳрех çав Зинкăна илсе паратăп, пĕтĕм яла тĕлĕнтермелле чаплă туй тăвăпăр, терĕм. Анчах вăл эп çавăн пек хытарса каланисене хăлхана та чикмен! Эх турух!.. Мĕн тăвам-ши, ăçта кайса кĕрем-ши? *(Аллисене арçын пек каялла тытса хăвăрт-хăвăрт уткаласа илет.)* Шеллерĕм çав, пĕчĕк чух сахал пĕçертрĕм ăна, çавăнпа ухмах пулчĕ пулмалла...

Санюк. Ăнланаймастăп, Çинави инке, мĕншĕн çав териех пăлханатăн эсĕ?

Çинави. Епле мĕншĕн пултăр?! Ара, Аркаш мĕн туса хунине чухласа илейместĕн-и-мĕн? Никамран ыйтман-туман, никампа калаçман — темле Маша тупса янă! Пăх-ха эс! Маша кирлĕ пулнă ăна!..

Санюк. Мĕнех вара... Юратнă пуль те...

Çинави. Маша! Ячĕ те темле, халăх шутлă мар, «лаша» тенĕ пек илтĕнет... Çитменнине майра тата, чăвашла та пĕлмест ĕнтĕ вăл. Мĕнле пурăнмалла ман унпа? У-уй! *(Пуçне пăркаласа илет.)* Çук-çук, кирлĕ мар, тупата туршăн, киле кĕртместĕп эп ăна! Кĕртместĕпех!

Санюк. Вăл нимех те мар пуль, Çинави инке. Халь пирĕн пур халăхсем те пĕрешкел вĕт, пĕр-пĕрне тиркесе пурăнмаççĕ. Чăвашĕ вырăса илет, вырăсĕ — чăваша, мăкши — пушкăрта, тутарĕ — касаха качча каять. Пĕлместĕн-им ун çинчен? Ав, леш енчи Уртем хĕрĕ Анфис пĕр белоруса кайнă та, еплерех аван пурăнаççĕ? Астăватăн-и, çуркунне ашшĕ-амăшне курма илсе кайрĕç? Упăшки епле чаплă? Анфисĕ мĕнлерех тумланнă?

Çинави. Пулĕ, тем те пулĕ! Ман ĕç çук унта, сирĕн касакусемпе мăкшусем хуть те вуник мăйракаллисене качча илччĕр. Эп хамăн ывăл çинчен калатăп. Вăл мĕн хăтланать?! Эс мана çавна кала!

Санюк. Ара, вăл та çавах ĕнтĕ, юратнă пулсан— хĕрĕ чăваш маррине пăхса-тиркесе тăрас çук...

Çинави. Мĕнле пăхса тăрас çук?! Ун валли хĕр тупса хунă-çке эпĕ, мĕн кирлĕ тата ăна? Мĕншĕн амăшĕн сăмахĕнчен иртмелле? Эпир ун пек пулман-çке? Аттепе анне мана хамăн упăшкана, Катăк Теренттие кайма хушрĕç те, эп пĕр сăмах та каламарăм, итлерĕм!

Санюк. Ун чух самани урăхла пулнă.

Çинави. Эс ан вĕрент мана, ан ӳкĕтле! Çамрăкха эсĕ, нимĕн те пĕлместĕн. Ах, ăшхыптармăш! *(Чейникрен шыв ярса ĕçет.)* Ухх! Тем курса ларăн ку ачапчапа... *(Ларать те çамки çинчи тарне шăлать.)*

Санюк *(сăнӳкерчĕкĕ çине пăхса)*. Итле-ха, Çинави инке, çапах та эсĕ Аркашна ытлашши ан вăрç-ха. Хĕрĕ ытла та чипер-çке! Ытармалла мар-иç! Пăх-ха эсĕ... Ме, пĕрре те пулин пăхса ил-ха!

Çинави *(кăшт кутăнланкаласа тăнă хыççăн Санюк аллинчи ӳкерчĕк çине пăхать)*. Ха! Мĕн пур ара ун çумĕнче чиперри? Хăш енчен чипер? *(Йĕрĕннĕ пек.)* Эккей, ларать... Шăлĕсене йĕрсе пăрахнă... Хăйне хырăмĕнчен такам кăтăкланă пек... Тьху! Курас килмест çавăн пек шăлйĕрекенсене! Тӳсме пултараймастăп!

Санюк *(кулараx)*. Мĕн вара, çыннăн, пурнăçĕ лайăх пулсан та, макăрса çӳремелле-и?

Çинави. Ахăрса çӳрени мĕн парать тата?

Санюк. Ку ахăрмасть-çке, кăмăллăн кулать кăна. Питĕ шутсăр хитре кулать... Шăлĕсем те çав тери хитре...

Çинави *(тата ытларах тарăхса)*. Хитре, хитре! Тупрăн пулать пĕр сăмах! Темле пулсан та, кирлĕ мар мана кун пек майра! Каланă сана — киле кĕртместĕп!

С а н ю к *(кулать).* Кĕртетĕ-ĕн... Ак, сасартăк çак самантра килсе çитрĕç-тĕк, ыталасах илетĕн-ха...

Ç и н а в и. Алăк урлă та каçармастăп! Тӳрех турчка тытатăп! *(Аллинче турчка пур пек, унпа малалла чышнă пек тăвать.)* Ăçтан килнĕ, çавăнтах кайăр!

С а н ю к *(ура çине тăрать).* Усал иккен эсĕ, Çинави инке. Санпа калаçса сăмах вĕçне тупас çук. Çапах та, Аркашпа Маша тени пĕр-пĕрне юратаççĕ пулсан...

Ç и н а в и *(Санюк аллинчи ӳкерчĕке карт! туртса илет).* Ара, пăхсам лайăххрах, мĕн юратмалли пур унăн? Çамки çинчи кăтрашкасемшĕн юратмалла-и? *(Ӳкерчĕке сĕтел çине ывăтать.)* Ун пек шутласан, сурăх путекки те кăтра пулать. Еххĕм Зинкипе ăçтан танлаштаратăн ăна? Зинкăн кача пӳрни тĕшне те тăмасть! Ы-ых, тулькиш! Илĕртнĕ ĕнтĕ ман ывăла мĕнпе те пулин, улталанă, куçне пăвнă, тем ĕçтерсе ухмаха ертсе янă!

С а н ю к. Çинави инке, тăхта-ха...

Ç и н а в и *(питĕ хаяррăн).* Мĕн тата?

С а н ю к. Эс мана ухмах тесе шутлатăн та, çапах та игле-ха ман сăмаха...

Ç и н а в и *(ун çине шăтарасла пăхса).* Ну, кала тавай. Тен, эс мана хама ухмах, тейĕн, йӳтенĕ карчăк, тесе хурăн? Тавай, ара, тавай... Эсир, хальхи çамрăксем, ваттисене кӳрентерме пĕлетĕр...

С а н ю к. Çынна никам та вăйпа юраттармасть, ун пек йĕрке çук, пулма та пултараймасть.

Ç и н а в и. Мĕн йĕрки кирлĕ унта? Ачисен ашшĕамăшне хуть те хăçан та пăхăнас пулать çеç!

С а н ю к. Ытла кивĕлле шутлатăн эсĕ. Пурнăçран юлнă.

Ç и н а в и. Юрĕ, юрĕ! Эсир малта сиккипе пыни те çитет мана. Эс акă мĕн, хĕрупраç...

С а н ю к. Мĕн?

Ç и н а в и. Пустуй янраса тăриччен — ответне çырса пар-ха мана часрах, паянах ямалла пултăр. Эп мĕн каланисене пĕтĕмпех çыр! Ак сана хут, ак кăранташ... *(Сĕтел ещĕкĕнчен кăларса парать.)* Лар та—çыр!

С а н ю к. Мĕн çыртарасшăн вара эс?

Ç и н а в и *(шухăша кайнă пек пулса).* Савнă ывăлăм, те, эс мана хăвăн юлашки çырăвупа вĕлерсех пăрахрăн, эс темле майрапа çыхланни çинчен пĕлсен, ман чĕре чутах çурăлса каятчĕ, те. Эс мана хисеплеместĕн, мана итлеместĕн пулсан, эсĕ тăп-тăр ухмах, ман ача мар. Астусах тăр, аçу-аннӳ килĕнче нихçан та ютран сĕтĕрсе килнĕ майра шăрши те пулма пултараймасть... *(Хаяррăн.)* Çыр, çыр эсĕ, мĕн çăварна карса ларатăн тата?

С а н ю к *(умĕнчи хутпа кăранташа аяккалла тĕртсе ярать).* Çук, Çинави инке, хуть те мĕн ту эс мана, анчах эпĕ кун пек киревсĕр çыру çырма, Аркаш пичче пек лайăх çынна кӳрентерме пултараймастăп.

Ç и н а в и *(тĕлĕннĕ пек пăхса тăнă хыççăн).* Пултараймастăн пулсан, ан çыр, ара, ан çыр! Тархаслásах тăмăп! Мана Арçук хĕрачи Улька та пит лайăх çырса параканччĕ-ха. Ялта çырма пĕлекен пĕр эс кăна мар. Эккей, тупăннă тата...

Сцена хыçĕнче сасартăк мотор сасси кĕрлесе каять, унтан автомобиль нарт! нарт! тутарни илтĕнет. Çинавипе Санюк иккĕшĕ те пĕр харăсах чӳрече патне ыткăнаççĕ.

Ç и н а в и. Ай-уй, кам килсе кĕчĕ ара пирĕн кукăра?

Автомобиль татах нартлатать.

С а н ю к. Такси! Тахăшĕ таксипех килнĕ! Хуларан ĕнтĕ ку, районта ун пек машинсем çукка...

Ç и н а в и. Чăнах та, кам-ши ку?

С а н ю к *(кăшкăрсах ярать).* Ара, Аркаш вĕт! Ава, кур, машинран тухрĕ... Хыçалти алăкне уçать...

Ç и н а в и. Тур çырлах, тур çырлах! Ак тата кĕтмен япала... Тин кăна çырăвĕ килчĕ, хыççăнах хăй те персе çитрĕ!

С а н ю к *(шутсăр хĕпĕртенипе ал çупса).* Арăмĕпех килнĕ! Ав, машинран майра тухса тăчĕ! Атя часрах, Çинави инке, хирĕç тухса кĕтсе илетпĕр! Хаклă хăнасем çитрĕç сан патна! Хаклă хăнасе-ем!.. *(Пуля пек тухса вăркăнать.)*

Ç и н а в и. Кай-кай-кай... *(Пукан çине лак! ларать.)* Епле пулчĕ-ха капла... Халь çеç çыру çырса ярас тесеттĕм, майрине ан илсе кил тесе. Кай-кай-кай... Ĕлкĕреймерĕм эппин. Мĕн тăвас пулать халь? Киле кĕртес-ши, кĕртес мар-ши? Кĕртмесен — пĕтĕм халăх умĕнче намăс пулĕ, Аркашĕ те çилленĕ те — çак машинпах каялла тухса кайĕ... Ай тур-тур... Мĕн тăвас-ши, мĕн тăвас? Никам та ăс паракан çук. Хуть те юмăç патне кай...

Пўрте чăматансем çĕкленĕ А р к а ш, М а ш а, вĕсем хыççăн С а н ю к кĕрсе тăраççĕ. Пурте хаваслă вĕсем, çав тери савăнăçлă. .

А р к а ш. Хĕрўллĕ салам сана, аннеçĕм! Ырă кун пултăр! *(Чăматанĕсене лартать те, халь те пукан çинчех ларакан амăшĕ патне пырса, ăна ыталаса чуптăвать.)* Эпир çитрĕмĕр!

Ç и н а в и *(ирĕксĕр пек).* К...к...уратăп. Лайăх çитнĕ...

А р к а ш. Паллаш, анне! Ман арăм ку, Маша. Эп сана ун çинчен çырса ярсаттăм, çыруне илсе вуларăн пуль?

Ç и н а в и. Шутсăр савăнса вуларăм мар-и...

Аркаш. Маша, иди сюда! *(Алăк патĕнчех тăракан Машăна аллинчен тытса малалла ирттерет).* Паллашăр!

Маша *(аллине тăсса).* Здравствуйте, мама! Меня зовут Машей...

Çинави *(ал парам пекки çеç тăвать).* Страстĕ пултăр та-ха, анчах мĕн тума сĕтĕрĕнсе килтĕн эс пирĕн пата, çавна каламăн-ши? Кам чĕннĕ сана кунта?

Аркаш *(кулать).* Анне...

Маша *(Аркаша).* Не понимаю. Что она говорит?

Аркаш. Она говорит, что... рада тебя видеть. Очень, очень рада. Давно ждала тебя.

Маша *(кăмăллăн кулса).* И я очень рада! *(Çинавие)* Разрешите, мама, я вас поцелую. *(Ыталаса чуптăвать.)*

Çинави. Тур çырлах, тур çырлах. Килнĕ-килмен пару пек çуллама пуçларĕ...

Маша *(Аркаша).* Что она сказала?

Аркаш. Сказала, что у тебя губы очень мягкие и... приятные. В общем, ты нравишься ей.

Маша. Хорошо! Надеюсь, что мы с ней будем жить дружно.

Аркаш. Конечно! А как же иначе? Мамаша у меня хорошая, сердечная... Характер у нее ангельский...

Маша. Вижу, вижу... А я ей сейчас подарки... *(Чăматансем патне каять.)*

Чӳречесенче кӳршĕ çыннисем курăнаççĕ.

Пĕр кӳрши. Салам-аликкĕм, Аркаш! Кĕрлеттерсе çитрĕн пулать çапах та?

Аркаш. Çиткелерĕм-ха. Аванах килтĕмĕр.

Тепĕр кӳрши. Ку майри... мĕнле калас... сан арăму-и?

А р к а ш. Арăм çав. Кам пултăр тата?

П ĕ р к ӳ р ш и. Саккунлах-и е... йăпăртлăха илсе килтĕн?

А р к а ш. Чипер калаç-ха, Митри пичче! Саккунлă пулмасăр! Эпир çырăннă, хамăр патри пек каласан — хут уйăрттарнă.

Т е п ĕ р к ӳ р ш и. Маттур майра çаклатса килнĕ эсĕ! Канихват хучĕ çинчи картинккă пекех!

П ĕ р к ӳ р ш и. Анчах ялта пурăнма килĕшĕ-ши ку саркайăк? Вĕçсе каймĕ-ши каялла?

А р к а ш. Мĕншĕн вĕçсе кайтăр?

П ĕ р к ӳ р ш и. Ара, ялта çĕр ăшĕнче чаваланмалла-çке, кĕнцелерте машинка çапса ларасси мар...

А р к а ш. Пĕлместĕр-ха эсир ăна, çавăнпа та йăнăшатăр... Тепĕр тесен, эсир ма урамран калаçса тăратăр? Кĕрсемĕр пӳрте, киле килнĕ ятпа, тен, пĕрер черкке те тупăнĕ...

П ĕ р к ӳ р ш и. Тавтапуçах ыр сăмахушăн! Пӳрте кĕресси темех мар, кĕме те пулать...

Т е п ĕ р к ӳ р ш и. Çĕн çынна çывăхран курар-ха эппин.

Виççĕн-тăваттăн кĕреççĕ, Аркашпа Машăна сывлăх сунаççĕ, ал параççĕ.

А р к а ш. Каçарăр та-ха пире... Эсир кăштах аннепе калаçса ларăр-ха, эпир Машăпа иксĕмĕр пăртак çăвăнкаласа кĕрер. Çул çинче тусан айнех пултăмăр. *(Арăмĕпе иккĕшĕ алшăллисем илсе тухаççĕ.)*

П ĕ р к ӳ р ш и. Ну, Çинави, тинех чунтан савăнса пурăнмалли çитрĕ санăн!

Ç и н а в и *(çилĕпе)*. Мĕншĕн савăнмалла ара?

Т е п ĕ р к ӳ р ш и. Мĕншĕн, тесе ларать-ха тата! Мĕнешкел чаплă кин туянтăн пулать те!

Ç и н а в и *(мăртлатса).* Нимĕнле кин те кирлĕ мар мана. Кирлĕ мар!

С а н ю к *(кула-кула).* Çитĕ ĕнтĕ сана, Çинави инке...

Ç и н а в и. Çитнĕ, çитнĕ, çак таранах! *(Хăйне пырĕнчен каснă пек тăвать.)* Савăнтарчĕ ывăлăм ватлăхра. Итлемерĕ. Тупса килчĕ хăйне валли... Мана асаплантармалли! *(Макăрнă пек пулса куçĕсене шăлкаласа илет.)* Кĕтменччĕ кун пеккине...

П ĕ р к ÿ р ш и. Эсĕ мĕн, Çинави, юрлас-ташлас вырăнне макăратăн мар-и çав?

Ç и н а в и *(ÿлесех ярать).* Хам валли чип-чипер кин тупса хурсаттăм, ун вырăнне илсе килчĕ халь... Кама кирлĕ вăл? Мĕнле пурăнас ман унпа?! *(Йĕрет.)*

Хулĕсене, кăкрине алшăллипе шăлкаласа, Аркаш кĕрет. Амăшĕ макăрнине курать те тĕлĕннипе урай варринчех чарăнса тăрать...

А р к а ш. Мĕн эсĕ, анне? Мĕн пулчĕ?

Ç и н а в и *(хыттăн).* Ним те пулман! Веçех лайăх! *(Сиксе тăрать те алăк патнелле пат! пат! утса каять, Аркаш ăна тытса чарать, пичĕпе хăй еннелле çавăрса тăратать.)*

А р к а ш. Эс чим-ха, анне, чим... Каласа пар, мĕн пулчĕ? Ма макăратăн, кам кÿрентерчĕ?

Ç и н а в и *(тăрук ура тапса).* Эс кÿрентертĕн, савнă ывăлăм, эсĕ! Чухлатăн-и?

А р к а ш *(тĕлĕнсе).* Хăçан? Мĕнпе? Тăрук килсе кĕнипе-и? Мĕнех вара уншăн?

Ç и н а в и. Неушлĕ ăнланмастăн?

А р к а ш. Çук. Пĕртте ăнланмастăп.

Ç и н а в и. Кама илсе килтĕн эсĕ аçу килне?

А р к а ш. Кама пултăр... Хам юратнă хĕре...

Ç и н а в и. Мĕн тума?

**Аркаш.** Арӑм вӑл манӑн. Эпир ҫырӑнна.

**Ҫинави.** Ӑҫтан тупрӑн эсӗ вӑл купӑста пуҫне?

**Аркаш.** Пӗлтӗр ҫулла, хамӑрӑн дивизи лагерьте тӑнӑ чух, Белоруссинчи пӗр ялта тӗл пулса паллашрӑмӑр та пӗр-пӗрне килӗштертӗмӗр...

**Ҫинави.** Ара, эп сан патна ҫырса ятӑм вӗт-ха, кин тупса янтӑларӑм, терӗм сана. Ку майрапа танлаштарсан, Еххӗм хӗрӗ пин хут хӳхӗмрех, пӑрчӑкан пек вӗт! Анчах эсӗ аннӳ сӑмахне хӑлхана та чикмерӗн пулать! Шутла-ха, ҫакӑ вӑл пурнӑҫ тумалли ҫын пулать-и? Курӑн акӑ, санӑн ӗнсӳ ҫине утланса ларать те, эс вара ни унталла, ни кунталла пӑрӑнаймастӑн, таппа лекнӗ кушак кайӑкӗ пек! Ы-ых сана!.. *(Юнаса илет.)*

**Аркаш** *(кӑмӑлсӑр).* Анне, халь тин кун ҫинчен калаҫмӑпӑр. Кӑштах пурӑнсан, курӑн-ха вӑл мӗнлерех ҫын пулнине. Тен, юратса та пӑрахӑн...

**Ҫинави.** Ҫук, ӗмӗрне те пулмасть ун пекки! Тӗсне курмӑттӑм! Кай-кай-кай...

**Пӗр кӳрши.** Чӑнах ара, Ҫинави, хӗрӗ пит лайӑх-ҫке, хӑйсем килӗштернӗ пулсан... пӑшӑрханмалли ҫук...

**Ҫинави.** Эс мана ан вӗрент! Кам ара эп? Амӑшӗ пуль? Амӑшӗ хӑйӗн ачисемшӗн пӑшӑрханмасан, кам пӑшӑрхантӑр тата?

**Тепӗр кӳрши.** Вӑл тӗрӗс-ха, эсӗ амӑшӗ, чи асли кунта. Тен, пуринчен те ӑслӑ. Ҫавӑнпа та, ват ҫын пек тӑнлӑ-шутлӑ пулса, ывӑлна юратса, аякран килнӗ хӗре те ан кӳрентер. Вӗсем иккӗшӗ телейлӗ пурнӑҫ тума пӗрлешнӗ пуль? Эппин, мӗншӗн хӳрӳне тӑратмалла-ха санӑн, мӗншӗн ҫӗтӗлмелле?

**Ҫинави** *(ҫилӗпе).* Юрӗ! Пурте вӗрентме тытӑнчӗҫ! Пурте ӑслӑ, пӗр эпӗ ҫеҫ ухмах. Пурӑнӑрах эппин хӑвӑр пӗлнӗ пек, ман ӗҫӗм ҫук. Манран ыйтман, эп ка-

ланине итлемен. Эх, турă! Шыва кайса сикмелли çеç юлчĕ...

Çинави пӳртрен чупсах тухса каять. Алăк патĕнче Машăна тĕл пулать, анчах ун çине пăхмасть те вăл. Маша ăна çул парса, пăрăнса юлать.

**Маша.** Аркаша, куда это она так заторопилась?

**Аркаш.** Она... она в сельмаг побежала. Вина купить. Угостить нас хочет по случаю приезда.

**Маша.** Зачем ей торопиться? У нас же свое вино есть. И закуска мировая. Пойди, верни ее!

**Аркаш.** Не послушает. Она у меня принципиальная. Сама угощать любит...

**Маша.** Ну, что ж, хорошо, если так. И я буду стол накрывать...

Маша хулпуççи урлă çакса янă алшăллине алла илсе пăтаран çакать. Вăл халь хитре сенкер кофтăпа, унăн кăкрин сулахай енче Социализмла Ĕç Геройĕн Ылтăн Çăлтăрĕ йăлтăртатать. Вăл, пĕшкĕнсе, чăматанран ĕçме-çиме кăларма тытăнать, Аркашпа Санюк ăна пулăшаççĕ, вăл панисене сĕтел çине кая-кая лартаççĕ. Кӳршĕсем пăхса лараççĕ...

**Пĕр кӳрши** *(теприне чавсипе тĕртсе, пуçĕпе Маша еннелле сулса, шăппăн).* Эс пăх-ха, Энтри, пăх-ха лайăххрах... *(Хăйĕн кăкрине тĕксе кăтартать.)*

**Тепĕр кӳрши** *(шăппăн).* Куртăм-ха, куртăм... Пит хитре значок...

**Пĕр кӳрши.** Тăмсай! Значок мар вăл, Ылтăн Çăлтăр! Çавна та чухлаймастăн пулать. Ĕç Геройĕн Çăлтăрĕ!

**Тепĕр кӳрши** *(иккĕленсе).* Мар пу-уль... Çавăн пек çамрăкскерĕн ăçтан ун пекех пысăк награда пултăр?

**Санюк** *(Маша умне пырса тăрса, Çăлтăрĕ çине*

*кăтартса).* Маша... Скажите... Это у вас... Золотая Звезда Героя, да?

Маша *(кăмăллăн кулса).* Как будто она...

Пĕр кӳрши *(теприне).* Илтрĕн-и? Ак сана «значок». «Мар пу-уль» тесе ларатăн-ха тата!

Тепĕр кӳрши. Айтурух! Ак ăçта вăл тĕлĕнмелли! Ылтăн Çăлтăрлă кин!..

Санюк. А когда вы ее получили? За что?

Маша. В прошлом году. За лен. Мое звено рекордного урожая льна-долгунца добилось...

Пĕр кӳрши. Ăнлантăн-и?

Тепĕр кӳрши. Ăнлантăм. Йĕтĕн вăйлă туса илтĕмĕр, тет. Хамăн Хвеклана кайса калас-ха часрах, вăл та килсе куртăр. Ну, тĕлĕнмелле-çке! Шак! хытса каймалла!

Пĕр кӳрши. Манăн та Марьене кайса калас пуль, вăл та килсе куртăр Çинави кинне.

Иккĕшĕ те алăк патнелле утаççĕ.

Аркаш. Митрий Иванч! Унтри Прокопч! Ма тухса каятăр? Халех сĕтел хушшине ларатпăр вĕт! Пĕрер черкке...

Пĕр кӳрши. Эпир килетпĕр-ха, Аркаш, таврăнатпăр. Арăмсене кайса калатпăр çеç.

Аркаш. Вĕсене те чĕнĕр!

Тепĕр кӳрши. Ан пăшăрхан, çын хăнана чĕннĕ чух эпир кутăнлансах тăмастпăр.

Аркаш. Часрах килĕр эппин!

Кӳршĕсем тухса каяççĕ.

Маша *(ĕçме-çимесене сĕтел çине меллĕрех вырнаçтарса).* Почему они вдруг убежали? Их к столу надо было пригласить.

С а н ю к. Они придут. За женами пошли. Хотят, чтобы и жены ихние на вас, на нового человека, посмотрели...

М а ш а *(кулать)*. А что, я невидаль какая? Или заморский зверь, чтобы разглядывать меня?

А р к а ш. Обычай это, Машенька, обычай. Ничего тут плохого нет. А мне самому даже приятно.

М а ш а. От того, что твою жену каждый будет обсматривать, как купленную на базаре телку, да?

А р к а ш. И вовсе не потому. От того, что все будут тобою любоваться. Ты же у меня... писаная красавица, другой такой на всем белом свете нету!

М а ш а *(Аркаша сăмсинчен шаклаттарать.)* А ты дурачок все же у меня. Настоящий дурачок. Мальчишка-хвастунишка. *(Аркаша çамкинчен чуптуса илет.)* Но куда же запропастилась наша мамаша?

С а н ю к *(чӳречерен пăхса)*. Сейчас придет, наверное.

М а ш а. Я есть хочу. Вот, лягу и умру с голоду. Ты для этого привез меня за тридевять земель? *(Булка вĕçне хуçса илсе чăмлать.)*

С а н ю к *(çаплах чӳречерен пăхса)*. Аркаш, манăн Çинави инкене кайса тупас пуль, мĕн хăтланать вăл? Халех кӳршĕсем килеççĕ. Аван мар пулать.

А р к а ш. Кайса пăхкала-ха эппин. Таврăнмасан, Аркаш халех каялла тухса каять, те. Хăрат пăртак.

С а н ю к. Юрĕ! *(Каять.)*

М а ш а. А мне нравится у вас. Чисто так, опрятно. И природа хорошая, ничуть не хуже нашей.

А р к а ш. А я?

М а ш а. Что — ты?

А р к а ш. Я-то нравлюсь тебе? Или уже разлюбила?

М а ш а. Ну, дурачок и есть! *(Аркаш чĕркуççийĕ*

*çине ларать те ăна ыталаса чуптăвать. Аркаш çав вăхăтрах хăрах аллипе радиоприемнике ĕçлеттерме тытăнать. Унтан юрă илтĕнет: «Эх, как бы дожить бы, до свадьбы-женитьбы, и обнять любимую свою...»)*

Çинави хашкаса чупса кĕрет, çамрăксем чуптунине курса алăк патĕнчех чарăнса тăрать. Аркашпа Маша ăна асăрхамаççĕ, çаплах ыталанаççĕ, çаплах чуптăваççĕ-ха. Ним тума аптранă Çинави тӳртĕн çаврăнса тăрать.

Маша *(Аркаш аллинчен вĕçерĕнсе).* Ну, хватит тебе, медведь, удушишь еще! Есть я хочу...

Аркаш. Потерпи немножко, сейчас мать подойдет. Неудобно без нее начинать.

Иккĕшĕ те Çинавие курах каяççĕ.

Маша. Ой! А она уже здесь!

Аркаш. Эс таврăннă-çке, анне...

Çинави. Таврăнтăм çав. Ăçта каяс тата манăн?

Аркаш. Кил эппин часрах кунталла, каштах ĕçкелĕпĕр-çикелĕпĕр. Выçнă-ха эпир... Эс те пирĕн кучченеççене тутанса пăх.

Çинави ерипен сĕтел патнелле пырать. Çамрăксем çине вăрахчен ним чĕнмесĕр, шăтарасла пăхать. Лешсем те ним калама пĕлмеççĕ, тĕлĕннĕ.

Çинави. Эсĕ питĕ, питĕ путсĕр ача, Аркаш.

Аркаш. Мĕншĕн?

Çинави. Пĕчĕк чухне сахал хĕртнĕ эп сана.

Аркаш *(кулярах).* Кам чарнă сана, ытларах хĕртмелле-мĕн. Кăмăлу пулсан, халь те çунтарса илме пултаратăн. Чармастăп.

Çинави. Эс мĕншĕн тàнран кăларса ятăн мана?

Аркаш. Мĕнпе? Эп сана ним те каламан-çке?

Ç и н а в и. Каламарăн çав! Арăму çинчен те каламарăн! Вăл мĕнле çын иккенне те пĕлтермерĕн. Эп ăна... эп ăна хӳрине вăльтăр-вальтăр çавăракан вĕçен кайăк, пĕр-пĕр пуçтах хĕр тесе шутланă. Анчах вăл... анчах вăл ав мĕнлескер иккен! Ĕç Паттăрĕ! Ылтăн Çăлтăрлă! Ун çинчен эп санран мар, кӳршĕсенчен пĕлтĕм. Урамра тĕл пулса Энтри пиччӳ каларĕ. Ăçта сан намăс?

А р к а ш. Ара, эс ху тутуна тăсса тухса кайрăн та...

Ç и н а в и. Сан чармаллаччĕ, ман арăм чаплă çын, темеллеччĕ! Ухмах ача! *(Маша енне çаврăнса.)* Эх, кинĕм! Ылтăн кинĕм! *(Ăна ыталаса илет те вĕçĕмсĕр чуптума тытăнать.)* Ылтăн кинĕм! Ăçтан тĕл пулнă пуль сана ман ывăл!.. Турă çук, тетĕр те эсир, анчах турри пурах çав! Турă пӳрсе панă мана çакăн пек кин! *(Машăна çурăмĕнчен лăпкать, чуптăва-чуптăва илет.)* Спаççипă сана ман кин пулма килĕшнĕшĕн!

М а ш а *(Çинавие чуптуса).* Вам самим спасибо, мама...

С а н ю к чупса кĕрет те, Çинави кинĕпе килĕштернĕшĕн савăнса, урисемне тăпăртатса алă çупать.

С а н ю к. Вăт, лайăх! Вăт, лайăх! Паçăрах çапла кирлĕччĕ! Паçăрах çакăн пек ăслă пулмаллаччĕ!

Ç и н а в и *(Санюка хирĕç кăшкăрать).* Ан янра! Эп яланах ăслă!

Чӳречере кӳршĕсен сăнĕсем курăнаççĕ.

А р к а ш *(кӳршĕсене).* Кĕрсемĕр, мĕн тулта тăратăр?

Ç и н а в и *(аллипе сула-сула кăчăк туртать).* Кĕрĕр, пурте кĕрĕр! Урамра кама куратăр — пурне те

чĕнĕр! Савăнăр манпа пĕрле! Эп кин кĕртетĕп! Ывăла авлантаратăп! Ылтăн арăм илсе паратăп! Ылтăн кин пулать манăн! *(Сĕтел çинчи шампански кĕленчине тытса çĕклет.)* Аркаш, ывăлăм! Часрах çапса уç çак пичкене! Туй тăватпăр! Тĕнче курман чаплă туй! Пурте илтчĕр, пурте курччăр Тăлăх Çинави епле телейлĕ пулнине!..

Кӳршĕсем кĕпĕрленсе кĕреççĕ. Халь нумайййăн вĕсем — арçынĕ-хĕрарăмĕ, ватти-вĕтти...

Пĕр кӳрши. Куратпăр ĕнтĕ сан телейне, Çинави, пит лайăх куратпăр. Кун пек телей кашнинех лекмест вăл, çавна та шута илес пулать!

Тепĕр кӳрши. Çавăнпа та сана чун-чĕререн ыр сунса саламлатпăр!

Виççĕмĕшĕ. Ывăлупа кинне те ыр сунатпăр! Телейлĕ пулччăр, пӳрт тулли ача-пăча пултăр вĕсен!

Аркаш *(амăшне тулли стакан тыттарать)*. Пуçласа пар эппин, аннеçĕм...

Çинави. Пĕччен ĕçместĕп! Кине тултарса пар. Хăвна та тултар! Туп-тулли, хĕррипе тан!

Аркаш васкасах шампански тултарать.

Çинави. Ну, ырлăх та сывлăх пултăр сире, ачамсем! Ĕмĕр-ĕмĕр пĕр-пĕрне юратса пурăнăр, телейлĕ пулăр! Мана пĕр кĕтӳ мăнук туса парăр! Эх-ма!.. *(Еçет те хăй юрласах ташласа ярать.)*

Çырма хĕрне ансассăн та,
Кули ура йĕпенмест,
Киле ылтăн кин кĕртсессĕн,
Кули чунăм савăнмасть...

Ыттисем пурте, алă çупса, унпа пĕрле юрлама тытăнаççĕ:

Кĕтĕм-кайрăм пахчине те
Йывăçшăн мар, улмишĕн,
Килсе кĕчĕ ман киле те
Сап-сар кинĕм — ывăлшăн...

Улăхрăм хурăн çине те
Çĕр пураклăх хуппишĕн,
Чупса тухрăм урамне те
Ылтăн кине курасшăн...

Кĕрлет, шавлать Çинави килĕнче ăнсăртран пуçланса кайнă туй...

◆

Пĕр пайлă камит

# Пăтăрмах



## КАМИТ КĂТАРТАКАНСЕМ:

Сарсухалов, постри милиционер, сержант.
Кулаев, милици майорĕ.
Яшков, тӳпеттей тăхăннă, шакла пуçлă, пуклакрах çын
Храбров, шалча пекскер, Яшков тусĕ.
Соня, сăра киоскĕнче сутă тăвакан хитре пике.

Атăл хĕрри. Сценăн сулахай енче — тин çеç сăрласа лартнă илемлĕ киоск, ун çамки çине «Сăра-квас» тесе çырнă. Сылтăм енче балюстрада — эрешлĕ чул хӳме курăнать.

Çуллахи ир. Пĕтĕм тĕнче пархатарлă сар хĕвел ăшшинче ыр курать. Кисок хыçĕнче скверта вĕçен кайăксем пĕр-пĕринпе ăмăртса чĕвĕлтетеççĕ. Çывăхри радиорепродуктортан чуна çĕклентерекен хаваслă кĕвĕ шăранса тухать.

Сылтăмран, балюстрада енчен, Соня курăнать. Ик аллипе ик тулли витре йăтнă. Шыв ăсса килет вăл. Сцена урлă вĕт-тĕн-вĕттĕн утса каçать те киоска кĕрсе каять. Çав вăхăтрах Атăл хĕррине милици сержанчĕ Сарсухалов, ытармалла мар хитре те япшар каччă, тухать; вăл пĕр-ик хутчен каллĕ-маллĕ уткаласа, унталла-кунталла пăхса илет те балюстрада çумне тайăнса пирус тивертсе ярать. Атăл çинелле пăхса темле кĕвĕ шăхăркалать. Паян унăн кăмăлĕ çав тери аван пулмалла...

Кĕçех киоск чӳречи уçăлать, Соньăн сап-сар пуçĕ курăнать.

Соня *(сержанта палласа илсе).* Здрасте, Сарсухалов юлташ! Салам сана, ыр кун пултăр, Тимофей Васильччă!

Сарсухалов *(ун еннелле вăрт! çаврăнса).* А-а, саркайăк! Салам, салам. Ырлăх-сывлăх сунатăп.

Соня. Спаççипă ыр сăмаххушăн. Ир-ирех поста тухса тăтăн пулать. Дежурство-и паян?

С а р с у х а л о в. Так точно. Поста килтӗм. Служба. Тăратăп акă çанталăк ытармалла мар пулнăшăн савăнса.

С о н я *(кăмăллăн кулкаласа).* Çанталăкӗ чăн та чаплă çав. Такамăн та уçăлса çӳрес килмелле. Леш енче епле ырлăх пулать пуль паян! Тем пек кайăттăм, анчах ӗçлес пулать. План тултармалла, унсăр хырăм тăранмасть...

С а р с у х а л о в. Çапла çав, ӗçлес пулать. Никамăн та тунеядца пулмалла мар. Харампыр-тунеядцăсене эпир халь пӗр наччасра çавăрса илетпӗр: çиес тетӗн пулсан — ӗçле!

С о н я. Пит тӗрӗс тăватăр... Санăн хăвăн çамрăк пурнăçу еплерех пырать тата ку чухне, Тимофей Васильччă?

С а р с у х а л о в. Питӗ вăйлă. Тракторпа туртса пынă пекех.

С о н я. Санăн арăму, Зиночка, мӗнле? Аванах-и? Ача туса памарӗ-и-ха? Пӗркун пасарта куртăм та, самаях пăрса çивӗ пек туйăнчӗ...

С а р с у х а л о в. Маваскас? Вăхăчӗ çитсен тăвӗха. Пӗрре палăрнă япала ниçта та çухалас çук.

С о н я *(куларах).* Мӗн кӗтетӗр-ха ӗнтӗ — хӗр-и, ывăл-и?

С а р с у х а л о в *(çук уссийӗсене пӗтӗрнӗ пек тăвать).* Генерал кӗтетӗп. Генерал-майор!

С о н я. Ах, тур! Тӳрех генерал çинчен ӗмӗтленетӗн пулать! Хăвăн пек сержант пулсан — çитмест-и?

С а р с у х а л о в. Сержант — сахал вăл. Генерал пултăр. Пӗлетӗн-и, çыннăн яланах малашнехи, пысăкраххи, лайăхраххи çинчен ӗмӗтленес пулать. Ӗмӗтленмен çын вăл — пуш параппан. Ун пек çынпа коммунизм тăваймастăн.

С о н я. Анчах генерал вырăнне пӗр-пӗр артистка

е доярка çуралчĕ пулсан? Ана пĕлме çук-çке, заказпа пулакан япала мар вăл. Вара мĕн?

С а р с у х а л о в. Паллах, ун пек пулсан та юрать, пурнăçра артисткăсем те, ĕне сăвакансем те, сан пек сăра сутакансем те кирлĕ, анчах манăн çапах та чăн малтан ывăл пултарас килет. Хĕрĕсем кайран пулччăр. Тата... хĕрсене юратсах каймастăп эпĕ.

С о н я. Ак япала! Авланиччен юрататтăнччĕ-çке? Миçе хĕр макăрмарĕ пуль саншăн!

С а р с у х а л о в. Сăмах майĕн каласан, эп никама та кӳрентермен. Ман совĕç таса вăл енчен. Çылăх çук. Пулма та пултараймасть!

С о н я. Эс ху кӳрентермен пулсан та, вĕсем пурĕпĕр кӳреннĕ-çке. Эп хам пĕлни пĕр сакăр хĕр... Пĕрпĕринпе чĕп-чĕр юн пуличчен çапăçса пĕтрĕç сан пирки...

С а р с у х а л о в *(ассăн сывласа ярать).* Эхх!.. Çавăнпа авлантарчĕç те ĕнтĕ мана.

С о н я. Епле апла — авлантарчĕç пулать?

С а р с у х а л о в. Çаплах. Хушрĕç авланма. Приказ пулчĕ.

С о н я *(пуçне чӳречерен тата ытларах кăларать).* Кай, кун çинчен илтмен-çке эпĕ... Кил-ха кунтарах, аякран кăшкăрса калаçни аван мар. Çынсем илтсен, сăра сутакан Соня милиципе харкашса кайнă, тейĕç тата...

С а р с у х а л о в. Мĕнех вара, пыма та пулать... *(Ерипен, мăнаçлăн утса киоск умне пырса тăрать.)*

С о н я. Сăмах-юмах пуçличчен пĕр курка сăра ĕçсе паратăн-и, Тимофей Васильччă? Пичкине тин çеç уçрăм, сăри швежи. Кăпăклă, хăйма пек.

С а р с у х а л о в. Мĕнех вара, ĕçсе пăхма пулать. Арăм паян ирхине икерчĕ пĕçерчĕ те, çуллăрах çирĕм пулмалла, ĕçес килет, çăвар маччи типсех ларчĕ.

Соня. Акă, Тимофей Васильччă, тархасшăн! *(Ун умне тулли курка лартса парать.)*

Сарсухалов. Тавтапуç, саркайăк.

Соня. Сывлăха пултăр.

Сарсухалов *(сăрине çурри таран ĕçет те киоск чӳречи анине лартать).* Аван сăра. Чăнах та хăйма пекех. Тĕлĕнмелле... Шыв хутăштарни пĕртте сисĕнмест. *(Кĕсйинчен шап-шур тутăр кăларса тутине шăлать.)*

Соня. Чипер калаç-ха эсĕ, мĕн шывĕ пултăр! Ман сăрана яланах пурте мухтаççĕ. Эпĕ вĕт хăшпĕрисем пек мар, честнă ĕçлетĕп!

Сарсухалов. Çапла пулмалла та вăл. Совет çыннин яланах честнă ĕçлемелле, нихçан та шульăкланмалла мар. Анчах шульăксем вĕсем пурĕпĕрех пирĕн алла лекеççĕ. Паян мар-тăк — ыран, ыран мартăк — виçмине. Эпир вĕт яланах начеку. Хамăрăн службăна çирĕп тытса пыратпăр.

Соня *(йăпăлтатарах).* Çапла ĕнтĕ, ара, çапла, сирĕн ĕçĕ çавă та-ха! Эсир сыхă-тимлĕ пулмасан, пирĕн пурнăç та йĕркеллĕ пулас çук...

Сарсухалов. Тĕрĕс калаçатăн. Эс илтнĕ-и, чаплă поэт Владимир Маяковский пирĕн çинчен мĕн каланă?

Соня. Илтмен, пĕлместĕп.

Сарсухалов. «Моя милиция меня бережет», тенĕ вăл. Чăвашла каласан, ку вăл «манăн милици мана хӳтĕлет» тени пулать.

Соня. Лайăх каланă... Мухтанă сире!

Сарсухалов. Мухтас пулать çав, мĕншĕн тесен эпир яланах начеку. Халăхшăн тăрăшатпăр.

Сулахайран васкасах Яшковпа Храбров тухаççĕ. Тӳрех киоск умне пырса тăраççĕ, Яшковĕ кĕсйинчен укçа кăларать.

Яшков. Пĕрер курка сăра ĕçтер-ха пире, хитре пике.

Храбров. Сăри шалккă мар пулсан...

Соня. Ыр ҫынсемшĕн мĕншĕн шалккă пултăр? Ĕҫĕр, тархасшăн. Пĕрер курка мар, хуть те виҫшер ĕҫĕр... *(Сăра тултарса парать, лешсем ĕҫеҫҫĕ.)*

Яшков. Хӳхĕм сăра!

Храбров. Ҫакăн пек хитре хĕрĕн те япăх сăра пулсан тата... Кур-ха, хăйне те пĕр ҫăвар сăрапа ҫăтса ямалла-иҫ!

Яшков. Тавтапуҫ, хитре пике! Паян ыр каччă тĕлне пулмалла пултăрах санăн! Ме, тыт укҫине...

Яшковпа Храбров тек тытăнса тăмаҫҫĕ, тăвалла хăпарса каяҫҫĕ. Сарсухалов сцена варринелле тухса вĕсен хыҫĕнчен пăхса тăрать, унтан Соня патне таврăнать.

Сарсухалов. Эс ку ҫынсене паллатăн-и?

Соня. Пĕрремĕш хут куратăп...

Сарсухалов. Анчах эпĕ пĕрине палласа илтĕм. Леш шакла пуҫлине, тӳпеттей тăхăннине... Виҫĕмҫул эп ăна тĕрмерен суда конвойласа кайсаттăм. Ăна тем вăрланăшăн суд турĕҫ. Ик ҫуллăх. Халь ĕнтĕ срокне ларса таврăннă пулмалла...

Соня. Пулĕ, пулĕ. Кунта, Атăл хĕрринче, темле ҫынна та тĕл пулма пулать.

Сарсухалов. Ну, хамăн маршрутпа кайса ҫаврăнса килес пуль. Тен, ҫак ҫынсене тепре тĕл пулатăп-и...

Соня. Чим-ха, Тимофей Васильч...

Сарсухалов. Мĕн?

Соня. Эс ан ҫиллен те-ха мана... Пĕр сăмах ыйтам-ха...

Сарсухалов. Пĕрре мар, хуть те иккĕ ыйт. Хĕрарăмсене ҫилленес йăла ҫук манăн.

Соня. Ара, халь кăна, ав лере тăнă чух, эсĕ хăв-

на авланма приказ пани ҫинчен каларӑн та-ха... Сирӗн мӗн... Зинӑпа малтанах йӑнӑш пулман пулӗ те?

С а р с у х а л о в *(ӑнланмасӑр, тӗлӗнсе).* Мӗнле йӑнӑш? Мӗн ҫинчен калаҫатӑн эсӗ?

С о н я. Ну, эппин-тӗк... Пулать-ҫке тепӗр чух... Малтан ача ят хураҫҫӗ, унтан вара туй тӑваҫҫӗ... Туйӗ пуличчен вӑл вопроса месткомра, комсомолта е партейнӑй йӗркепе сӳтсе яваҫҫӗ, каччине туй парни вырӑнне строгий выговор с занесением шаплаттарса хураҫҫӗ. Сирӗн те ҫавӑн пек пулман пуль те?

С а р с у х а л о в *(пуҫне сулкаласа).* Эх, саркайӑк, саркайӑк! Эп салтака кайиччен эпир санпа та пӗр хушӑ туслӑ пулсаттӑмӑр, пӗр икӗ хут Атӑл леш енне кайса хӑйӑр ҫинче хӗртӗнсе выртнине те астӑватӑп... Анчах эс мана пӗртте пӗлместӗн иккен! Эпӗ, комсомолец Тимофей Сарсухалов, нихҫан та сысна пулман, яланах сознательнӑй ҫын пулнӑ! Зинӑна эпӗ авланиччен кача пӳрнепе те тӗкӗнмен!

С о н я. Ма-ха эппин «авланма приказ пачӗҫ» тетӗн?

С а р с у х а л о в *(кулса ярать).* А-ав мӗн пирки иккен эсӗ! Ку вӑл пачах урӑхла япала!

С о н я. Мӗнле япала?

С а р с у х а л о в. Эс хӑвах каларӑн-ҫке... Хӑшпӗр хӗрсем ман пирки пӗр-пӗрине тытса лӑскани ҫинчен ара...

С о н я. Вӑл точнӑ пулнӑ-ха! *(Васкаса калама тытӑнать.)* Пасар патӗнчи парикмахерскинче ӗҫлекен Тарьепе Марье сан пирки ҫапӑҫса кайса пӗр-пӗрин кӑтрисене йӑлт тӑпӑлтарса кӑларнӑ, милици чупса пырса аран чарнӑ вӗсене. Кӗпер патӗнчи киоскра сутӑ тӑвакан Марфушка фотографинче ӗҫлекен Ларисӑна чӗнсе кӗртнӗ те унӑн нейлон кофти ҫине пӗр курка тутлӑ квас чашлаттарнӑ — лешӗ вӑл кайран темле

çусан та каймасть. Кинотеатрти кассирша Евлашка поликлиникăри пĕр медсестран пит-куçне хăйĕн пӳрнисем çинчи маникюрĕсем хуçăлса пĕтичченех тăрмаланă, ĕçĕ кайран прокурор патнех çитнĕччĕ...

Сарсухалов *(пĕççине çапса илет).* Отчаяннăй халăх çав хальхи хĕрсем, мĕн тăвас тетĕн... Боевой халăх!

Соня. Çав камитсем çинчен пĕр хушă пĕтĕм хула калаçрĕ...

Сарсухалов. Калаçкаланă пулмалла çав. Юлашкинчен вăл хыпар пирĕн начальник хăлхине те пырса кĕнĕ. Пĕррехинче вара мана постранах чĕнтерчĕ хăй патне. Тĕлĕнсех кайрăм малтан: мĕн пулнă капла, ма чĕнтерет? Хамăн нимĕнле айăп та çук пек,— нарушенисем туман, унччен пĕр-икĕ эрне малтарахран çеç çакăнта, Атăл хĕрринче, çиллĕ-çумăрлă каç пĕр вăрра питĕ ловкă тытнăшăн приказ çырсах тав тунăччĕ мана. Çапах та шикленетĕп... Ну, пырса кĕтĕм çакăн патне... *(Честь панă пек тăвать.)* «По вашему приказанию сержант Сарсухалов явился!» «Лар»,— терĕ начальник. Лартăм. «Мĕнле пурăнатăн?» «Чиперех-ха»,— тетĕп. Унтан вăл пĕр хушă ним чĕнмесĕр ман куçран пăхса ларчĕ те, хăйĕн темле хуйхă пулнă пек ассăн сывласа илсе пирус тивертсе ячĕ. «Сана пĕр сăмах каламалли пур...» — тет. «Итлетĕп, начальник юлташ!» Пуçларĕ вара калама... «Эсĕ, Тимоша, пит лайăх каччă, хисеплетĕп сана... Службăра та шутсăр примерлă, дисциплина та çирĕп санăн, анчах пĕлетĕн-и эс, сан пирки хулара хулиганствă ӳсет, ЧПсем пулаççĕ! Хĕрсем çапăçаççĕ! Халь кăна прокурор шăнкăравларĕ — чарăр хăвăрăн Сарсухалова, хĕрсен чĕрисене ан çунтартăр вăл, тет. Мĕн тăвас пулать-ха, Тимоша? Авлан тавай, шуйттан çури! Пĕр эрне срок паратăп сана туй тума... Асту, итлеме-

сен санӑн погонусене хывса илме тивет!..» Ну, мӗн калас-ха манӑн начальнике хирӗҫ? «Слушаюсь!» — терӗм кӑна. Зинӑпа иксӗмӗр унччenех калаҫса татӑлнӑччӗ-ха эпир, анчах туйне кӗр енне тин, вӑл отпуска тухсан тума палӑртнӑччӗ, халь вара ирӗксӗрех срокне чакармалла пулчӗ. Кайрӑм та каларӑм Зинӑна: ҫапла та капла, терӗм, начальник халех авланма хушрӗ, атту-тӑк милицирен кӑларса ярать, терӗм. Паллах, вӑл савӑнсах килӗшрӗ. Тепӗр эрнерен вара начальник патне кӗтӗм те по всей форме доложить турӑм: «Ваше приказание выполнено!..» Ҫавӑнтах ун умне ЗАГС хутне кӑларса хутӑм. Начальник малтан кулса ячӗ, унтан сӗтел хушшинчен тухса ал парса саламларӗ: телейлӗ пулӑр, кашни ҫулах пӗрер ывӑл ҫуратӑр, совет милицийӗ валли пополнени хатӗрлӗр, терӗ...

Соня. Э-э, эсӗ ҫавӑнпа ывӑл кӗтетӗн пулӗ-ҫке! Начальник хушнине пурнӑҫа кӗртесшӗн!

Сарсухалов. Ҫук, ытла уншӑнах та мар. Ывӑл пулассине ахаль те ӗненсех тӑратӑп эпӗ, мӗншӗн тесен пирӗн ратти ҫавнашкалскер — арҫын ратти.

Соня. Мӗнле вӑл — арҫын ратти?

Сарсухалов. Ман мамак умлӑ-хыҫлӑ тӑхӑр ывӑл ҫуратнӑ, пӗр хӗр те пулман. Ман анне вара унтан та иртттернӗ... Пурӗ вӑл вунпӗр ача ҫуратнӑ, вӗсенчен вуннӑшӗ ывӑл пулнӑ, юлашкинчен тин темле майпа пӗр хӗр тукаланӑ.

Соня *(кулать)*. Тупӑннӑ ӗнтӗ квас чӗрес тӗпӗнче...

Сарсухалов. Ман Зина та аннерен юлмасть пуль, тетӗп-ха. Хӗрарӑмӗ маттур, пултармалла, халӑх умӗнче намӑс курас ҫук.

Соня *(кулать)*. Санӑн ӑна вунӑ ача ҫураттарса «отец-герой» ятне илес килет ӗнтӗ, ҫапла-и?

Сарсухалов. А мӗн? Эп хирӗҫ мар. Япӑх-им вӑл? Шутла-ха эсӗ, мӗн тери аван пулать! Ирхине

вуннăшне те вырăн ҫинчен тăратса тухатăп та пĕррех команда паратăп: о-отделение, на зарядку становись! Шаго-ом марш! Раз-два, раз-два! Тытăнатпăр вара тĕрлĕ фигурăсем тума, пăхса тăр кăна!

Соня. Шутник эсĕ, Тимофей Васильччă. Ҫав тери хаваслă ҫын. Юрататăп сан пек маттурсене.

Сарсухалов. А мĕн, пурнăҫра кичем пулни лайăх-им? Тата мĕншĕн кичем пулас-ха пирĕн? Мĕн ҫитмест пире? Мĕншĕн хуйхăрас, мĕншĕн манка юхтарас? Йĕри-тавра пурнăҫ хĕвел пек ҫиҫсе тăрать...

Соня. Вал тĕрĕс-ха. Нимшĕн те хурланмалли ҫук халь. *(Курка ҫине кăтартса.)* Сăрине ĕҫсе ярсам тата, Тимофей Васильччă, сĕвĕрлсе каять-иҫ. Кăмăлу пулсан, татах ярса парăп...

Сарсухалов. Тавтапуҫ, саркайăк, анчах службăри ҫыннăн урă пулас пулать. Тек эп пĕр ҫăвар та сыпмастăп. Точка. Ак, халех сана укҫа тӳлетĕп те хамăн маршрутпа каятăп. *(Кĕсйинчсн вак укҫа кăларса шутлама тытăнать.)* Пĕр курки ҫирĕм икĕ пус тăратчĕ-и-ха вăл? Авланнăранпа сăра хакне те манса кайнă.

Соня. Уй, чипер калаҫ-ха эс, Тимоша, мĕн укҫи?! Сан пек ырă ҫынран укҫа илсе тăратăп-и вара? Ан хăтлан, ан хăтлан, пуҫтарса чик манетусене! Луччă эс вăл укҫапа пулас ывăлу валли соска илсе хур...

Сарсухалов. Ун пек пулма пултараймасть, саркайăк. Мĕнле тивĕҫпе так ахаль, песплат ĕҫмелле-ха манăн? Санран кашни куркишĕнех отчет ыйтаҫҫĕ вĕт. Сăрине ăна шутпа панă пуль? Ҫĕр курка сутнă — ҫĕр куркашăн кантура укҫа кайса пар. Ҫапла-и?

Соня. Вăл ҫапла та-ха ара, эс ҫывăх палланă ҫын-ҫке-ха, ҫамрăк чух танцине те пĕрле ҫӳрекеленĕ, санран епле укҫа илетĕн? Намăс пулать!

С а р с у х а л о в. Анчах растрата сиксе тухсан, сутнă сăришĕн кантура хывма укçи çитмесен, намăс пулмасть-и? Э? Кала-ха эс мана çавна.

С о н я. Уй, çав пĕр куркашăн мĕн растрати пултăр?

С а р с у х а л о в *(укçа пама тăрать).* Ме, тыт, саркайăк, çирĕм икĕ пус.

С о н я. Кай, кай, илместĕп, илместĕп! Кайран хăвах кулса çӳретĕн манран. Юлташусене те каласа паратăн: тимĕр пăрçа — хыткукар, тухатмăш хăраххи, пĕр-пĕрне тахçантанпах паллатпăр пулин те, пĕр курка сăрашăн укçа сăптăрса илчĕ, сысна, тетĕн. Çук, çук, чик укçуна каялла! *(Ик аллипе пĕр харăс сулать.)*

С а р с у х а л о в. Апла мар, Сонечка, илетĕн! Ку сăри санăн хăвăн мар вĕт?

С о н я. Паллах, хамăн мар.

С а р с у х а л о в. Патшалăхăн?

С о н я. Патшалăхăн.

С а р с у х а л о в. Апла пулсан, мĕнле тивĕçпе эс ăна çынсене укçасăр ĕçтерме пултаратăн-ха? Патшалăх укçине çилпе вĕçтерни пулмасть-и вăл, шутласа пăх-ха?

С о н я. Кай, Тимофей Васильч, эс темле ăнланмалла мар калаçа пуçларăн. Эп санпа тус-юлташла пуплетĕп, эс мана милицире допрос тунă пек...

С а р с у х а л о в. Ним те допрос тунă пек мар. Эп сана кăштах ăс парас тетĕп кăна. Мĕншĕн тесен патшалăх пурлăхĕпе вылямалла мар. Вал виçĕ пуслăх пулсан та, ăна перекетлес пулать. Патшалăх сăрине те унталла-кунталла чăш-чаш сапмалла мар. Ăнлантăн-и? Пире саккун çавăн пек хушать. Тата кашни çыннăн граждански совĕç тени пулмалла. Ме, тыт укçа. Шутла...

С о н я *(çилленме пуçласа)*. Илместĕп! Эп ыйткалакан мар. Эс ĕçнĕ сăрана хам ĕçнĕ тесе шутлăп.

С а р с у х а л о в. Пĕлетĕн-и, саркайăк... Эп сан сăруна так ахаль, укçа тӳлемесĕр ĕçни вăл — эп санран взятка илнĕ пек пулать! Юрамасть апла!

С о н я. Мĕн взятки тата? Мĕн сăлтавпа взятка парас ман сана?! Эп мĕн, вăрланă-и, çаратнă-и, кама та пулин хĕнесе тăкнă-и? Эс мана тытса протокол çырнă-и? Сӳпĕлтететĕн çав кирлĕ мара! Хăвна ытлашши ăслă пек кăтартма хăтланатăн. Сасналсă эсĕ, тепĕр тесен! Манра нимĕнле айăп та çук, тап-таса çын эпĕ! Айăпа кĕрсен вăл, хăшĕсем начальствăсене епле те пулин çу сĕрме хăтланса çӳреççĕ... Эп ун йышши мар! Çак киоскра сакăр çул ĕçлесе те айăпа кĕмен!

С а р с у х а л о в *(кăмăллăн кулса)*. Ах, саркайăк, саркайăк! Хаяр та иккен эсĕ... Мĕнле пурăнать пуль санпа упăшку?

С о н я. Пит лайăх пурăнать! Ачашлать, ыталать, чуптăвать... тата ытти те. Кашни праçникрех подаркăсем илсе парать. А эсĕ манпа темле айăпа кĕнĕ çынпа калаçнă пек калаçатăн... Взятка, тетĕн!

С а р с у х а л о в. Эс ан кӳрен, саркайăк. Айăпĕ вăл хуть те камăн та тупăнма пултарать... лайăххрах шырасан.

С о н я. Манне тупаймастăн! Ман çук!

С а р с у х а л о в. Тавай тавлашмастпăр, Сонечка. Ир-ирех кăмăла хуçар мар. Кур-ха, çанталăкĕ епле паян... Итле-ха тата, скверта кайăксем епле хитре юрлаççĕ.

С о н я. Эсĕ ху темшĕн чĕрре кĕрсе кайма тытăнтăн!

С а р с у х а л о в. Ним те чĕрре кĕмен эпĕ. Сана патшалăх пурлăхне упрасси çинчен кăштах инструктаж турăм кăна, Анчах айăп пирки калаçас пулсан...

С о н я. Мĕн вара? Манăн та айăп пур тесшĕн-и эсĕ?

С а р с у х а л о в. Аплах каламастăп та, анчах... *(Киоск чӳречинчен шалалла пăхса илет.)* Акă, калăпăр, паçăр эсĕ Атăлтан икĕ витре шыв ăсса хăпартăн, ăна эпĕ хам куçпа куртăм...

С о н я. Ăсса килтĕм çав. Куркасем çума мана шыв кирлĕ те-ха...

С а р с у х а л о в. Анчах халь пăхатăп та, сан унта пĕр витри пушă ĕнтĕ. Ăçта кайнă çав витрери шыв? Паян эсĕ пĕр курка та çуман-ха...

С о н я. Эп вăл шывпа киоск крыльцине, алăк умне çурăм.

С а р с у х а л о в. Суятăн, саркайăк. Алăк умĕ типтипех, унта пĕр тумлам шыв та ӳкмен.

С о н я. Эс мĕн... эс мĕн, Тимоша? Эпĕ çав витрери шыва пичкене янă тесшĕн мар-и тата? Ара, сăрине эсĕ ху ĕçсе пăхрăн-иç, шыв тути каламасть тесе мухтарăн? Халь кăна тата иккĕн ĕçсе кайрĕç, вĕсем те мухтаса хăварчĕç! Мĕн ухмахланатăн эппин? Е мана юри çĕтĕлтерес килет-и?

С а р с у х а л о в. Санăн унта виçĕ пичке, саркайăк. Виççĕшĕнне те пăккисене уçнă... Э? Енчен те кам та пулин тĕрĕслесе пăхçассăн...

С о н я. Кай, этем мар пуль эсĕ! Тĕрĕсле ара, тĕрĕсле, кам чарать сана? Понятойсем чĕн, протокол çыр, суда пар, хуптар!

С а р с у х а л о в. Юрĕ, юрĕ, хӳрӳне ытлашши ан тăрат. Манăн сан сăрупа аппаланма вăхăт çук, манăн хамăн ĕçсем те çителĕклĕ. Анчах пĕр те пĕр суту-илӳ инспекцийĕ килсен...

С о н я. Килччĕр, тĕрĕслеччĕр! Вунă инспекци килсен те хăрамастăп, ма тесессĕн эп честнă...

С а р с у х а л о в. Эп сана шульăк темерĕм пуль?

С о н я. Çавăн майлах каларăн! Айăп, терĕн, взятка, терĕн.

С а р с у х а л о в. Ăнааларăм çав. *(Каллех чӳрече витĕр шалалла пăхса.)* Ак тата, сăмахран, мĕнле пуш поллитрсем лараççĕ сан унта? Сана эрех сутма ирĕк паман вĕт-ха? Ăçтан килсе лекнĕ эппин сан патна çав поллитрсем?

С о н я *(çилĕпе)*. Хам ĕçрĕм! Анчах пуш кĕленчисене кайса пама вăхăт пулмарĕ-ха! Çавăн пек ответ килĕшет-и сана?

С а р с у х а л о в. Килĕшмест, мĕншĕн тесен тĕрĕс мар вăл. Кун чухлĕ московскипе перцовкăсем ĕçсен, эс тахçанах леш тĕнчере пулмалла. Эс кунта вăрттăн эрехпе сутă тăватăн, акă мĕн!

С о н я. Тытрăн-и эс мана?

С а р с у х а л о в. Тытрăм ĕнтĕ, ав мĕн чухлĕ пуш посуда тăрать. Çветтуй сывлăш килсе лартнă-им вĕсене? А эсĕ мана хирĕç çăварăнтан кăпăк кăларсах кăшкăратăн: ман айăп çук, эп честнă! Эх, саркайăк, саркайăк! Ăçта сан совĕç?

С о н я. Йăнăшатăн эсĕ! Веç йăнăшатăн!

С а р с у х а л о в. Йăнăшмастăп. Милицин йăнăшма юрамасть.

С о н я. Нихçан та йăнăшмастăн-и?

С а р с у х а л о в. Ку таранччен манăн пĕр йăнăш та пулман, малашне те пулмĕ, тетĕп.

С о н я *(тăрук кулса ярса)*. Анчах хальхинче йăнăшрăн! Шутсăр йăнăшрăн!

С а р с у х а л о в. Хăш енчен йăнăшрăм-ши?

С о н я. Ак çак пуш кĕленчесем енчен. Эрех таврашĕ нихçан та сутман эпĕ. Ман посуда мар вăл.

С а р с у х а л о в. Ăçтан тупрăн эппин эс вĕсене?

С о н я. Имăннă тупрăм çав! Кашни кун тупатăп тата. Ирхине иртерех килетĕп те скверта сыщăк пек

ухтарма тытӑнатӑп. Кашни тӗмӗ хыҫӗнчех пуш кӗленче выртать. Тепӗр чух иккӗ-виҫҫӗ те пулать. Пухӑнать вара хам валли духи илмелӗх! Хӑш кунсенче ҫирӗм-вӑтӑр кӗленче таран пухатӑп. Укҫа вӗт вӑл?

Сарсухалов *(тӗлӗнсе).* Кам пӑрахса тултарать вара вӗсене сан валли?

Соня. Пьянчуксем! Милици чармасть те, тӗттӗм пула пуҫласанах пур ҫӗрте те «на троих» тума тытӑнаҫҫӗ... Ӗненместӗн пулсан, каҫхине килсе кур-ха пӗрре!

Сарсухалов. Хм-хм... интереснӑ ку...

Соня. Ӑнлантӑн-и халь? «Йӑнӑшма-астӑп!» тетӗн тата...

Сарсухалов. Юрӗ, каям-ха эпӗ. Санпа калаҫса вӗҫне тухас ҫук. Чипер юл. Тупӑшлӑ сутӑ тумалла пултӑр.

Соня. Чипер кай. Арӑмна салам кала. Ӑҫта вӑл халь?

Сарсухалов. Пасара кайрӗ пуль. Паян пултран яшки пӗҫересшӗнччӗ-ха. Пултранра витамин нумай, тет. *(Тӗмӗсем хушшине кӗрсе ҫухалать.)*

Соня *(кӑшт тӑхтасан).* У-у, шуйттан! Таҫта та пырса сӗкӗнет, тем те шӑршласа тупать... Куҫӑм ан куртӑрччӗ! Тьху! Ҫамрӑк чух юратнӑ вӗт-ха эп ӑна, чуптутарнӑ, ыталаттарнӑ... Ҫӗлен! Юрать-ха шала кӗрсе пӑхмарӗ... Ним мар акт ҫыратчӗ пуль!

Киоск умне Ӳсӗртерех сын пырса тӑрать те икӗ пӳрнипе черкке ҫӳллӗшне туса кӑтартать. Укҫа кӑларса хурать, чӗтренсе илет.

Соня. Кай, кай, ҫук манӑн нимӗн те! Халь кӑна милицири пӗр кӑркка аҫи тӗрӗслесе кайрӗ...

Ӳсӗртерех ҫын пӳрнипе хӑйне мӑйӗнчен каснӑ пек туса кӑтартать.

**Соня.** Ы-ых, шуйттан карланкисем! Сирĕншĕнех пĕтетĕп-ха эпĕ пĕрре-пĕрре. *(Пĕшкĕнсе курăнми пулать, самантранах леш çынна тулли черкке лартса парать.)* Хып та — тасал часрах куç умĕнчен! Сдачи пама вакки çук, тепĕр чух килĕн.

Ӳсĕртерех çын эрехе хоп! тутарать те тутине çанни вĕçĕпе шăлса илсе тĕмĕсем хыçнелле чупать. Çав вăхăтрах киоск умне тепри тухса тăрать. Малтанхи пекех, пӳрнисемпе черкке çӳллĕшне кăтартать.

**Соня.** Эс тэ сĕтĕрĕнсе çитрĕн-и? Çук нимĕн те! Урăх çĕре кайса шыра!

Çын хăвăрт кăна пуçне пăркаласа илет, хăйне мăйĕнчен çĕçĕпе каснă пек туса кăтартать.

**Соня.** Халер тивесчĕ сире, мурилесшĕсем! Кӳр часрах укçуна!

Çын пĕр ывăç вак укçа кăларса хурать. Соня пĕшкĕнсе эрех ярать, лартса парать, укçине шутлама тытăнать. Лешĕ васкасах ĕçет.

**Соня.** Сысна, укçу çитмест вĕт санăн! Ултă пус çитмест! Эрехне кӳпсе ятăн... Мĕн тăвас ман сана? Тавай, саклат парса хăвар мĕн те пулин! Ав, пуç тури курăнать. Пар кунта!

Эрех ĕçнĕ çын пуç тури кăларса хурать.

**Соня.** Халь вĕçтер! Тек килсе те ан курăн!

Ĕçнĕ çын, малтанхи пекех, тĕмĕсем хыçнелле чăмать. Соня, текех ĕç çуккипе, чавсаланать те, малалла ним тĕлсĕр пăхса, темле кĕвĕ ĕнĕрме тытăнать. Сылтăм енчен Яшковпа Храбров тухса пĕр тĕмĕ хыçне тăраççĕ. Храбров хĕвĕнчен хĕрарăм сумки туртса кăларса аллинче çавăркалать.

Храбров *(шăппăн)*. Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ кунпа, Яшка?

Яшков *(шăппăн)*. Тавай, малтан уçса пăхатпăр. Мĕн пур сумкинче? Тен, документ таврашĕ тупăнĕ, кам çухатнине пĕлĕпĕр. Вара мĕн тумалли курăнĕ...

Храбров. Пĕлсен, сыннине килех леçсе пама пулатчĕ.

Соня *(хăй тĕллĕн)*. Ай тур-тур... Ара, шăпанасем-иç кусем! Кай, кай, курăнас мар, эп пăхса ларнине асăрхасан — тем туса хурĕç!.. *(Пытанать, чÿречине хупать.)*

Яшков. Уç, кăлар мĕн пуррине.

Храбров. Уçăлмасть-ха, хăямат! Темле çăраççи...

Яшков. Эх, эсĕ те çав! Ĕлĕкрех чухне мĕн тери хăватлă çăраççисене пăт-шат! уçаттăнччĕ...

Храбров. Маннă халь. Виçĕ çул ĕнтĕ хамăн портсигарсăр пуçне урăх нимĕн те уçман...

Яшков. Кÿр-ха кунта!

Яшков сумкăна Храбров аллинчен илет те пĕррех уçать.

Храбров. Анчах эсĕ çăраççисем уçма манман иккен-ха.

Яшков *(кулать)*. Аçтан манатăн? Професси пулнă та-ха вăл манăн...

Храбров. Ну, кăлар тавай, мĕн унта...

Яшков. Чиччас, тусăм...

Иккĕшĕ те тĕмĕ айне кукленсе лараççĕ. Яшков сумкăри япаласене пĕрерĕн-пĕрерĕн кăларать, Храброва тыттарать.

Яшков. Хĕрарăм пуç тури... Самса тутри... Тĕкĕр. Тута сăрламалли. Ку мĕн тата, айтурух! Ха! Соска, ача соски... Пустушка, теççĕ-и-ха? Пĕр ывçă! Ку хĕрарăм пĕр харăсах пилĕк ача тунă-ши вара?

Храбров. Запас илнĕ ĕнтĕ, пирĕн хулара халь соска тупиччен автомобиль резини хăвăртрах тупма пулать, теççĕ... Тата мĕн?

Яшков. Квитанцисем. Сапожнăй, швейнăй... Хваттершĕн тӳлени, светшăн тӳлени... Пропуск. Чăлха фабрикине кĕмелли... Кур-ха, хĕрарăмĕ ничево так-тă. Ыталамалăх пур. Сăнĕ-пичĕ те аптрамасть. Артистка пекех... *(Иккĕшĕ те пропуск çинчи ӳкерчĕке пăхаççĕ.)*

Юнашарти тĕмĕ хыçĕнчен Сарсухалов пуçĕ курăнать. Вăл Яшковпа Храброва çав тери тимлĕн сăнама тытăнать. Лешсем ăна курмаççĕ, нимĕн те сисмеççĕ.

Храбров. Урăх нимĕн те çук-и?

Яшков. Курăнмасть.

Храбров. Укçа тавраш ĕ çук-и? Шыра-ха лайăхрах. Хĕрарăм сумкисенче пĕчĕк уйрăмсем пулаканччĕ.

Яшков *(аллине сумкăна чиксе ярса)*. Ак кунта темскер пур! Э, укçа хайхи! *(Ывăçласа кăларать.)* Самаях пулмалла. Шутла-ха. Йалт, пĕр пус юлмиччен шутла.

Храбров. Ăна пĕлĕпĕр-ха! *(Укçа шутлать.)* Пиллĕк, вуннă, вунулттă, çирĕм пĕрре... Çирĕм çиччĕ! Вакки тата... вуннă, çирĕм... вăтăр пĕр пус! Итог тусан, çирĕм çичĕ тенкĕ те вăтăр пус пулать.

Яшков. Ничево так-тă, пĕрре ресторана кайса курмалăх пур.

Храбров. Чипер калаçса лар! Такой ресторан кăтартăп эп сана! Вăл шухăша пуçăнтан кăларса пăрах эсĕ!

Яшков. А мĕн тăвас шут пур-ха санăн?

Храбров. «Стол находок»... леш тупнă япаласене леçсе паракан вырăн ăçтине пĕлетĕн-и эсĕ?

**Я ш к о в.** Пĕрре те илтмен. Вытрезвитель ăçтинĕ пĕлетĕп.

**Х р а б р о в.** Вăл кирлĕ мар-ха пире. Акă мĕн, Яшка... Эпир санпа халех çав «стол находок» тенине кайса тупатпăр та, çак сумкăна дежурнăй умне кăларса хуратпăр. Тĕрĕслетĕр вăл, шутлатăр, унтан пире расписка парса ятăр; апла та капла, совет гражданĕсем Яшковпа Храбров, тӳрĕ çынсем пулса, хăйсем паян Атăл хĕрринче уçăлса çӳренĕ чух тупнă япалана хăйсен ирĕкĕпех, ырă кăмăлпа, милицие илсе пачĕç, тесе çыртăр... Çапла-и?

**Я ш к о в** *(йăшаланса илет).* Çапли çапла та-ха, анчах ку укçаран пĕрре хырăм карăниччен апат çисе юлсан юратчĕ пуль...

**Х р а б р о в.** Çук, тусăм, юрамастчĕ пуль. Пирĕн укçа мар вĕт вăл? Пирĕн мар. Эпир ĕçлесе илмен ăна? Илмен.

**Я ш к о в.** Çапах та тупнă-çке...

**Х р а б р о в.** Тупнă та хуçине тавăрса панă. Уншăн вăл пире тем пекех тав тăвĕ.

**Я ш к о в.** Типĕлле тав туни мĕн вăл?

**Х р а б р о в.** Шуйттан эсĕ! Намăса пĕл! Колонирен тухсан эпир санпа пĕр-пĕрине мĕнле сăмах парса тупа турăмăр? Астăватăн-и?

**Я ш к о в.** Ăна астăватăп та-ха...

**Х р а б р о в.** Мĕн терĕмĕр эпир ун чух? Тек нихçан та, ĕмĕрне те, тупăка кĕрсе выртиччен те çын пурлăхне тĕкĕнместпĕр, вăрламастпăр, тĕрĕс пурнăçпа пурăнатпăр, хамăр алăпа ĕçлесе тупнă çăкăра çеç çиетпĕр...

**Я ш к о в.** Анчах ку вăрлани мар-çке, тупнă япала...

**Х р а б р о в.** Ан янраса тăр! Ку сумкине çухатакан хĕрарăмĕ халь выртса йăванса макăрать пулĕ-ха.

Тен, паян унӑн ачисем валли ҫӑкӑр илме те укҫи ҫук. Тен, упӑшки сан пек ненормальнӑйскер пулсан, укҫа ҫухатнӑшӑн ӑна тӑсса вырттарса хӗнет! Атя часрах, ҫав «стол находока» кайса тупатпӑр. Пӗтӗм ӗҫӗ те ҫав кӑна пирӗн. Кайрӑмӑр! Кӳр, сумкине хам ҫумма илетӗп.

Вӗсем сумкӑран кӑларнӑ япаласене каялла вырнаҫтарса хураҫҫӗ те хуланалла кайма пӗр-ик утӑм тӑваҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтра Сарсухалов тӗмӗ хыҫӗнчен тухать те шик! шӑхӑртать. Храбровпа Яшков ирӗксӗрех чарӑнса тӑраҫҫӗ.

Сарсухалов *(вӗсем патнелле пырса, честь парам пекки туса илет).* Каҫарӑр, граждансем, анчах манӑн сире пӗр минутлӑха чарса тӑратма тивет...

Храбров. Мӗн пирки-ши, сержант юлташ?

Сарсухалов. Хӑвӑрӑн документсене кӑтартӑр-ха мана.

Храбров. Мӗн сӑлтавпа? Мӗн тума кирлӗ пулчӗҫ сана пирӗн документсем?

Сарсухалов. Ку ыйту пачах та вырӑнсӑр, гражданин. Пирӗн кашни ҫынна тӗрӗслеме право пур.

Яшков. Эсӗ мӗн, пире пӗр-пӗр шпана тесе шутлатӑн-им? Ҫук, хаклӑ юлташ, эпир тӳрӗ ҫынсем, канмалли кун уҫӑлса ҫӳретпӗр, кислородпа сывлатпӑр. Кам чарма пултарать пире ҫутҫанталӑк ырлӑхӗпе усӑ курма?

Сарсухалов. Эп ним те шутламастӑп. Эсир камсем пулни сирӗн паспортсенчен курӑнӗ. Халех кӑтартӑр. Саккун ман енче, хирӗҫсе тӑрса вӑхӑта сая ан ярӑр.

Яшков *(ҫилӗпе).* Тархасшӑн ара, питех курас килет пулсан! Документсем пирӗн кӗсъе тулли. Пурте вӗр-ҫӗнӗ тата. Нимӗнпе те вараланман, милици аллинче те пулман...

Храбровпа Яшков хӑйсен документсене кӑлара-кӑлара парассӗ. Сарсухалов вӗсене васкамасӑр, питӗ тимлӗн, кашни страницине уҫса вулать. Ҫав вӑхӑтрах киоск чӳречи уҫӑлать те Соня пуҫӗ куранса каять. Вӑл тулта мӗн пулса иртнине пӗлесшӗн ҫунать...

Сарсухалов. Так, так... Колонирен таврӑннӑ-ха эппин эсир. Понятно... Аха, ӗҫе вырнаҫма ӗлкӗрнӗ. Аван... Эсӗ, Яшков, «Металлистра» ӗҫлетӗн, эсӗ, Храбров гражданин, парикмахерскинче сухал хыратӑн...

Храбров. Тӗп-тӗрӗс. Ӗҫлетпӗр. Хамӑр ҫӑкӑра ҫиетпӗр.

Яшков. Харампыр пулма шутламастпӑр.

Сарсухалов. Тӗрӗс тӑватӑр. Кашниннех хӑйӗн ҫӑкрине ҫиес пулать. Пирӗн совет пурнӑҫӗн йӗрки ҫапла... *(Документсене тавӑрса парать, унтан Храброва калать.)* Ну, халь ӗнтӗ эс хӗвне мӗн пытарнине кӑтарт мана. Мӗнле сумка вӑл, кам сумки? Ӑҫтан пырса лекрӗ вӑл сирӗн алла?

Храбров. Кӑтартма пултаратӑп, анчах хӑвӑн аллуна памастӑп, ун пирки сӑмах та пулма пултараймасть. *(Сумкӑна хӗвӗнчен кӑларса ҫавӑркаласа кӑтартать те каялла чиксе хурать.)*

Сарсухалов. Паратӑн! Парас мар пирки те, эс каларӗш, сӑмах пулма пултараймасть. Эп саккун тӑрӑх ыйтатӑп. *(Аллине тӑсать.)* Пар.

Храбров. Каланӑ сана памастӑп тесе! Эпир ӑна ҫирӗм минут каялла бульварти пӗр тенкел айӗнче тупрӑмӑр та халь «стол находока» леҫсе пама шут турӑмӑр.

Сарсухалов *(пуҫне пӑркаласа)*. Ах, мана ӗнентертӗм, терӗн пуль! Тупнӑ пулмасӑр! Такам тӑкса ҫӳрет-ха сире валли сумкӑсем! *(Сӑнне хаярлатса.)* Кала луччӑ, хӑш тӗлте, камӑнне ҫаклатрӑр? *(Мӑшкӑлланӑ пекрех.)* «Стол нахо-одок!..» Юрать хам асӑрхаса тыг-

са чартăм сире, атту пулсан тем тăваттăрччĕ-ха эсир! Ну? Кӳр теççĕ сумкине!

Храбров *(каялла чакса тăрать)*. Памастăп. Ан та ыйт. «Стол находокра» начальнике хам тыттаратăп. Акт çыртăр, квитанци патăр. Пире вăл квитанци хамăр честнă пурăннине кăтартма та кирлĕ.

Сарсухалов. Юлашки хут калатăп: пар сумкăна!

Яшков *(сержант умне паттăррăн пырса тăрса)*. Çук! Хăратса мар, тархасласа ыйтсан та памастпăр! Эс мар, эпир тупнă ăна. Çавăнпа та ан та çулăх пирĕн çумма. Эс луччă пире «стол находок» ăçтарах вырнаçнине кăтартса яр, усăллăрах пулĕ. Сумкине пирĕнтен пурĕпĕр илейместĕн... *(Честь панă пек тăвать.)* Çакăнпа хамăран дипломатилле калаçăва пĕтерĕпĕр. Атя, Храбров, мĕн лăпăртатса тăмалли пур унпа! *(Кайма тăрать.)*

Сарсухалов *(ун çулне пӳлсе)*. Ай-ай, ытла та çивĕчленсе кайнă-çке эсир... *(аллипе аяккалла сулать)* лере, кунтан ытла çывăхах мар вырăнсенче! Институт пĕтерсе тухнă пекех!

Храбров *(çилĕпе, васкаса)*. Институт мар, академирен те ытлараххине пĕтернĕ çав эпир, ăслăланнă, текех ухмах пулас çук. Тӳр кăмăлпа пурăнакан халăхран уйрăм та пулас çук. Эпир — совет çыннисем! Кив йăласене пăрахнă! Çаратмастпăр-вăрламастпăр, çын пурлăхне хапсăнмастпăр, честнăран та честнă пурăнатпăр. Ăнлантăн-и? Ăнлантăн пулсан — ан çыпăç пирĕн çумма, чарса ан тăр, эпир сумкăна «стол находока» пама каятпăр!

Сарсухалов *(иккĕленме пуçласа)*. Так, так...

Яшков *(кăкрине çапса)*. Едак! Вот так!

Соня *(киоскран)*. Тимоша! Мĕн чăрманса тăратăн эс вĕсемпе? Тыт та илсе кай! Шăпанасем вĕт вĕсем,

иртенпех явӑнса ҫӳреҫҫӗ кунта, ҫаратмалли шыраҫҫӗ! Эп хам та хӑраса ларатӑп вӗсенчен!

Храбров. Эс ан янраса тар унта, купӑста пуҫ! Пире тытса кайиччен сана хӑвна илсе кайӗҫ-ха акӑ!

Соня. Илтрӗн-и, Тимоша, епле нахальнӑ калаҫаҫҫӗ вӗсем? Тытса кай, тетӗп, часрах отделенине, унта вӗсене кӑшт урӑхларах калаҫтарӗҫ!..

Сарсухалов. Тӗрӗс, граждансем, сирӗн халех манпа пӗрле отделенине ҫитмелле пулать. *(Аллипе малалла сулать.)* Атьӑр, кайрӑмӑр.

Храбров. Ҫук, санпа пӗрле каймастпӑр. Ҫулне хамӑрах тупатпӑр. Ирӗклӗн.

Яшков. Эсӗ хӑвах шухӑшласа пӑх-ха, гражданин сержант, чип-чипер ҫынсене мӗншӗн конвойласа каймалла? Мӗнле правапа халӑх умӗнче намӑс кӑтартмалла пире?

Сарсухалов *(сассине хытарса)*. Юрӗ, юрӗ, ытлашши шӑл хӑйраса ан тӑрӑр. Кайрӑмӑр!

Храбров. Пымастпӑр!

Сарсухалов. Утӑр, теҫҫӗ сире!

Яшков. Утмастпӑр!

Сарсухалов. Ах, апла-ха эппин... Анчах та власть органӗсене пӑхӑнманшӑн, вӗсене хирӗҫ тӑнӑшӑн мӗн пулнине пӗлетӗр-и эсир?

Храбров. Пит лайӑх ӑнкаратпӑр! Ҫынсене ним айӑпсӑр тытса кайнӑшӑн мӗн пулнине те пӗлетпӗр!

Сарсухалов. Мӗншӗн итлеместӗр эппин, калӑр-ха?

Яшков. Мӗншӗн тесен эпир конвойпа ҫӳреме преступниксем мар! Каланӑ сана — хамӑр каятпӑр! Неушлӗ шанмастӑн, сержант?

Сарсухалов. Шанмастӑп! Эсир ҫак сумкӑна вӑрламан тенине те шанмастӑп!

Соня *(киоскран кӑшкӑрать)*. Тимоша! Пӑшал пур

вĕт санăн! Эс вĕсене пăшалпа хăрат, пăшалпа! *(Пистолетпа тĕлленĕ пек тăвать.)* Перетĕп, те! Унсăр итлемеççĕ вĕсем сана!

Сарсухалов. Эс ан хутшăн-ха, сансăрах пĕлеççĕ! *(Храбровпа Яшкова.)* Юлашки хут калатăп: утăр!

Яшков. Юрĕ. Анчах эс малтан кай, эпир сан хыççăн пыратпăр эппин.

Сарсухалов. Ай-ай, ăслă-çке эсĕ! Пĕр-пĕр тăкăрлăка çитсенех сапур урлă сикес шут пур ĕнтĕ сирĕн. Пулаймасть пуль ун пек! *(Хыттăн.)* А ну, утăр малтан! *(Аллипе сулать.)*

Яшковпа Храбров пĕр-пĕрин çине пăхса илеççĕ те вырăнтан хускалмаççĕ.

Храбров. Çуран каймастпăр. Тавай машин.

Яшков. Грузовой та мар, легковой пултăр. Штопă никам та ан куртăр пире. Чип-чипер пурăннă çĕртех намăс курма килĕшместпĕр. Ĕлĕк намăс курни те çитет...

Сарсухалов. Ах, эсир çаплах кутăнланатăрха эппин? Юрĕ! *(шăхличне хыпать те ик-виçĕ хут питĕ хытă шăхăртать.)*

Соня. Тимоша, пристань патĕнчи милици патне хамăн чупас мар-и? Кайăк пек вĕçсе кайса килетĕп!

Соня киоскран сиксе тухать, анчах сылтăм енчен милици майорĕ Кулаев васкаса утса килнине курать те чарăнса тăрать. Майора курсан, Сарсухалов «смирно» тăрать, честь парса илет. Яшковпа Храбров савăнсах каяççĕ, ăна хирĕç пĕр-ик утăм тăваççĕ.

Кулаев *(Сарсухалова).* Эс шăхăртрăн-и?

Сарсухалов. Так точно. Эпĕ.

Кулаев. Мĕн пулчĕ?

Сарсухалов. Ак çак икĕ гражданин отделенине пыма килĕшмеççĕ, манпа хирĕçсе тăраççĕ.

К у л а е в. Мĕн сăлтавпа илсе каясшăн эс вĕсене?

Х р а б р о в. Ним сăлтав та çук, пустуй çыпăçать!

К у л а е в *(Храброва).* Эс тăхта-ха, санран ыйтмасçĕ. *(Сарсухалова.)* Мĕн сăлтавпа, тетĕп. Мĕн тунă вĕсем?

Я ш к о в. Ним те туман! Так, ахалех сĕтĕрет!

К у л а е в *(Яшкова).* Эс те ан шарла халлĕхе. *(Сарсухалова.)* Ну, итлетĕп сана.

С а р с у х а л о в. Сăлтавĕ пысăк, майор юлташ. Вĕсем çумĕнче хĕрарăм сумки пур. Иккĕшĕ ăна уçса унти япаласене пăхнине, укçине шутланине хам курса тăтăм. Вăрттăн, тĕмĕ хыçне пытанса хăтланчĕç...

С о н я. Ăна эп те курса тăтăм. Ак, чӳречерен. Вĕсем сисиччен. Укçи нумай пулмалла. Такамăнне вăрланă.

К у л а е в. Так, так... Вара?

С а р с у х а л о в. Ну, вĕсем кунтан тухса шăвăнма тăрсан, эп вĕсене чартăм та докуменчĕсене тĕрĕслерĕм...

К у л а е в. Докуменчĕсем йĕркеллех-и?

С а р с у х а л о в. Пĕтĕмĕшпе илсен, йĕркеллех темелле. Вĕсем иккĕшĕ те нумай пулмасть колонирен таврăннă. Иккĕшĕ те ĕçе кĕнĕ...

К у л а е в. Так, так... Ĕçе кĕни аван-ха вăл. Унтан вара?

С а р с у х а л о в. Унтан эпĕ хĕрарăм сумкине ман алла пама ыйтрăм. Вĕсем ăна ним тусан та памаççĕ. Ку сумкăна эпир тупрăмăр, халь «стол находока» кайса паратпăр, теççĕ.

Х р а б р о в. Эпир паçăрах кайса панă пулăттăмăр, анчах çак каччă хăй чăрмантарса тăчĕ пире.

С а р с у х а л о в *(çилĕпе).* Чартăм çав! Мĕншĕн тесен шанмастăп сире, мĕншĕн тесен эсир мана суйса

хăварса куçран çухаласшăн. Пĕрре алăран вĕçертсен, шыра кайран сире!

Я ш к о в. Пире шырама — эпир рецидивистсем мар! Сумкине пытарас тенĕ пулсан, эпир ăна çакăнта, киоск умĕнче уçса ларман пулăттăмăр. Чухлас пулать çавна!

К у л а е в. Так, так... Ăçта-ха вăл сумки?

Х р а б р о в. Акă, тархасшăн... Сана пама пултаратпăр. *(Сумкăна хĕвĕнчен кăларса майора парать.)*

К у л а е в. Ăçта тупрăр ăна?

Х р а б р о в. Ав çавăнта, пĕр тенкел айĕнче. Унпа юнашар канфет хучĕсем нумайччĕ, майри малтан канфет çисе ларнă пулмалла. Унтан тăнă та — утнă, сумкине пăрахса хăварнă...

К у л а е в. Уçса пăхрăр-и?

Х р а б р о в. Пăхрăмăр çав.

К у л а е в. Мĕн-мĕн унта?

Я ш к о в *(хăвăрт калаcа каять).* Пуç тури, самса тутри, пĕчĕк тĕкĕр, пĕр ывçă соска, темле квитанцисем, фабрикăна кĕмелли пропуск тата çирĕм çичĕ тенкĕ те вăтăр пĕр пус укçа!

К у л а е в. Юрĕ... Тĕрĕслесе пăхар-ха эппин.

Майор сквер пусĕнчи сак çине ларать, ыттисем ăна йĕри-тавра кĕпĕрленсе тăраççĕ, майор сумкăри пурлăха тĕрĕсленине тимлĕн пăхаççĕ.

К у л а е в *(япаласене пĕрерĕн-пĕрерĕн кăларса).* Так... тĕрĕс-ха ку... тĕрĕс... Тутăр, тĕкĕр, соскăсем... Укçа... Ух, нумай!

С о н я *(малалла виркĕнсе).* Укçине хам шутласа парам-и?

К у л а е в. Ан чăрман, эп хам та çамрăк чухне счетовод пулнă. *(Укçине хăвăрт шутласа тухать.)* Тĕрĕс. Аптекăри пекех. Çирĕм çичĕ тенкĕ те вăтăр пĕр

пус... Ак ку мĕскер-ха тата? Аха, пропуск. *(Уçса пăхма тытăнать.)* Ай-ай, селĕм хĕрарăм. Çап-çамрăк. Хуп-хура, чикан урапи çинчен ӳксе юлнă пекех...

Соня *(аллине тăсса).* Кăтарт-ха, мĕнлескер? Тен, эп паллатăн пуль ăна?

Кулаев. Чим-ха, чим. Малтан хам лайăххрах пăхам. Кам пĕлет, тен, хам та палласа илĕп? *(Пуçне пăркаласа.)* Мат-тур хĕрарăм! Ытармалла мар.

Яшков. Эпир те çапла шутларăмăр. Ничево так-тă.

Кулаев. Анчах та кăшт сӳтĕкрех пулмалла ĕнтĕ, сумкисене çухатса çӳрет, ăçтиçук. Халĕ хăй макăра-ать пулĕ-ха, мăнтарăн! Упăшкине мĕн калать-ши? *(Куларах.)* Сарсухалов юлташ, эс те пăхса ил-ха. Тен, сана та кăмăла кайĕ вăл? Тен, ăçта та пулин курнă эс ăна, паллагăн? Акă, кур-ха... *(Пропуска сержанта парать.)*

Соня. Вамили мĕнле? Пропуск çинче вамили пулать-çке?

Кулаев. А мĕн вăл — вамили тени?

Соня. Вамили ара! Ну, хушамат эппин.

Кулаев. Хушаматне уйăрса илеймерĕм. Ак, Сарсухалов юлташ каласа парĕ... *(Пуçне пĕксе кулма тытăнать.)* Сержант, каласам, пропуск хуçин вамилийĕ мĕнле? *(Татах кулать.)*

Сарсухалов *(чылай хушă пропуск çине юпа пек хытса тăрса, тăнран тухса кайнă пек, куçĕсене час-часах мăч-мăч тутарса пăхса тăнă хыççăн).* Вамили... вамили... Ман хушамат кунта! Сарсухалова, тенĕ!

Соня *(тăрук хыпăнса ӳксе).* Мĕнле Сарсухалова?!

Сарсухалов. Зина, ара. Ман арăм. Акă, кур, шăлĕсене еплерех йĕрсе ларать вăл, мур çименскер!

Соня *(пропуска сержант аллинчен карт! туртса*

*илсе).* Пётрём! Чăнах та Зина-çке! *(Майора.)* Начальник юлташ! Сарсухалов арăмĕ ку...

Кулаев. Мана хама та çавăн пек туйăнчĕ çав. Паллатăп ăна, эп вĕсен туйĕнче те пулнă вĕт...

Соня *(Яшковпа Храброва).* Эсир, каттăршнăйсем, çак сержант арăмĕнне тупнă! Эй, тĕнче-е... *(Кулать.)*

Храбров. Шутсăр лайăх эппин! Анчах та хăй пире чут-чут тытса хупатчĕ. Пулаççĕ çав çĕр çинче пархатарсăр этемсем...

Яшков. Эппин, санран тухать, сержант юлташ. Эпир ĕçекен çынсемех мар, анчах иккĕн пĕр витре сăра пушатма пултаратпăр.

Храбров. Тĕрĕс, сержант. Санран тухать. Хытса ан тăр.

Соня. Мана — пĕр плитка шоколад...

Сарсухалов *(ун çине чалăшшăн пăхса илсе).* Сана мĕншĕн тата?

Соня. Свитетлĕ пулнăшăн ара! Ак кусене тытса чарма сана эп пулăшрăм пуль?

Кулаев. Пĕр сăмахпа каласан, сержант, эс паян тимлĕ-сисĕмлĕ пулни сана хăвнах усă кӳчĕ, çапла-и?

Сарсухалов *(çĕрелле пăхса).* Уссине кӳчĕ теха, анчах намăс та пулчĕ-çке! *(Шухăша кайнă пекрех.)* Эккей, эсрел хĕрарăмĕ! Çӳрет тăнсăр сурăх пек. Виççĕмĕш хут пулчĕ ĕнтĕ кун пекки. Ялан мĕн те пулин çухатать. Хăлхинчен туртатăп-ха паян куншăн...

Храбров. Пĕрре-иккĕ çурăм урлă чĕн пиçиххипе туртса илсен те юрамалла... Хам пулсан... эх! вăччăшт! тутармалла.

Соня. Ан янра! Юратакан çынна епле хĕнетĕн?!

Яшков. Ăс кĕртме!

Сарсухалов. Вăл ахаль те ухмах мар-ха.

Яшков. Халь кăна «тăнсăр сурăх» терĕн-çке?

Сарсухалов. Вăл временнăй япала. Урамра

ҫăвар карса унталла-кунталла пăхса ҫӳренӗ чух кăна пулать. Ытти чух чиперех. Ёҫленӗ хушăрах институтра вӗренет...

Я ш к о в. О-о! Министр пулать эппин вăл санăн! Хăрамалла!

С о н я. Кам пӗлет! Пулӗ те, ачам! Эп хам та ҫак шăнкăрч йăвинчен *(киоск ҫине кăтартать)* пăрахса тухса столовăй заведующийӗ пуласшăн-ха. Паҫăр ак Тимофей Васильччă та каларӗ, ҫыннăн малашнехи, лайăххраххи ҫинчен ӗмӗтленсе пурăнмалла, терӗ.

К у л а е в *(сак ҫинчен тăрать)*. Ну, вăл-ку юрӗ-ха. *(Сарсухалова.)* Епле-ха ӗнтӗ, сержант, ҫак юлташсем сан арăмун сумкине вăрламаннине, ăна чăнах та ăнсăртран тупнине ӗненетӗн-и халь?

Я ш к о в п а  Х р а б р о в *(харăс)*. Ӗненетӗн-и? Кала!

С а р с у х а л о в *(аллисене ик еннелле сарса)*. Мӗн тăвас тетӗн, ӗненесех пулать. Йăнăшрăм пăртак. Каҫарăр. Пăтăрмах пулчӗ.

С о н я. Э-э, чим-ха, эсӗ нихҫан та йăнăшмастăп, терӗн мар-и? Ҫапах та лекрӗн эппин?

С а р с у х а л о в. Пурнăҫра пулма пултарать ара... Эс хăв та авă, чăн малтанах хăвăн валли упăшка суйланă чух йăнăшрăн та кайран улттă качча кайрăн...

С о н я. Фу, лапра ҫăвар!

К у л а е в *(Сарсухалова хулпуҫҫирен лăпкаса)*. Ҫынсене ӗненес пулать ҫав, Сарсухалов юлташ, пирӗн ҫынсен ăсӗ-пуҫӗ халь кулленех лайăх еннелле улшăнса пырать...

Х р а б р о в. Вăл тӗрӗс! Ак, эпир те Яшкăпа иксӗмӗр...

Я ш к о в. Тӗвӗлесе лартрăмăр! Нихҫан та вăрламастпăр!

К у л а е в. Эпир пӗлетпӗр ун ҫинчен... Тӗрӗс тăва-

тăр. Итлĕр ақă, иртнĕ уйăхра епле тĕлĕнмелле япала пулчĕ... Пирĕн пата, çав «стол находка», пĕр ватă цыган лаша çавăтса пычĕ. Атăл леш енче тупрăм, эрне ытла пĕр-пĕччен çӳрет, тахăш колхоз çухатнăскер пулмалла, тет... Шалт тĕлĕнсе кайрăмăр! Ĕлĕк цыган аллине ют лаша лексен, ăна вăл çитмĕл çичĕ тĕслĕ сăрласа та пулин хăйĕн лаши пек тăвĕччĕ, халь ақă — милицие илсе пычĕ!

Соня. Ой, ку чăнах та тĕлĕнмелле-çке...

Храбров. М-да... Шухăшлаттарать ку...

Кулаев. Урамра кăларса ӳкернĕ е автобусра, магазинсенче манса хăварнă япаласене тупакансем вара пирĕн пата вĕçĕмсĕр пыраççĕ. Пурин те пĕр юрă: «Мейĕр, хуçине шыраса тупса тавăрса парăр, мана çын япали кирлĕ мар, кам ĕçлесе илнĕ — çавах усă куртăр»,— теççĕ. Коммунизм патнелле çывхаратпăр, Тимофей Васильевич!

Сарсухалов. Тĕрĕс, майор юлташ... *(честь парать.)* Ăнланатăп! Ăнланатăп çеç те мар, савăнатăп уншăн!

◆

## ТУПМАЛЛИ


Сиенлĕ чап . . . . . . . . 5
Виçĕ кирпĕч . . . . . . . . 27
Шанчăклă эмел . . . . . . . 57
Çĕрлехи йăнăш . . . . . . . 83
Ылтăн кин . . . . . . . . 111
Пăтăрмах . . . . . . . . 135

**Агаков Леонид Яковлевич**

**ВРЕДНАЯ СЛАВА**

Одноактные комедии

*На чувашском языке*

**Художник В. Е. Емельянов**

Редактор *Г. Ф. Трофимов*
Художественный редактор *М. А. Ильин*
Технический редактор *А. Ф. Никитина*
Корректор *В. М. Долгова*

НТ 18004. Сдано в набор 25/V-1968 г. Подписано к печати 6-I-1969 г. Формат 70×108/32. Типографская № 2. Физический печ. л. 5,25 Условный печ л. 7,65. Учетно-изд. л. 6,13. Заказ № 2818 Тираж 5000 экз. Цена 40 коп.

---

**Чувашкнигоиздат, Чебоксары, пр. Ленина, 4.**

**Типография № 1 Управления по печати при Совете Министров Чувашекой АССР Чебоксары, Володарского, 5.**

**7—5**

**96—68М**

Цена 40 коп.

210174